4904 51-103

# ТĂВАН СĂМАХ

ПУÇЛАМĂШ ШКУЛĂН
ПĔРРЕМĔШ КЛАСĔНЧЕ
ВУЛАМАЛЛИ КĔНЕКЕ



ЧĂВАШГОСИЗДАТ • 1951

А. С. ОТАЧКИН

# ТĂВАН СĂМАХ

ПУÇЛАМĂШ ШКУЛĂН
ПĔРРЕМĔШ КЛАСĔНЧЕ
ВУЛАМАЛЛИ КĔНЕКЕ

*Чăваш АССР*
*Çутĕç министерстви*
*çирĕплетнĕ*

*Тăваттăмĕш издани*

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1951

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палате
30 августа 1951 г.
№ 175



## Аслă Сталин.

Аслă Сталин çулпуçа ырласа
Тав тăватпăр, чĕререн юратса.
Çакă чаплă пурнăçа, ĕмĕре
Туса пачĕ тăрăшса вăл пире.

Пĕтĕм халăх, пĕтĕм çын халь ăна
Пирĕн тус, учитель тет кăмăлтан.
Аслă Сталин пирĕн тус, çут хĕвел,
Аслă Сталин пирĕн тус, çут телей.



# Шкул




## В. И. Ленин мӗнле вӗреннӗ.

(Ленинӑн ача чухнехи пурнӑҫӗ ҫинчен ҫырнӑ калавсенчен.)

Гимназин пӗрремӗш класне Володя тӑхӑр ҫул ҫурӑра вӗренме кӗнӗ.

Володя вӗренме юратнӑ, вӑл питӗ лайӑх вӗреннӗ. Пултарулӑхӗ унӑн пысӑк пулнӑ. Аслӑ пиччепе аппана вӗрентнӗ пекех, атте ӑна тимлӗн вӗренме хӑнӑхтарнӑ. Унӑн учителӗсем ҫапла каланине астӑватӑп.

— Урок вӑхӑтӗнче тимлӗн итлесе тӑнласа ларни Володьӑна питӗ пулӑшать,— тетчӗҫ вӗсем. Питех те пултаруллӑскер вӑл класра урока лайӑх ӑнланса юлатчӗ те, килте вара класра вӗреннине унӑн кӑштах аса илме кӑна тиветчӗ.

Гимназирен таврӑнсан, Володя уроксенче мӗн вӗренни ҫинчен, хӑйӗнчен ыйтнисем ҫинчен, мӗнле ответ панисем ҫинчен ашшӗне каласа паратчӗ.

Предметсем, паллах, улшӑнса пыратчӗҫ, анчах паллӑсем яланах пӗр пекчӗ: яланах пӗр паллӑ — пиллӗк пулатчӗ.

*А. Ульянова.*




## Шкула.

Хӗвел йӑл-йӑл кулчӗ,
пӑхрӗ кантӑкран.
Ванюка вӑл курчӗ,
саврӗ кӑмӑлтан.
Тӑхӑнчӗ, тумланчӗ
Ванюк васкаса,
шкулалла чуптарчӗ
савӑнса, кулса.

---

Сӑвва пӑхмасӑр калама вӗренӗр.

## Шкула каймалли тата шкултан таврăнмалли çул.

Манăн шкула каймалли çул:
кил, урам, уй хапхи, хир, арман пĕви, шыв арманĕ, ял, шкул.

Манăн шкултан таврăнмалли çул:
шкул, ял, шыв арманĕ, арман пĕви, хир, уй хапхи, урам, кил.

---

Эсир те хăвăрăн шкула каймалли тата шкултан таврăнмалли çул çинчен *каласа парăр:* хăвăр çул çинче тĕл пулакан вырăнсемпе япаласене анчах асăнăр.

## Пирĕн класс.

Ванюк шкултан таврăнчĕ те каласа парать:

Пирĕн класс пысăк та çутă.

Стенасем çинче илемлĕ рамкăсене вырнаçтарнă портретсем çакăнса тăраççĕ. Вĕсем пирĕн çулпуçĕсен—Ленинпа Сталинăн портречĕсем.

Класра виçĕ рет партăсем лартса тухнă. Вĕсем вĕр-çĕнĕ, куçкĕски пек йăлтăртатаççĕ.

Партăсем умĕнче сĕтел ларать.

Сĕтел умĕнче учительница валли пукан ларать.

Чӳречесем çинче чечексем питĕ нумай, ещĕкре чăрăш ӳсет.

Чӳречесем класра пысӑк, вӗсенчен часчасах хӗвел йӑлтӑртатса пӑхать.

Эпӗ хамӑр класа тата хамӑр шкула юрататӑп.

---

Ванюка хӑйӗн шкулӗнче мӗн-мӗн кӑмӑла килет?

Хӑвӑр класс ҫинчен каласа парӑр.

## Шкул ачине кирлӗ япаласем.

Сашук ашшӗ виҫӗ тетрадь, кӗнеке, икӗ кӑранташ, ручка, сумка тата пенал илнӗ. Ҫаксене пурне те вӑл Сашука панӑ та ҫапла каланӑ: „Ывӑлӑм! ҫак япаласемпе эсӗ шкула ҫӳрӗн",—тенӗ.

---

Сашукӑн шкула кайма мӗнле япаласем пур?

Санӑн шкулта вӗренме кирлӗ мӗнле япаласем пур?

Тата мӗнле япаласем кирлӗ пек сана?

Вӗренме кирлӗ япаласене хут ҫине ӳкерӗр те кашни ӳкерчӗк айне япалан ятне ҫырса хурӑр.

## Кашни япала хӑй вырӑнӗнче пулмалла.

Ваҫҫа ирхине, ыйхӑран вӑрансан, яланах хӑйӗн япалисене шыраса хӑшкӑлать. Пӗр чӑлхи унӑн тенкел ҫинче, тепри сӗтел айӗнче. Хӑрах кӑҫатти кровать айӗнче, хӑраххи кӑмака ҫинче. Кашни ир ҫапла хӑй япалисене шыра-шырах вӑхӑта ирттерет Ваҫҫа. Вара тепӗр чухне урока та ӗлкӗреймест.

*К. Ушинский.*

## Класра мĕнле лармалла.

(Калаçу.)



Тухтăр класа çакăн пек картина çакрĕ те каларĕ:

— Картина çине пăхăр: класра çырнă чухне çапла ларас пулать.

Вара çурăм курпунланмасть.

Хулпуççисем тӳрĕ тăракан пулаççĕ.

Сывласса та лайăх, тулли кăкăрпа сывлама май пур.

## Шутламалли вăйă.

Пĕрре — пĕрел,
иккĕ — икел,
виççĕ — виçел,
тăваттă — тăваткал,
пиллĕк — пилеш,
улттă — улма,
çиччĕ — çилме,
саккăр — салма,
тăххăр — тăрна,
вуннă — ятне туннă!
— Çĕнĕрен!
Шутламалла вуннăн!

## Чăн-чăн юлташ.

Петĕрĕн икĕ юлташ пур — Ваççа тата Сергей. Пурте вĕсем пĕрремĕш класра вĕренеççĕ.

Учительница вӗсене килте пӗр калав вуласа тухма тата пӗр задача шутласа килме хушнӑ.

Петӗр калавне вуласа тухнӑ, анчах задачине туман.

Тепӗр ирхине вӑл шкула пынӑ та юлташӗсенчен пулӑшу ыйтнӑ.

Ваҫҫа ӑна хӑй тетрадьне парать те калать:

— Ме, ҫырса ил эсӗ ответне, манӑн тӗрӗс,—тет.

Сергей калать:

— Ан ҫырса ил, Петӗр. Эпӗ сана ӑнлантарса парӑп, вара эсӗ задачӑна хӑвах тӑвӑн,—тет.

---

Эсир кама чӑн-чӑн юлташ тесе шутлатӑр — Ваҫҫана е Сергее?

Мӗн пирки?

## Хӗлип.

(Чӑн пулни.)

### I.

Пӗр ача пурӑннӑ. Вӑл Хӗлип ятлӑ пулнӑ. Пӗрре ачасем пурте шкула кайнӑ. Хӗлип ҫӗлӗкне илнӗ те шкула кайма тӑнӑ. Анчах амӑшӗ унтан ыйтать: „Хӗлип, ӑҫта кайма пуҫтарӑннӑ ҫак эсӗ?“—тет.—„Шкула“,—тет ачи.—„Эсӗ халь пӗчӗккӗ-ха, ан



кай!“ — тенӗ те амӑшӗ ӑна шкула яман. Ачасем шкула кайнӑ. Ашшӗ унӑн ун чухне вӑрманта пулнӑ, амӑшӗ ӗҫлеме кайнӑ. Пӳртре пӗр Хӗлип тата кӑмака ҫинче выртакан асламӑшӗ ҫеҫ тӑрса юлнӑ. Хӗлипе пӗччен килте ларма кичем. Асламӑшӗ ҫывӑрса кайнӑ. Хӗлип ҫӗлӗкне шырама пуҫларӗ. Хӑйӗнне тупаймарӗ, ашшӗн кив ҫӗлӗкне тӑхӑнчӗ те шкула тухса утрӗ.

Шкулӗ ял хыҫӗнче пулнӑ. Хӗлип хӑйсен урамӗ тӑрӑх пынӑ чухне ӑна йытӑсем тивмен — вӗсем ӑна паллanӑ. Анчах, урӑх урама ҫитсен, Жучка сиксе тухрӗ, вӗрсе

ячĕ. Жучка хыççăн Улай ятлă пысăк йытă siксе тухрĕ. Хĕлип тарма тытăнчĕ, йыттисем—ун хыççăн. Хĕлип кăшкăрма пуçларĕ, такăнса ÿкрĕ. Пĕр çын тухрĕ, йытăсене хăваласа ячĕ те ыйтать: „Ăçта эсĕ, шĕврешке, пĕчченех чупатăн?"—тет. Хĕлип нимĕн те чĕнмерĕ, малалла питĕ хытă чупса кайрĕ.

## II.

Вăл шкул патне чупса çитрĕ. Алкум вĕçĕнче никам та çук, шкулта ачасем кĕрлени илтĕнет. Хĕлип шикленсе илчĕ: „Е учитель мана хăваласа ярсан?"—Вăл нимĕн тăва пĕлмест, шухăша кайрĕ. Каялла каяс—каллех йытă тулласа тăкать, шкула кĕрес—учительтен хăрать. Шкул çуммипе хĕрарăм витрепе пырать. Вăл ачана: „Пурте вĕренеççĕ, эсĕ кунта мĕн туса тăратăн?"—терĕ. Хĕлип шкула кĕрсе кайрĕ. Çенĕкре вăл çĕлĕкне хыврĕ те алăка уçрĕ. Класра ачасем туп-тулли. Варринче учитель çÿрет.

— Эсĕ мĕн кĕмесĕр тăратăн?—терĕ вăл, Хĕлип еннелле çавăрнса. Хĕлип çĕлĕкне тытнă та нимĕн те шарламасть.—„Кам вара эсĕ?"—Хĕлип чĕнмест.—„Чĕлхесĕр-им эсĕ?"—Хĕлип çав тери хăраса кайнă, калаçма та пултараймасть.



— Калаҫассу килмест пулсан, киле кай эппин.

Хӗлипӗ тем пекех калаҫӗччӗ, анчах унӑн хӑранипе пырӗ типсех ларнӑ. Вӑл учитель ҫине пӑхрӗ те йӗрсе ячӗ. Вара учитель ӑна шеллерӗ. Вӑл ӑна пуҫӗнчен ачашласа илчӗ, ачасенчен ку кам ачи иккенне ыйтса пӗлчӗ.

— Вӑл Хӗлип, Кӗҫтенкки шӑллӗ; вӑл тахҫанах шкула килесшӗн, анчах амӑшӗ ямасть ӑна, вӑл халь шкула вӑрттӑн килнӗ,—терӗҫ ачасем.

— Ну, кӗрсе лар пиччӳпе юнашар, сана шкула яма аннӳпе калаҫса пӑхӑп,—терӗ учитель.

Учитель Хӗлипе саспаллисем кӑтартать. Хӗлипӗ вӗсене тахҫанах паллать-ха, вулама та кӑшт пӗлет.

— Ну-ка, саспаллисем хурса, хӑвӑн ятна ту-ха.

— Хӗ-хӗ-ле-и-лип.

Пурте кулса ячӗҫ.—„Маттур,—терӗ учитель.—Кам сана вулама вӗрентнӗ-ха?“

Хӗлип хӑюлланса кайрӗ те калать: „Кӗҫтенкки! Эпӗ маттур, эпӗ тӳрех пурне те ӑнлантӑм, эпӗ пултаратӑп!“—тет.

Учитель ӑна пӳлчӗ те:—„Эсӗ мухтанма тӑхта-ха, малтан вӗрен“,—терӗ.

Ҫавӑнтан вара Хӗлип ачасемпе пӗрле шкула ҫӳреме тытӑнчӗ.

*Л. Толстой.*

---

Хӗлип мӗншӗн шкула каясшӑн пулнӑ?
Хӗлип вӗренесшӗн пулни мӗнтен курӑнать?
Хӗлип учителе хӑй ҫинчен мӗн-мӗн каласа панӑ?

---

Хӑвӑр чи малтан шкула пыни ҫинчен каласа парӑр?



# Çемье



## Пирĕн çемье.

Пирĕн çемьере пилĕк çын: атте, анне, пичче, эпĕ тата манăн йăмăк. Атте колхозра бригадирта ĕçлет. Анне ĕне ферминче ĕçлет. Пичче тăваттăмĕш класра вĕренет. Эпĕ пĕрремĕш класра вĕренетĕп. Йăмăк шкула çӳремест, вăл пиллĕкре çеç-ха.

Аттепе пичче мана час-часах урока хатĕрленме пулăшаççĕ. Эпĕ те вĕсене пулăшатăп: путексене пăхатăп тата ытти çăмăл ĕçсене тăватăп.

---

Хăвăр çемье çинчен каласа парăр.

## Пуринчен те лайăх.

Урамра, халăх хушшинче çӳресе, пĕчĕк çеç хĕрача аташса кайнă. Унталла та кунталла чупкалать, йĕрет, кăшкăрать, амăшне шырать. Çынсем унтан ыйтаççĕ: —„Мĕнлескер вара санăн аннӳ?“—теççĕ. „Пĕлместĕр-им эсир? Манăн анне пуринчен те лайăххи“,—тет хĕрача ĕсĕклесе.

*Л. Толстой.*



**Амăшĕпе ачисем.**

Кам сире юратать,
кам сире ачашлать,
куç хупмасăр ларать
  каçхине,
хĕлĕн-çăвĕн ĕçлет,
ĕçтерет-çитерет?
— Вăл пирĕн юратнă анне!
Кам сăпка сиктерсе
юрăпа йăпататать
е юмах юптарать
  хăш чухне?
Кам сире юратса
теттесем те парать?
— Вăл пирĕн юратнă анне!

Ӳркенсен, алхассан,
хушнине тумасан,
сирĕншĕн кам йĕрет
ун чухне?
Кам сире ӳкĕтлет,
кам сире вĕрентет?
— Ҫавах, пирĕн юратнă
аннех!

---

Ҫак сăвăра кам ҫинчен ҫырнă?
Амăшĕ ачисене мĕнле пăхса ӳстерет?

*Каласа парăр*: Эсир килтисене мĕнле пулăшатăр? Пӳрт-ҫурта пуҫтарма, савăт-сапа ҫума мĕнле пулăшатăр? Анкартинче, пахчара, хирте мĕн тăватăр?

## Манăн анне.

(Вĕренекен хĕрача каласа пани.)

Манăн анне колхозферминче ĕҫлет, ĕнесем пăхать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ҫулсерен irттерсе тултарнăшăн ăна кашни ҫулах ĕҫкунĕсем хушса параҫҫĕ.

Кăҫал аннене хисеп грамоти пачĕҫ. Грамота панă кунне пирĕн пата хăнасем пуҫтарăнчĕҫ, пурте аннене саламларĕҫ.

Аннепе чухне яланах лайăх, хаваслă. Пирĕн килте вăл хĕвел пекех.

Анне пире ĕҫчен пулма вĕрентет. Эпĕ шкултан начар паллă илсе таврăнсан е хам япаласене пӳртре сапаласа пăрахсан,

вăл ман çине тинкерсе пăхать те, мана намăс пулать.

Анне мана çапла калать:

— Лайăх, тӳрĕ кăмăллă пулса çитĕн, кашни ĕçех мĕнле те пулин лайăхрах тума тăрăш,—тет.

Эпĕ вара чăнах та тăрăшатăп.

---

Çак хĕрачан амăшĕ ăçта ĕçлет?
Вăл мĕнле ĕçлет?
Хăвăр аннĕр çинчен каласа парăр.

## Пирĕн аппа.

(Социализмлă Ĕç Геройĕ А. П. Петрова шăллĕ шкул ачи Николай Лаврентьев каласа пани.)

I.

Пирĕн аппа — Александра Петровна Петрова. Вăл тырă тухăçлăхне хăпартассишĕн пĕтĕм чун-хавалĕпе тăрăшса ĕçлет. Ахаль мар ĕнтĕ ăна Социализмлă Ĕç Геройĕ ятне панă.

Унăн хастарлăхĕ ĕçре кăна мар, пурнăçра та паллă. Вăл тем пекех таса та тӳрĕ кăмăллă çын. Вăл пире, виçĕ тăлăха, пăхса ӳстерет. Ку та питĕ пысăк, мухтава тивĕç паха ĕç.

II.

Манăн атте вăрçă пуçланнă çулах фронта кайрĕ. Киле эпир—анне, эпĕ, çиччĕри йăмăк Лида тата тин çеç çуралнă Валя—


ЧУВАШСКАЯ КНИЖНАЯ ПАЛАТА г. Чебоксары Чувашской АССР

тăваттăн тăрса юлтăмăр. Çулталăкран хурлăхлă хыпар килчĕ: атте Сталинград çывăхĕнчи çапăçура вилнĕ. Атте вилнине илтнĕ хыççăн анне йывăр чире кайрĕ те тăраймарĕ вара. Эпир, ним тума пĕлмен виçĕ ача, тăлăха тăрса юлтăмăр. Вара пире Санюк аппа (вăл пирĕн аннен йăмăкĕ) тăван анне пекех пăхма тытăнчĕ.

## III.

Колхозра Санюк аппа иккĕмĕш бригадăра ĕçлет. Пĕлтĕр эпĕ те аппасен бригадинче ĕçлерĕм. Унăн хастарлăхĕ çамрăксене çĕклентерет, ваттисене çамрăклатать. Пĕлтĕр пирĕн Санюк аппасен бригади гектартан икçĕр вунпилĕкшер пăт ыраш туса илчĕ.

## Манăн ывăлăм.

(Олег Кошевой амăшĕ каласа пани.)

Манăн ывăлăмăн Олегăн Гриша ятлă юлташĕ пурччĕ. Олегпа Гриша кунĕ-кунĕпе пахчара вылятчĕç. Гришăн амăшĕ час-часах чирлетчĕ, ашшĕ унăн çукчĕ. Гришăн пурнăçĕ йывăрччĕ.

Майăн пĕрремĕш кунĕ тĕлне эпĕ Олега икĕ çĕнĕ кĕпе туса патăм: ахаль кĕпе тата матроска. Матроска уйрăммăнах Олег кăмăлне килчĕ. Пĕр ирхине вăл ман пата

пычĕ те, кĕпе çаннинчен кăшт туртса, мана çапла каларĕ:

— Аннем, манăн халĕ икĕ кĕпе, Гришăн пĕр кĕпе те çук. Матроскине Гришăна парăпăр,—терĕ.

Эпĕ матроскăна хутпа чĕркерĕм те, Олег тулли кăмăлпа, хавассăн ăна юлташне пама илсе кайрĕ.

---

Олегăн юлташĕ кам пулнă?

Олегпа Гриша пĕр-пĕринпе мĕнле пурăннă?

Олега мĕн пирки лайăх юлташ теме пулать?

Калавра Олег лайăх юлташ пулнине кăтартакан йĕркесене тупăр.

## Сентти.

Чипер ача Сентти пур,
чупса çӳрет урамра.
Кĕвентине утланса,
ача вылять лашалла.

Чипер ача Сентти пур,
чупса килет лашипе.
Хăйĕн пĕчĕк чĕлхипе
пакăлтатать инкĕшпе.

Кĕвентине утланса,
инкĕш патне çĕмĕрсе
кĕрсе кайрĕ ахăрса.
Çапать паттăр лашине
хăй аллинчи хуллипе.

*К. Иванов.*

## Сăпка юрри.

Пĕчĕк ывăлăмçăм, çывăр,
туглă тĕлĕк кур.
Ӳсĕн эс паттăр та сывă,
çитĕнĕн маттур.

Ĕмĕтсем таçтах вĕçеççĕ,
питĕ инçене.
Пулăн эс, ачам, вĕçевçĕ,
пулăн инженер.

Çитĕн эс сив тинĕс урлă
Çурçĕрĕн вĕçне.
Сан çинчен пин юрă юрлĕç,
ырлĕç сан ĕçе.

*П. Хусанкай.*



Картинкăна пăхса тухăр та унта мĕн ӳкерсе кăтартнине каласа парăр.

## Манăн йăмăкăм.

Манăн пĕчĕк çеç йăмăк пур. Вăл шкула çÿремест-ха, кĕнеке вулама та пĕлмест. Эпĕ ăна питĕ юрататăп. Шкултан таврăнсан, картинăсем ÿкерсе паратăп. Эпир иккĕн час-часах пытанмалла вылятпăр. Вăл пытаннă чухне эпĕ яланах, ăна курман пек пулса, нумай шыраса çÿренçи пулатăп. Вăл вара савăнать, пытаннă çĕртен тухса, ахăлтатса кулать.

Анне килте çук чухне эпĕ йăмăка пăхатăп: ăна апат çитеретĕп, чей ĕçтеретĕп. Ыйхи килсен, çывăрма вырттаратăп.

---

Ача хăй йăмăкне юратни çинчен, амăшĕ килте çук чухне ăна пăхни çинчен каласа парăр.





*Картинкăсем тăрăх каласа парăр:*

Çакăнта ÿкерсе кăтартни ăçта пулса иртнĕ?
Ача мĕн тунă пулнă?
Ăна амăшĕ пÿртре пÿскепе выляма ирĕк панă-ши?

Пӳске ăçта ӳкнĕ?
Вăл мĕнле сиен тунă?
Амăшĕ, киле таврăнсан, ачана мĕн калĕ?

## Ваттисен сăмахĕ.

Вăйăран вăкăр тухать, тет.

## Митюка ашшĕ мĕн каланă-ши?

Митюк килхушшине чупса тухнă та, йăмăкĕн аллинчи пуканине тытса илсе, килхушши тăрăх патак çине утланса чупса çӳреме тытăннă. Йăмăкĕ куншăн кӳреннĕ те йĕрсе янă.

Пӳртрен Митюкăн пиччĕшĕ Сергей чупса тухнă. Сергейĕн те пуканине патак çине утлантарса чупса çӳресси килнĕ. Вăл Митюкран пуканине те, патакне те тытса илнĕ.

Митюк çиленнипе ашшĕне каласа пама чупса кайнă. Ашшĕ чӳрече умĕнче ларса килхушшинче мĕн-мĕн пулса иртнине пурне те курнă пулнă.

Митюка ашшĕ мĕн каланă-ши?

## Вунă пулăшакан.

Пĕррехинче эпĕ пĕр хĕрарăм пӳртне кĕтĕм. Пăхатăп, унăн пӳртĕнче таса, илемлĕ. Ачисем тап-таса, тирпейлĕ тумланнă, апат

пиҫнӗ, урайне ҫунӑ, ниҫта та пӗр ҫӳпӗ те ҫук, – пӗтӗмпе йӑлтӑртатса тӑрать.

— Мӗнле эсир пур ӗҫсене те тума ӗлкӗретӗр? — ыйтатӑп эпӗ кил хуҫинчен.

Вӑл мана калать:

— Мӗнле ӗлкӗрес мар-ха! Манӑн вунӑ пулӑшакан вӗт. Вӗсем кунӗпех ӗҫлеҫҫӗ, пӗрне-пӗри пулӑшаҫҫӗ, — тет.

— Мӗнле пулӑшакансем вара вӗсем?

— Акӑ вӗсем! — кулса ячӗ кил хуҫи, вара мана хӑйӗн вунӑ пӳрнине кӑтартрӗ.

*М. Коцюбинский.*

## Паллӑ ҫын.

Вӗренӳ ҫулӗ пӗтрӗ. Вӗренекенсем учительницӑпа тата шкул директорӗпе пӗрле районти культура ҫуртне вечера кайрӗҫ. Колхоз вӗсене район центрне грузовикпа ӑсатса ячӗ.

Грузовик хӑвӑрт вӗҫтерсе пырать. Аслӑ ҫулӑн икӗ айккипе ӳсекен йывӑҫсем вӗлтлетсе юлаҫҫӗ. Акӑ грузовик икӗ хутлӑ пысӑк ҫурт тӗлӗнче чарӑнать. Ачасем автомашина ҫинчен сиксе анчӗҫ те ҫуртӑн иккӗмӗш хутне хӑпарчӗҫ. Унта ытти шкулсенчен те вӗренекенсем пуҫтарӑннӑ. Аслӑ, ҫутӑ пӳлӗмре темӗн чухлӗ портретсем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ.

Сасартӑк Ваҫҫа: „Атте! Атте!“ — тесе кӑшкӑрса ячӗ.

Пурте Ваçça çинелле пăхрĕç. Ваçça пĕр портрет тĕлне пырса чарăннă та ун çине куçне сиктермесĕр пăхса тăрать. Портрет çинчен тĕрленĕ шурă кĕпе, пиншак тăхăннă пĕр вăтăр пилĕк çулхи çын кăмăллăн пăхса ларать. Çыннин çÿçĕ сарă, уссисем вăрăм, куçхаршисем çăра.

— Манăн атте! — тет Ваçça тулли кăмăлпа.

Ачасем портрет çине кăмăллăн пăхса тăраççĕ.

Пурте Ваçça портрет çинчи çынпа пĕр сăнарлине асăрхарĕç. Ваççан çамки те, куçхаршисем те портрет çинчи çыннăнни пекех. — Санăн аçу министр-и е депутат-и? — тесе ыйтрĕ пĕр ачи шăппăн.

— Колхоз бригадирĕ вăл, — терĕ Ваçça.

— Ленин ячĕпе тăракан колхозăн бригадирĕ Андрей Васильевич Васильев, паллă çын! — терĕ шкул директорĕ.

Çав кун ачасем культура çуртĕнчи портретсем хушшинче хăйсем паллакан çынсене тата тупрĕç.

Никамран ытла вăл кун Ваçça савăнчĕ.

---

Районти культура çуртĕнче мĕншĕн Ваçça ашшĕн портречĕ çакăнса тăнă?



# Хĕлле



## Хĕл ларни.

Тĕксĕм пĕлĕт, шăппăн шуса,
килчĕ хĕвеланăçĕнчен,
уя-хире хупăрласа,
илчĕ карса тӳперен.
Çитрĕ, çитрĕ вашлаттарса,—
сапса ячĕ типĕ юр;
аслăк айне кĕчĕç тарса
чăххи-чĕппи, самăр хур.



Ыйхӑпала тӗлӗрекен
ӗнтӗркенӗ ҫара хир
ҫур ҫуллӑха, ҫуркуннеччен,
витӗнчӗ шур катанпир.

*С. Элкер.*

---

Сӑвӑра хӗл ларнин мӗнле паллисем ҫинчен каланӑ? Картинка ҫине пӑхса тата хӑвӑр сӑнани тӑрӑх хӗл ларнин паллисем ҫинчен каласа парӑр.

Сӑвӑри сӑмахсемпе усӑ курса, ҫак предложенисене каласа пӗтерӗр:

Тӗксӗм пӗлӗт... Сапса ячӗ... Ҫара хир...

## Тупмалли юмах.

Шурӑ ҫитти пӗтӗм хире витсе хучӗ.



*Каласа парӑр*: Ҫакӑнта кӑтартнӑ ӗҫсемпе вӑйӑсем ӑҫта пулса иртеҫҫӗ? Хӑҫан пулса иртеҫҫӗ? Ҫитӗннӗ ҫынсем мӗн тӑваҫҫӗ? Ачасем мӗн тӑваҫҫӗ?

## Хӗллехи ир.

Ирхи сивӗ пит-куҫа
чӗпӗтет те чӗпӗтет.
Уяр, сивӗ сывлӑшра
ҫуна сасси илтӗнет.

Шӑннӑ, пӑрлӑ йывӑҫсем
шавламасӑр лараҫҫӗ.
Пас айӗнчи туратсем
темле мӑннӑн курӑнаҫҫӗ.

Ял ҫумӗнчи вӑрманта
кайӑк сасси илтӗнмест.
Сумка ҫакнӑ шкул ачи
шкула чупать, ӳркенмест.

---

Сӑвӑра ҫанталӑк ҫинчен, йывӑҫсем ҫинчен, вӑрман ҫинчен мӗн каланӑ?

Сӑвӑри сӑмахсемпе усӑ курса, ҫак предложенисене каласа пӗтерӗр:

Ирхи сивӗ... Пӑрлӑ йывӑҫсем...
Ҫуна сасси... Кайӑк сасси...
Шкул ачи...

**Январь—ҫулталӑк пуҫламӑшӗ, хӗлӗн варри.**

I. Ҫулталӑкри уйӑхсен ячӗсене йӗркипе, ҫулталӑк пуҫламӑшӗнчен пуҫласа вӗсне ҫитиччен, ҫырса тухӑр.

Ҫырнӑ чухне усӑ курма: апрель, март, январь, февраль, июнь, август, май, июль, декабрь, октябрь, сентябрь, ноябрь.

II. Уйӑхсен ячӗсене ҫулталӑк хушшисем тӑрӑх ҫырса хурӑр: хӗл... ҫуркунне... ҫулла .. кӗркунне...

## Тупмалли юмахсем.

Çеçенхир варринче юман,
ват юманăн вуникĕ турат,
вуникĕ туратра тăватшар йăва,
тăватшар йăвара çичшер çăмарта.

Вуникĕ ăмăрткайăкпа виççĕр утмăл пилĕк шăнкăрчă пĕр çăмарта тунă.

(*Çултталăк*).

## Хĕл.

(Юмах.)

Хĕл мĕнпур чĕрчуна пĕтерме шут тытрĕ. Малтанах вăл вĕçен кайăксене тапăнчĕ. Анчах вĕçен кайăксем ăшă çĕре вĕçсе кайрĕç те хĕлтен хăтăлчĕç.

Вара хĕл тискер кайăксемпе выльăхсене тапăнчĕ. Çĕре юрпа витсе хучĕ, сивĕсем яра пуçларĕ. Анчах тискер кайăксем те хĕлтен хăрамарĕç. Пĕрисен тирĕ ăшă. Теприсем тарăн йăвана кĕрсе выртрĕç.

Хаярланса кайрĕ хĕл. Пулăсене пĕтерме шутларĕ. Шыва шăнтма тытăнчĕ. Анчах шывĕ çиелтен çеç шăнать. Пулăсем шыв тĕпне анса выртрĕç. Пăр айĕнче вĕсене сивĕ мар.

Хайхи хĕл çынна тапăнчĕ. Пÿртсене шаккать, мăръесенче улать. Çынсем кăмака хутса ячĕç. Ăшă пÿртре лараççĕ.

Пĕчĕк ачасем те хĕлтен хăрамарĕç. Çунашкапа, конькипе ярăнаççĕ. Юрпа выляççĕ, тăвайкки купалаççĕ, шыв сапаççĕ. Хĕле хăйсене пулăшма чĕнеççĕ.—Тăвайккине шăнтса пар, Сивĕ мучи,—теççĕ.

---

Вĕçен кайăксем хĕлтен мĕнле хăтăлаççĕ?
Тискер кайăксем хĕлле мĕн пирки шăнмаççĕ?
Пулăсем хĕлле ăçта пурăнаççĕ?

## Тупмалли юмах.

Вĕçет—чĕнмест, выртать—чĕнмест, вилсен шавлать, чарăна пĕлмест.

## Хĕлле вăрманта.

### I.

Çара вăрман сиввĕн кашласа ларать. Кĕркунне шурă мулкача вăрманта питĕ кансĕр. Йывăçсен хушшипе унăн хĕллехи шурă кĕрĕкĕ таçтанах курăнать.

— Акă вăл! Акă вăл!—кăшкăрать йыттисене сунарçă.

— Ав-ав-ав!—вĕреççĕ мулкача хăвалакан çивчĕ ураллă йытăсем.

— Ав-ав-ав!—янраса каять сасă пĕтĕм вăрман тăрăх.

Йывăçсене акă кăпка юр витсе хучĕ, вăрман уçланкисем шап-шурă çиттипе витĕнчĕç.

Шурă мулкачсем савăнса кайрĕç. Халĕ ĕнтĕ вĕсен шурă кĕрĕкне никам та кураймĕ.



II.

Малтанхи юр ӳксенех, сунарçă кайăксен йĕрĕсене йĕрлеме тухрĕ.

Вăрманта йĕрсем тем чухлех. Акă пĕр йывăçран тепĕр йывăç патне çăмăл пакша чупса иртнĕ, акă çĕрле мулкачă сиксе кайнă. Авă уçланкă тăрăх чее тилĕ тус йĕр туса тухнă. Сунарçă унта-кунта пăхкалать, е чăрăш тăрринчи пакшана персе ӳкерет, е пăчăра хăратса ярать.

Пĕр тăвăлпа тăпăлса ӳкнĕ йывăç тымарĕсем айĕнче вăл упа шăтăкне тупрĕ.

III.

Пуринчен ытла вăрманта ыйха юратакан упана ырлăх. Тирпейлĕ упа кĕркуннех шăтăк туса хатĕрленĕ. Çемçе чăрăш



лăссисене хуçса тултарнă, лайăх шăршлă чăрăш хуппине сўсе хатĕрленĕ.

Упан хĕллехи хваттерĕнче ăшă та савăк. Упа енчен енне çаврăнкаласа çеç выртать. Вăл хăй йăви патне чее сунарçă пынине те туймасть.

*И. Соколов-Микитов.*

---

Сунарçă вăрманта мĕнле тискер кайăксен йĕрĕсене сăнанă? Юр çинче тискер кайăксемпе вĕçен кайăксен йĕрĕсене тупăр.



Кашкăр йĕрĕ.

Тилĕ йĕрĕ.

Мулкач йĕрĕ.

Ула курак йĕрĕ.

Çак ўкерчĕке пăхса тухăр та кайăксен йĕрĕсене астуса юлăр.

## Шывран кĕленче туни.

Ачасем шкул картишĕнче юртан пӳрт тума тытăннă. Стенисене тунă, тăррине витнĕ. Кантăкĕсем çеç çук.

— Кантăкĕсене мĕнрен тăвас?—теççĕ.

Кантăкĕсене шыва шăнтса тума шутларĕç.

Мĕтри калать:

— Кантăкне тĕрлĕ тĕслĕ тума пулать. Айтăр шыв çине сăрă ярса шăнтар,—тет.

Ачасем икĕ листа тимĕр татăкĕ илчĕç, хĕррисене тавăрчĕç. Тимĕр листасем çине шыв ячĕç. Пĕр листи çине хĕрлĕ сăрă, теприн çине синька ярса хутăштарчĕç. Листисене сивĕ çĕре лартрĕç. Шыв шăнса ларчĕ.

Тепĕр кунне шăннă пăра хăйпăтса илме тăчĕç, анчах пăрĕ уйрăлмасть. Тимĕр листисене пӳрте илсе кĕчĕç. Пăр кăшт ăшăнсан, ачасем листисене ӳпĕнтерчĕç те, пăрĕ кăлт! анчах тухса ӳкрĕ.

Кантăк пулса та тăчĕ.

Ачасем юртан тунă пӳрте тĕслĕ кантăксем лартма чупрĕç.

---

Ачасем юртан тунă пӳрт валли кантăксене мĕнле хатĕрленĕ?

Пăра мĕнле майпа тĕрлĕ тĕслĕ тума пулать?

## Тупмалли юмах.

Вутра та çунмасть, шывра та путмасть.



## Йӗлтӗрпе.

Кӑвак пӗлӗт янкӑр тӑрӑ;
шуса тухрӑм эп уя.
Вӗҫрӗ йӗлтӗр хир-вар тӑрӑх,
вылянать алри туя.

Питӗ хӑвӑрт уй-хир ҫийӗн
ыткӑнатӑп малалла.
Чӗлтӗр-чӗлтӗр юр пӗрчийӗ
ӑмӑртасшӑн манпала.

Кӑпӑш юрлӑ хир шап-шурӑ,
вӑрман ҫеҫ лере хура.
Эп юрлатӑп ҫӗнӗ юрӑ,
хӗл хаваслӑхне кура.

Шур пӗркенчӗклӗ хир аслӑ.
Эх, саватпӑр-ҫке ӑна!
Мӗн чул савӑнӑҫ, хаваслӑх
илсе килчӗ хӗл-хӑна!

## Ăшăтман кĕрĕк.

Картишĕнче юртан тунă çын кĕлеткиги тăрать.

— Ку кĕлетке тумтирсĕр шăнать пуль,— тет Анюк.—Кĕрĕк тăхăнтартсан ăшăнмĕши?—тет.

— Айтăр сăнаса пăхар!—терĕç ачасем. Кĕлеткене кĕрĕк тăхăнтартрĕç. Хăйсем юрпа выляма тытăнчĕç. Нумайччен вылярĕç. Унтан кĕлетке çинчен аса илчĕç те ун патне чупса пычĕç. Хыпаласа пăхаççĕ— вăл çаплах сивĕ тăрать.

— Ак япала,—тет Анюк.—Ма кĕрĕк ăшăтмасть-ха ăна?—тет.

— Сана та ăшăтмасть вăл,—тет Кавруç.

— Апла пулсан, хĕлле мĕншĕн кĕрĕк тăхăнаççĕ?—ыйтать Анюк.

— Ăшша тытма,—ăнлантарать Кавруç. Кĕрĕк хăй ăшă памасть, вăл çын ăшшине çеç тытса тăрать. Пирĕн юртан тунă кĕлеткен хăйĕн ăшши çук. Çавăнпа вăл, кĕрĕк тăхăнтарнă пулин те, сивĕ.

## Хĕллехи тумтир.

Çанталăк ытла та сивĕ. Тула тухсанах сăмсана çатăр чĕпĕтсе илет.

Пирĕн атте вăрмана кайма хатĕрленет. Ăшă кĕрĕк тăхăнчĕ. Кĕрĕк çинчен аçам тăхăнчĕ, хĕрлĕ пиçиххипе туртса çыхрĕ.

Пуҫне ҫӗлӗк тӑхӑнчӗ, аллине алса тӑхӑнчӗ. Ытти колхозниксемпе пӗрле вӑрмана тухса кайрӗ.

Эпир те аппапа шкула кайма хатӗрлентӗмӗр.

Аппа ҫӑматӑ, кӗрӗк тӑхӑнчӗ. Пуҫне хулӑм тутӑр ҫыхрӗ. Эпӗ кӗрӗк тӑхӑнтӑм. Пуҫа ҫӗлӗк тӑхӑнтӑм, мӑя шарф ҫыхрӑм. Алсиш тӑхӑнса ятӑм. Халь ӗнтӗ шӑнмастпӑр, шкула аванах ҫитетпӗр.

## Тупмалли юмах.

Турчка пек кукӑр, ҫӳпҫе пек хӑвӑл.

## Юртан кӗлетке туни.

Хӗл пулса ҫитрӗ. Йӗри-тавра юр сарӑлса выртать. Ҫанталӑк сивех мар.

Ҫемҫе юрпа выляма питех те аван. Ачасем, урама тухса, пӗр-пӗрне юрпа персе выляма пуҫларӗҫ.

Акӑ Ваҫҫа юрпа пеме пӑрахрӗ те:

— Айтӑр, юртан ҫын кӗлетки тӑвар!— терӗ.

Ваҫҫапа пурте килӗшрӗҫ. Юра йӑваласа купалама тытӑнчӗҫ. Ачасен аллисем шӑнаҫҫӗ, анчах ҫын кӗлетки пулса пыни вӗсене хавхалантарать.

Пысăк çын кĕлетки туса хучĕç. Кĕлеткен пуçĕ те пур, аллисем те пур. Куçĕсене кăмрăкран турĕç.

## Юр—кĕрĕкпе пĕрех.

Шартлама сивĕсем вăхăтĕнче çара çĕр çинче тырă калчисем шăнаççĕ, хăш чухне тĕмлĕ йывăççем те, пысăк йывăççем те шăнса хăраççĕ. Анчах çĕре хулăм юр витсе тăрать пулсан, йывăç-курăксен тымарне сивĕ витеймест, юр айĕнче вĕсем сиенленмеççĕ.

Кĕркунне йывăç-курăксем вăррисене çĕре тăкаççĕ. Вăрăсен хытă хуппи вĕсене лайăх витсе тăрать. Анчах, апла пулсан та, юр çивитти пулман пулсан, йывăç-курăк вăррисем хĕлле сивĕпе пĕтĕмпех пĕтнĕ пулĕччĕç.

Юр айĕнче тискер кайăксем те, пĕр аптăрамасăр, лăпкăн çывăраççĕ. Тискер кайăк сывланипе тата ун кĕлеткинчен ăшă тухать, юр çав ăшша тытса тăрать, тулалла кăлармасть. Тискер кайăк йăвинче ăшăпа юр пăртак ирĕлет те, кайăкĕ тавра хăвăл пулса тăрать.

Çав шăтăкра тискер кайăка çывăрма ăшă. Вăл сывлăш çитменнипе вилсе кайма пултараймасть, мĕншĕн тесен ăшă сывлăш юра пĕчĕк çеç шăтăк туса шăтарса

тухать, ҫав шăтăкран таса сывлăш кĕрсе тăрать.

Юр вăл—кĕрĕкпе пĕрех: вăл йывăҫ-курăксене сивĕрен сыхлать, чĕрчунсене те сивĕрен хăтарать.

---

Мĕне-мĕне юр, кĕрĕк вырăнне пулса, шăнса пĕтме памасть!

## Юр айне пулнă ҫын.

Тимахви вăрмана вутă тиеме кайнă. Ҫул ҫинче вăл ыттисенчен кая юлнă. Ҫав хушăра ҫил-тăман тухнă. Тимахви ҫул ҫухатнă.

Тимахви ҫул шырама кайнă. Тем чул шырасан та тупайман. Унăн вăйĕ пĕтсе ҫитнĕ. Вăл юр ҫине кайса ӳкнĕ те, ăна юр хĕвсе лартнă.

Лаши Тимахвие кĕтсе тăнă-тăнă та ялалла утнă.

Килтисем пăхаҫҫĕ—лаша пур, Тимахви хăй ҫук. Тимахвие шырама каяҫҫĕ, анчах тупаймасăрах таврăнаҫҫĕ.

Тепĕр ирхине пĕр сунарҫă кайăка кайнă. Чипер пынă ҫĕртех унăн йытти ҫултан пăрăнарах кĕнĕ те юра чавма тытăннă. Сунарҫă йытă мĕн тупнине пăхма пынă. Курать—йытă чавнă шăтăкран пăс тухать. Сунарҫă хăй те чавма тытăнать. Кăшт чавсанах, юр айĕнче ҫын выртнине



курать. Вара вăл шăтăка каллех юрпа витсе хурать те яла васкаса чупать.

Ялта халăх пухăнчĕ, çынсем сунарçă кăтартнă вырăна кайрĕç. Тимахвие юр айĕнчен чавса кăларчĕç те килне илсе таврăнчĕç. Анчах ăна тӳрех пӳрте илсе кĕмерĕç. Малтан ăна тулта нумайччен юрпа йăваларĕç. Пĕр-ик сехетрен Тимахвие ăн кĕчĕ те, вăл çиме ыйтрĕ.

---

Тимахвие вилесрен çăлма кам пулăшнă?

## Хĕллехи каç.

Хĕвеланăç хĕрелет,
вăш-вăш сивĕ çил вĕрет,
кăпка юра вĕçтерет,
çула тăрăх юхтарать.

Çул хĕрринчи лакăмсем
питĕрĕнчĕç юрпала.
Вăрмансенчи кайăксем
кĕрсе ларчĕç йăвана.

Кĕске хӳре мулкачă
сирпĕнтерчĕ çырмана,
ытла сивĕ тивесрен
кĕрт хушшине пытанма.

Кушак пуçлă тăмана,
ыйăхĕнчен вăранса,
лапăстатрĕ ялалла
чăх-чĕп тавраш шырама.

*Хумма Çеменĕ.*

## Пичке мĕншĕн арканса кайнă?

Ваççа пĕчĕк çунашкапа пĕр пичке шыв илсе килнĕ. Шывне пӳрте йăтмалла пулнă та, анчах вăхăт çук: ачасем тăвайккинче ярăнаççĕ. Ваççа вĕсем патне чупса кайрĕ. Тăвайккинчен çĕрле пулсан тин таврăнчĕ те çывăрма выртрĕ, шыв пички çинчен мансах кайнă вăл.

Ирхине Ваççа амăшĕ килхушшине тухрĕ те курать: пичкери шыв шăннă, пичке кăшăлĕсем пурте татăлса сирпĕннĕ. Ну, Ваççана лекрĕ те вара... Ваççи тĕлĕнсе тăрать.



— Ку пичке мĕн пирки капла арканса кайнă-ха?—тесе шухăшлать.

Çакна вăл шкулта каласа пачĕ.

— Мĕн пирки вăл?—ыйтрĕç ачасем.

Учительница каларĕ:

— Сăнаса пăхăпăр, вара хăвăрах пĕлетĕр,—терĕ.

## Колхозниксен хĕллехи ĕçĕсем.

Колхозниксем тырпула хиртен пуçтарса кĕнĕ. Ăна çапса, сăвăрса кĕлете хунă. Халь вĕсем çав тырра армансенче авăртаççĕ. Йĕтĕн тата кантăр вăрринчен çу çаптараççĕ.

Хĕрарăмсем сӳс, çăм арлаççĕ, чăлха, алсиш çыхаççĕ.

Выльăхсен хĕлле хире тухмалли çук, вĕсене килтех çитерсе усраççĕ.

Юр ўксенех, колхозниксенчен чылайăшĕ вăрман касма кайрĕç. Ман пичче автомобиль заводне ĕçлеме кайрĕ.

Хăшпĕр бригадăра ут таврашĕсем, çуна-урапа хатĕрĕсем юсаççĕ, çĕнĕрен туса хатĕрлеççĕ. Тимĕрçĕсемпе платниксем çитес çура ĕçлеме кирлĕ ялхуçалăх машинисене юсаса, йĕркелесе хураççĕ. Хут сахал пĕлекен колхозниксем каçсерен вĕренме çўреççĕ.

---

Ялта хĕлле мĕнле ĕçсем тăваççĕ?
Хĕрарăмсен мĕнле-мĕнле ĕçсем пур?
Арçынсем мĕнле-мĕнле ĕçсем тăваççĕ?
Шкул ачисем ашшĕ-амăшĕсене мĕнле ĕçсенче пулăшаççĕ?

## Икĕ колхозник.

Антунпа Якур иккĕшĕ те колхозниксем. Антун питĕ ĕçчен, ĕçе яланах вăхăтра тухать. Хушнă ĕçе тĕплĕн тăвать. Яланах тăрăшса ĕçлет. Вăл—ударник.

Якур ўркенсе ĕçлет. Ĕçе пуринчен кайран тухать. Хăш кун пĕрре те тухмасть.

Кĕркунне çитрĕ. Колхозниксем кам мĕн чухлĕ ĕçлесе илнине пăхма пуçларĕç.

Якурăн ĕç кĕнеки çине ĕçкунĕ сахал çырăннă.

— Мӗншӗн капла?—тет Якур ҫиленсе.

— Эсӗ ӗҫ вӑхӑтӗнче мӗн турӑн? Миҫе кун ҫывӑрса ирттертӗн?—тесе ыйтрӗ Антун.

— Сан ӗҫ ҫук унта!

— Пӑх-ха, санӑн кӗнекӳ ҫине мӗн ҫырнӑ.

Якур вуласа пӑхрӗ:

„Кам ытларах ӗҫлет, ҫав ытларах илет. Мӗн чухлӗ ӗҫлен, ҫавӑн чухлӗ илен“.

## Ваттисен сӑмахӗ.

Ӗҫрен ан хӑра, вӑл хӑй санран хӑратӑр.

## Кам мӗн ӗҫлет.

Вутта каять... .
Утӑ тиеме каять... .
Ҫӑлтан шыв ӑсса килет... .
Шыв ӑшӑтса, выльӑхсене шӑварать... .
Юр хырать... .
Ут хатӗрӗсене юсать... .
Пӳртре пуҫтарать, урай ҫӑвать, тасатать... .
Кӗпе ҫӑвать, саплать, ҫӗлет... .

---

Кашни йӗркене кам ӗҫленине, хӑш ӗҫе аҫу тунине, хӑшне аннӳ тунине *кӗртсе ҫырӑр.* Мӗнле ӗҫре эсӗ те усӑллӑ пултӑн? Мӗнле ӗҫсене эсӗ хавассӑн тӑватӑн?

Тӗслӗх. Вутта атте каять.



## Конькипе.

Вĕçсе пырап конькипе—
Хăлхасем хĕп-хĕрлĕ.
Чăр-чăр чĕрсе пынипе
пăр çиййĕ пит йĕрлĕ.
Йăлтăр-ялтăр çиçĕм пек
йăр та яр пыратпăр.
Алла-аллăн тытăнса,
савăнса ярнатпăр.
Астумасăр хăш чухне
такăнса ÿкетпĕр.
Кĕç тăратпăр та каллех
çиçĕм пек вĕçетпĕр.

## Тупмалли юмах.

Шывра çуралать, шывран хăрать.



# Ленин кунĕсем




## Ленин атте.

Ирĕк, савăк пурăнмашкăн
Советсен çĕршывĕнче.
Халь хисеплĕ халăх эпир
мĕнпур халăх йышĕнче.

Калаçма именесси те
тăрса юлчĕ ĕлĕке.
Ирĕккĕн, илемлĕн, уççăн
янăрать пирĕн чĕлхе.

Янăрарĕ аслă Ленин
тăван халăх чĕлхинче.
Вăл пире чĕнсе çĕклерĕ
кĕрешӳ кунĕсенче.

Çиçĕм пек çиççе çутатрĕ
унăн шухăшĕ пире.
Вăл кӳрсе, уçса кăтартрĕ
çĕнĕ ĕмĕрти ире.

## Ленин хушса хăварнипе мĕн тунă?

Пирĕн çĕршывра заводсемпе фабрикă-сем, рабочисем валли пысăк та çутă çурт-сем нумай тунă. Ялсенче колхозсем туса хунă.

Хуласемпе ялсенче яслисем, ача сачĕ-сем, шкулсем, библиотекăсем, клубсем, больницăсем тăва-тăва лартнă.

Рабочисемпе колхозниксене канмашкăн канмалли çуртсем тата санаторисем уçнă.



Çак çуртра революциччен помещик çемйи пуранна. Ку çемьере пилĕк çын пулнă. Помещиксем хăйсем нимĕн те ĕçлемен, вĕсемшĕн тарçисем ĕçленĕ.

Пахчипе чечексем патне ют çынна никама та яман, кунта помещик ачисем çеç уçăлса, выляса çӳренĕ.



Халĕ кунта ачасен çурчĕ. Унта—аллă ача. Çуртра ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнă ачасем пурăнаççĕ. Ачасем хăйсен çуртне тăван çурта юратнă пек юратаççĕ. Воспитательсем ачасене питĕ лайăх пăхаççĕ: вĕсене аван çитереççĕ, тумлантараççĕ.

Ачасем шкулта вĕренеççĕ, пушă вăхăтра чечек пахчине тирпейлесе пăхса тăраççĕ, чечексем хушшинчи çулсене тасатаççĕ. Площадкăсем çинче вăйăсем выляççĕ.

* *
*

Ленин рабочисемпе хресченсен тусĕ пулнă. Вăл ĕçлекенсене пурне те лайăх пурăнмалла тăвассишĕн тăрăшнă.

Ленин вилнĕ, анчах вăл вĕрентсе хăварнисене эпир нихçан та манас çук. Эпир пурнăçа Ленин вĕрентсе хăварни тăрăх,

Сталин юлташ ертсе пынипе туса пыратпăр. Совет çыннисем туслă пурăнаççĕ. Аван ĕçлеççĕ, хăйсен Советлă Тăван çĕршывне чунтан юратса сыхлаççĕ. Çапла тума пире Ленин вĕрентсе хăварнă, çапла тума пире Сталин юлташ вĕрентет.




**Ленин шухăшĕ.**

Санăн хăватлă, чаплă шухăшу
хĕвел пек çутă, çăлтăр пек çӳлте—
пĕтĕм тĕнчипе вĕçсе çӳреме
нимĕнле вăй та ăна чарас çук.

Пӗлӗт юхнӑ пек ирӗккӗн юхма
тем пек хӑват та ҫулне пӳлес ҫук.
Тем чухлӗ пысӑк тинӗссем ҫинчен
урлӑ та пирлӗ тӑвӑл пек ҫӳрет.

Тимӗр картасем, вӑрмансем урлӑ,
ҫил пек ыткӑнса, ҫиҫӗм пек кӗрет;
этем ӑрӑвӗн ҫулне кӑтартса,
ҫӗре ҫутатса маяк пек ҫунать.

Пур ӗҫхалӑхне чӗнет пӗрлешме,
миллионшар ҫынна ҫитсе вӑратать;
пусмӑр тӗнчипе тӑрса кӗрешме
хурҫӑ пек ҫирӗп вӑя чӑмӑртать.

*Н. Шелепи.*

Январӗн 21-мӗшӗ В. И. Ленина асӑнмалли кун.
Ҫав кун Ленин вилнӗ.

## 1924 ҫулхи январӗн 21-мӗшӗ.

Владимир Ильич Ленин пин те тӑхӑрҫӗр ҫирӗм тӑваттӑмӗш ҫулхи январӗн 21-мӗш кунӗнче Мускав ҫывӑхӗнчи Горки ятлӑ ялта вилнӗ.

Ленина Мускавра пытарнӑ. Вӑл кун ӗҫҫыннисем Ленина юлашки хут ӑсатма пуҫтарӑннӑ.

Ленин тупӑкне мавзолея антарнӑ чухне пур фабрикӑсемпе заводсем хурлӑхлӑн




кăшкăртнă. Пилĕк минут хушши пĕтĕм çĕршыв шăп пулнă. Мĕнпур ĕççынни, аслă çулпуçа асăнса, чĕререн хурланнă.

Ленин рабочисемпе хресченсен çывăх тусĕ пулнă. Вăл ĕçхалăхĕн пурнăçне лайăхлатма тăрăшнă.

Ленин вилнĕ, анчах вăл вĕрентсе хăварнисене эпир нихçан та манмастпăр. Эпир Ленин хушса хăварнисене пурнăçа кĕртсе пыратпăр.

---

Сирĕн патăрта Ленин ятне хисеплесе мĕн-мĕн тунă?

* *
*

Çĕнтерӳллĕн утăмлатпăр
Ленин—Сталин çулĕпе.
Çĕршыв аслă, çулĕ такăр.
Аслă çулпуç пирĕнпе.




## Совет Ҫарӗ.

Февралӗн 23-мӗшӗ — Совет Ҫарӗн уявӗ.

Совет Ҫарне Ленин тата Сталин тунӑ. Вӑл пирӗн Тӑван ҫӗршыва хӳтӗлет, пирӗн чикӗсене тӑшмансенчен сыхлать.

Вӑл нумай тӑшмансене ҫапа-ҫапа ҫӗмӗрнӗ. Чи йывӑрри нимӗҫ фашисчӗсене хирӗҫ вӑрҫнӑ вӑрҫӑ пулнӑ. Фашистсем совет влаҫне пӗтерсе хума шутланӑ. Вӗсем пӗтӗм тӗнчене хӑйсен аллине ҫавӑрса илесшӗн пулнӑ. Пирӗн Тӑван ҫӗршыври рабочисемпе хресченсене чурасем туса хума шутланӑ. Фашистсем пирӗн нумай хуласемпе ялсене ишсе пӗтернӗ.

Анчах Сталин юлташ пӗтӗм халӑха нимӗҫ фашисчӗсене хирӗҫ кӗрешме чӗнчӗ. Вӑл хӑй Совет Ҫарне ертсе пычӗ. Пирӗн салтаксем хастаррӑн ҫапӑҫрӗҫ. Пирӗн моряксем тӑшмана тинӗс ҫинче ҫапа-ҫапа пычӗҫ, тӑшманӑн карапӗсене, шыв айӗнчен ҫӳрекен киммисене нумай путарчӗҫ.

Сталин юлташ чӗннипе пӗтӗм халӑх пирӗн ҫара пулӑшса тӑчӗ, пирӗн ҫар фашистсене ҫапса аркатрӗ.

Совет Çарĕ пирĕн çĕршыва тăшмансенчен хăтарчĕ, вĕсен тĕп хулине Берлина çĕмĕрсе кĕчĕ.

Эпир пурте Совет Çарне юрататпăр.

Уявсенче Совет Çарĕсем Мускаври Хĕрлĕ площаде парада тухаççĕ. Парад вăхăтĕнче Сталин юлташ Ленин мавзолейĕ çинче тăрать. Вăл пирĕн тăван, хăватлă çара саламлать. Çуран çар йĕрки-йĕркипе илемлĕн утса пырать. Утлă çар сиккипе сиктерсе пырать. Хăватлă танксем кĕмсĕртетсе чупаççĕ. Кăвак пĕлĕтре хăрушă бомбардировщиксем вĕçеççĕ, çиçĕм пек çивчĕ истребительсем вĕлтлетсе иртеççĕ.

Салтаксемпе офицерсем Сталин юлташа саламлаççĕ.

Мухтав пирĕн тăван Совет Çарне!

## Тăван çĕршыв сыхлавçи.

„Пире ют çĕр пĕр пусăм та кирлĕ мар, анчах хамăр çĕре те, хамăрăн пĕр вершук çĕре те никама та парас çук“, — тенĕ Сталин юлташ.

— Парас çук,—терĕç рабочисем.

— Парас çук, — терĕç колхозниксем.

— Парас çук,—терĕ мĕнпур ĕçхалăхĕ.



Пирĕн Совет Çарне Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ ертсе пырать. Коммунистсен партийĕ тата унăн çулпуçĕ Сталин юлташ ертсе пынипе, пирĕн Совет Çарĕ никам çĕнтерейми вăйлă çар пулса тăчĕ.

## Вуникӗ паттӑр.

Голованов лейтенант чаҫӗнчи вунпӗр боец ҫине тул ҫутӑлас умӗн нимӗҫсен роти пырса тапӑннӑ. Нимӗҫсем сахалтан та 120 ҫын пулнӑ. Хӑйсен аллинчен вӗҫертнӗ вырӑна вӗсем каялла туртса илме шутланӑ. Совет боецӗсем сахаллӑн пулнине кура нимӗҫсем сӗмсӗрленсех малалла кӗрсе пынӑ. Голованов лейтенант боецсене ҫирӗппӗн тӑма чӗннӗ.

— Юлташсем! Эпир питех те сахаллӑн. Пире хирӗҫ килекен нимӗҫсен ушкӑнӗ, хӑвӑрах куратӑр, пирӗнтен темиҫе хут ытларах. Пӗр ҫын юлмиччен тӑрар та, пӗр утӑм та каялла чакмӑпӑр,—тенӗ вӑл.

— Вилӗпӗр, анчах чакмастпӑр,—тенӗ боецсем пурте пӗр сасӑпа.

Фашистсен салтакӗсем ҫывхарсах пынӑ. Пирӗн боецсемпе вӗсен хушши 150 метртан ытла мар тӑрса юлнӑ. Ҫак самантра лейтенант: „Перӗр!“ —тесе команда панӑ. Фашистсене сасартӑк совет боецӗсем перекен вӑйлӑ вут-хӗм пырса ҫапнӑ. Тӑшман тӳссе тӑрайман, каялла ҫаврӑнса тарнӑ. Ҫапӑҫу пӗтсен, Голованов боецӗсем нимӗҫсен 28 виле выртса юлнине шутласа кӑларнӑ тата нумай хӗҫпӑшал пуҫтарса илнӗ. Пирӗн боецсем хӑйсене панӑ приказа чыслӑн пурнӑҫа кӗртнӗ.

## Тӑшмана тытни.

Колхоз хирӗсем тӑрӑх автомобиль вӗҫтерсе пынӑ. Вӑл аслӑ ҫул ҫинчен час-часах вак-тӗвек ҫулсем ҫине пӑрӑнса кӗнӗ, тӑрсан-тӑрсан, каллех аслӑ ҫул ҫине тухнӑ. Ҫырма урлӑ хывнӑ вӑрӑм кӗпер тӗлне ҫитсен, вӑл чарӑнса тӑнӑ. Уҫӑ кантӑк витӗр пӗр ҫын кӗпере питӗ тимлӗн тӗпчесе пӑхнӑ. Унтан, автомобиль кӗпер урлӑ каҫса ҫитнӗ чухне: „Стой!“ —тенӗ сасӑ илтӗннӗ.

Ҫул ҫине ҫывӑх ялти колхозниксен ачисем улттӑн

чупса тухнӑ. Аслӑраххи—Витя Фомин — винтовка затворне шаклаттарса илнӗ, колхоз конюхӗн ывӑлӗ Сима Пронин аллине пуртӑ тытнӑ, учитель ывӑлӗ Витя Соловьёв пысӑк чул тытнӑ.

Кабина алӑкне уҫса, Витя машина ӑшӗнчи ҫынтан документсем ыйтнӑ.

Машина ӑшӗнче ларакан ҫын, питне чалӑштарса илнӗ те:

— Эсир мӗнлескерсем вара? — тесе ыйтнӑ.

— Эпир, — тенӗ Сима,—колхоз ачисем, дежурнӑйсем. Машинӑсене ҫул кӑтартса яратпӑр.

— Пӑхӑр кунта,—тенӗ машина ӑшӗнчи ҫын, хӑйӗн кӑкри ҫине кӑтартса.

Унӑн кӑкри ҫинче, сулахай енче, икӗ орден, Хӗрлӗ Ялав орденӗсем, йӑлкӑшса тӑнӑ. Ачасем, ҫавна курсан, пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илнӗ. Вӗсем ку ҫын кӑкри ҫинчи орденсем Хӗрлӗ Ҫар командирӗн орденӗсенчен урӑхларах пулнине асӑрханӑ.

— Документсем ӑҫта?—ҫинерех тӑрса ыйтнӑ Витя.

— Эпӗ вӗсене хам чаҫре хӑвартӑм, — тенӗ палламан ҫын.

— Сирӗн инҫе каймалла-и? — ыйтнӑ хайхи ҫынтан Витя.

— О...· хулине, — ответ панӑ лешӗ.

— Айтӑр эппин, сире ҫул ҫине кӑларса ярӑпӑр, — тенӗ ачасем. Виҫӗ ача машина ӑшне кӗрсе ларнӑ. Вӗсем машинӑна колхоз правленийӗ патне тухакан ҫулпа илсе кайма хушнӑ. Правлени тӗлне ҫитсен, Витя правлени умӗнче тӑракан милиционера кӑшкӑрса чӗнсе илнӗ.

— Акӑ палламан ҫынна илсе килтӗмӗр, унӑн документсем ҫук,—тенӗ вӑл милиционера.

Милиционер ҫав ҫынна тытса чарнӑ. Вӑл нимӗҫ самолӗчӗ ҫинчен аннӑ фашист пулнӑ иккен. Орденӗсем унӑн суяскерсем пулнӑ.

# Фесенко салтак фашистсен тыткăнĕнчен тарни.

Фесенко салтака хĕрӳ вăрçă вăхăтĕнче йывăр амантнă. Ăнран кайнă Фесенко пĕр шыв хĕррине пырса ӳкнĕ.

Тăна кĕрсен, вăл хăйне тăвата фашист таçта кимĕпе илсе кайнине чухласа илнĕ.

— „Эпĕ фашистсен тыткăнĕнче!“ — шухăшласа илнĕ Фесенко. Çак шухăш ăна вĕрилентерсе янă. — Тыткăнра пуличчен вилни лайăхрах,— шухăшласа илнĕ те вăл, çавăнтах мĕн тумаллине йышăннă. Фесенко, шыв ĕçен пекки туса, кимĕ хĕрри çине хыттăн пуснă та ăна ӳпĕнтерсе янă. Фашистсем шыва сирпĕнсе ӳкнĕ. Çав хушăра Фесенко, шыв тĕпнелле чăмса, хамăр еннелле ишсе кайнă. Тăшмансем енчен Фесенко çинелле пеме тытăннă. Шыв айне пытанса, хăй çулне пĕрмай улăштара-улăштара, вăл шыв урлă каçнă та йывăç тĕмĕсем хушшине, хамăр çарсем патне, ăнаçлăнах пырса тухнă.

# Пĕр талăк иртсен.

Кĕçĕн сержант Осипов юлташ (Элĕк районĕнчи Пиçенер ялĕсем) пилĕк боецпа пĕрле командованин заданине пурнăçа кĕртнĕ чухне тăшмансен тылне лекнĕ. Кусем ĕнтĕ тыткăна лекрĕç пулĕ, тесе шухăшланă чаçри юлташĕсем.

Вăхăт çур талăк иртнĕ. Осипов юлташ çук. Шăп пĕр талăк иртсен, кĕçĕн сержант Осипов юлташ, хăйĕн пилĕк боецĕпе пĕрле, фронт линийĕ урлă каçса, хамăр чаçе таврăннă. Пирĕн маттур боецсем хăйсемпе пĕрле икĕ пулемĕт тата тăвата фашиста тытса килнĕ.

Хăюллă боецсене командовани тав тунă. Вĕсем çинчен пĕтĕм чаçре мухтавлă хыпар саралнă.

## Тăван çĕршывшăн.

Фашистсем ыйтса тĕпченĕ чух вăл хăйне Таня тенĕ. Унăн чăн-чăн ячĕ (ку каярах палăрнă) Зоя Космодемьянская пулнă. Зоя Мускавра çуралса ӳснĕ. Вăл тăххăрмĕш класра вĕреннĕ, комсомолка пулнă. Хаяр вăрçă вăхăтĕнче вăл, тăшмана хирĕç пĕтĕм вăя хурса кĕрешес тесе, партизансен отрядне кайса кĕрет. Çине тăрса, паттăррăн та хăюллăн ĕçлет Зоя. Вăл нимĕçсем йышăннă ялсене пыра-пыра кĕрет, вĕсен çыхăну линийĕсене татать, вĕсем пурăнакан çуртсене, хĕçпăшал склачĕсене вут тĕрте-тĕрте çунтарать.

Анчах Зоя нимĕçсен аллине лекет. Нимĕçсем ăна темĕн тĕрлĕ асаплантараççĕ, ыйтса тĕпчеççĕ. Зоя хăйĕн юлташĕсем, партизансем çинчен пĕр сăмах та каламан.

Темĕн тĕрлĕ мăшкăласа асаплантарнă хыççăн фашистсем Зойăна мăйкăч патне çавăтса пыраççĕ. Хăйне нимĕç мăйкăчĕ пăвса вĕлерес умĕн Зоя, совет çыннисене чĕнсе, çапла каланă: „Юлташсем! Хăюллăрах пулăр, кĕрешĕр, тăшмана вĕлерĕр, çунтарăр! Эпĕ вилĕмрен хăрамастăп: хамăр халăхшăн вилетĕп“, — тенĕ.

## Йытă-санитар.

(Учитель вулать.)

I.

Вăрманта çапăçу пынă.

Вăрман хĕрринчен аякра мар, хирте йывăр суранланнă салтак выртнă.

Салтак юн кайнипе аптăраса çитнĕ, анчах ун патне пулăшу çаплах пыман. Вăл ăçта выртнине никам та пĕлмен.

Çил тухнă. Суранланнă çынна юр хĕвсе лартма тытăннă. Вăл шăнса хытма пуçланă.



Сасартӑк, тӗлӗкри пек, суранлӑ ҫын хӑй ҫумӗнчех такам йывӑррӑн сывланине илтет. Вӑл куҫне уҫса пӑхать. Унран икӗ утӑмра пысӑк ҫӑмламас йытӑ тӑра парать. Унӑн мӑй ҫыххи ҫинче темӗнле йывӑр патак ҫакӑнса тӑрать.

Суранлӑ ҫын хавасланса кайрӗ. Халь ӗнтӗ вӑл пӗччен мар!

— Йыттӑм! Кунта, кунта! — чӗнчӗ вӑл йытта.

Йытти кӑмӑллӑн хӳрине пӑтратса илчӗ. Унтан вӑл мӑй ҫыххи ҫинчи патака хыпса илчӗ те каялла ҫаврӑнса чупрӗ.

— Эх! Кайрӗ... — ассӑн сывласа илчӗ те суранлӑ ҫын, куҫне хупрӗ.

II.

Анчах йытти каялла таврӑнчӗ. Тата пӗччен те мар! Вӑл хӑйпе пӗрле икӗ юланут илсе пынӑ. Кусем ҫар санитарӗсем пулнӑ. Вӗсем ӗнтӗ ҫак йытта суранланнисене шырама хире янӑ пулнӑ.

Йытӑ салтак патне, палланӑ ҫын патне пекех, вӑркӑннӑ. Ӑна питӗнчен ҫуласа илнӗ.

Вара салтак йытта ҫупӑрлама тытӑннӑ.

— Манӑн сумкӑра шоколад пур. Ӑна илсе, йытта парӑр. Вӑл, мана тупса, манӑн пурнӑҫӑма ҫӑлчӗ, — тенӗ.

Санитарсем суранлă çыннăн суранĕсене çыхнă та ăна лазарета ăсатнă. Халĕ вăл сып-сывах.

III.

Йытă суранлă çынна тупнине санитарсем мĕнле пĕлнĕ-ха? Патак тăрăх иккен. Йытă патака çыртса каялла таврăнать пулсан—паллах, вăл кама та пулин тупнă. Çавăн пек вĕрентсе çитернĕ ăна.

Ăçта вĕреннĕ-ха çав йытă?

Ленинградра тĕлĕнмелле шкул пур. Çав шкулта вĕренекенсем çырма-вулама пĕлмеççĕ, вĕсен кĕнеке-тетрадь тавраш ĕ çук.

Çав вĕренекенсем—ахаль йышши йытăсемех, кил сыхлакан йытăсем.

Вĕсене виçĕ уйăх хушши çапăçу вăхăтĕнче суранланнă çынсене шыраса тупма вĕрентеççĕ.

Çав йытăсене санитар-йытăсем теççĕ. Вĕсем пăшал пенинчен хăрамаççĕ, ют çын вĕсене хăйсен çулĕнчен пăрса яма пултараймасть.

Санитар пулмашкăн кашни йыттах илмеççĕ, йăвашшисене, ачашраххисене çеç суйласа илеççĕ. Хаярри, çыртаканни суранланнă çынна хăратма, çыртса илме те пултарать.

Çăмламас санитарсем вăрçă вăхăтĕнче сахал мар çынна вилĕмрен хăтараççĕ.

* * *

Пирĕн ирĕклĕ, хаваслă,
тулăх пурнăçа
куç шăрçи пекех сыхлать вăл,
паттăр Совет Çарĕ.

Урăм-сурăм тăвăл витĕр
пĕр хутчен çеç мар
çĕнтерӳллĕн тухнă пирĕн
паттăр Совет Çарĕ.




## Эпĕ хула курни.

Манăн хулана питĕ кайса курас килетчĕ. Пĕрре мана атте хăйпе пĕрле Шупашкара илсе кайрĕ.

Эпĕ, савăннипе, вăрăм çула сисмерĕм те. Кĕçех хулана çитсе те кĕтĕмĕр.

Хулана пырса кĕнĕ çĕрте урамăн икĕ айккипе пĕр пек илемлĕ çуртсем лараççĕ.

— Кунта рабочисем пурăнаççĕ,—терĕ атте. Хула варринелле кĕнĕçемĕн ик-виç хутлă çуртсем нумайлана пуçларĕç.

Пĕр тăватă хутлă пысăк çурт тĕлне çитрĕмĕр.

— Куна Пичет çурчĕ, теççĕ. Кунта хаçатсем, журналсем, кĕнекесем кăларса тăраççĕ,—терĕ атте.

Атте мана хула тăрăх нумай кăтартса çӳрерĕ. Советсен çуртне, театр çуртне, шкулсене, больницăсене куртăмăр. Атăл хĕррине çитрĕмĕр. Пристаньсен çумĕнче пăрахутсем тăраççĕ. Атăл хĕррине пынă чух темĕскер хыттăн кăшкăртма пуçларĕ. Ку завод сасси пулнă иккен.

Хулара автомобильсем, автобуссем питĕ йышлă. Автобус çине эпир те ларса куртăмăр.



## Автобус.

Тӳрĕ, тикĕс çулпала
пĕр автобус вĕçтерет,
хăйне ирĕк çул пама
вăл таçтанах систерет.

Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
Таптанатăн вĕт, асту!

Ай-хай лаши, хăраса,
çул айккипе сиктерет.

Автобусĕ, васкаса,
тата хытă вĕçтерет.
Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
Çулне лайăхрах асту.

*А. Кăлкан.*



## Фабрикăсемпе заводсем.

Марукăн пиччĕшĕ шкулта вĕренет. Пĕрре Марук пиччĕшĕнчен ыйтать.

— Пирĕн колхозăн тимĕрçĕ лаççинче темĕнле япала та тăваççĕ. Çав трактора мĕнле тăваймаççĕ вара?—тет.

Пиччĕшĕ Марука ăнлантарса парать.

— Трактора тимĕрçĕ лаççинче тумаççĕ. Ăна машинăсемпе ĕçлесе тăваççĕ. Кашни пайне уйрăм машина тăвать. Машинăсем пысăк çуртсенче лараççĕ. Çав пысăк çуртсене фабрика е завод теççĕ.

Фабрикăсенче темĕнле япала та туса кăлараççĕ. Акă эсĕ тăхăннă кĕпене фабрикăра машинăсемпе тĕртсе кăларнă çитцăран çĕленĕ. Кĕпе хуралсан, ăна заводра тунă супăньпе çуса тасататпăр. Сăмавара та заводра тунă.

Заводсенче рабочисем ĕçлеççĕ. Вĕсем пирĕн пек тырă-пулă акса тумаççĕ. Эпир тырра государствăна сутатпăр. Государство çав тырра рабочисене сутать. Рабочисем туса кăларнă япаласене эпир кооперативсем урлă илетпĕр. Çапла колхозпа хула пĕр-пĕрне пулăшса тăраççĕ.

---

Сирĕн колхозăн фабрикăра, заводра туса кăларнă мĕнле япаласем пур?

## Пăрахут.

Атăл тăрăх анаталла
пысăк пӳрт иртсе пырать.
Ăна хирĕç, хум кăларса,
тепĕр мăн çурт улăхать.

Аякранах пĕрне-пĕри
сасă пачĕç шăхăртса:
пĕрне-пĕри тĕкĕнмесĕр
иртес пулать пăрăнса.

Пӳрчĕсенче çын лăк тулли —
тĕрлĕ çĕре каяççĕ.
Анлă Атăл, ай, куç тулли,
ăна пурте саваççĕ.



## Пушар йытти.

Пĕрре çурт çунма тытăннă. Пушар сӳнтерекенсем çурт патне пырсан, вĕсене хирĕç хĕрарăм чупса тухнă. Йĕре-йĕре, вăл пӳрте икĕ çулхи хĕрача тăрса юлни çинчен каласа панă.





Пушар сӳнтерекенсем пӳрте Боб ятлă йытта кĕртсе янă. Боб пусма тăрăх чупса улăхнă та тĕтĕм ăшĕнче çухалнă.

Пилĕк минутран вăл пӳртрен чупса тухнă. Шăлĕпе кĕпинчен çыртса, вăл хĕрачана йăтса тухнă.





Амăшĕ хĕрĕ патне чупса пынă та, хĕрĕ чĕрĕ юлнăшăн савăннипе, йĕрсе янă.

Боб каллех пўртелле туртăннă. Пўрте чупса кĕрсе, вăл часах çăварĕпе темскер çĕклесе тухнă. Боб мĕн çĕклесе тухнине лайăххăн сăнаса илсен, пурте ахăлтатса кулса янă. Вăл пысăк пукане çĕклесе тухнă пулнă.

*Л. Толстой.*

## Ваттисем калани.

Вут-хĕмĕн алли вăрăм,
вĕçерĕнсен ярса тытма çук, теççĕ.

# Таса пул - сывлăхла пулăн





## Таса пурăнма вĕрен.

Эпĕ ирхине 7 сехетре ыйхăран вăранатăп. Вăрансан, вырăн çинче кахалланса выртмастăп. Тӳрех тăрса гимнастика тăватăп та тумланма пуçлатăп. Вырăна пухса тирпейлетĕп, шăл-çăвара тасататăп, пит-куçа çăватăп. Шурă алшăллипе шăлăнатăп.

Эпĕ эрнере пĕрре мунча кĕретĕп. Кĕпе-йĕм улăштаратăп.

Чĕрнесене кышламастăп, хачăпала касатăп. Çипуçа та вараламастăп, яланах таса çӳретĕп. Манăн алăсем те таса, вĕсене ĕç хыççăнах çăватăп. Алла çумасăр апат çиме лармастăп.

Урайне сурмастăп. Пӳртре тусан кăлармастăп, çӳпĕлеместĕп. Пӳртри сывлăша час-часах уçăлтаратăп.

Эсĕ те ман пек пул, таса пурăнма тăрăш.

---

Эсир ирхине миçе сехетре тăратăр?
Кашни ирех шăлсене тасататăр-и?
Сирĕн уйрăм алшăлли пур-и?

## Мĕнле çывăрмалла.

1. 9 сехетре çывăрма вырт. 7 сехетре тăр.
2. Çиелти кĕпӳ-йĕмне хывса çывăр.
3. Пуç çинчен ан витĕн.
4. Аллусене ан вит.
5. Виçĕ кунта пĕрре вырăна тула тухса силле.
6. Çывăрас умĕн те, çывăрса тăнă хыççăн та пӳлĕме форточка е алăк уçса уçăлтар.

## Юмăç пĕтерет, тухтăр пулăшать.

(Асанне каласа пани.)

Пирĕн Ванюка пĕчĕккĕ чухне трахома ернĕччĕ.

Эпĕ ăна юмăç патне илсе кайрăм. Юмăç Ванюк куçне тавăрса çуларĕ. Сурчăкĕпе сĕрчĕ, сахăр ватса ячĕ. Çакăн хыççăн Ванюкăн куçĕ пушшех пăсăлса кайрĕ.

Пурăна-киле Ванюк куçне шур илме пуçларĕ. Куç курми пулнипе, Ванюк шкула та çӳрейми пулчĕ.

Ванюк шкула çӳреме пăрахсан, учительпе пионерсем пирĕн пата пычĕç. Ачана юмăç патне илсе кайнăшăн мана ятларĕç. Ванюка тухтăр патне илсе кайма хушрĕç.

Вара эпĕ тепĕр куннех Ванюка больницăна илсе кайрăм. Тухтăр Ванюка больницăна хăварчĕ. Пĕр уйăхран Ванюк больницăран таврăнчĕ. Унăн куçĕ тӳрленнĕ. Вăл чиперех куракан пулчĕ. Çавăнтанпа эпĕ юмăç патне ура та ярса пусмастăп.

---

Трахомăпа чирлес мар тесен, таса пурăн. Ирхине, ĕç хыççăн, апат умĕн, апат çисен, çывăрма выртиччен—аллуна çу. Уйрăм, таса алшăллипе шăлăн. Куçна аллупа, кĕпе çаннипе ан шăл. Трахомăллă çын вырăнĕ çине ан вырт.

Куç пăсăлсан, çийĕнчех больницăна кай.

Трахомăпа чирлесен, больницăна вăхăтра çӳре.

Тухтăр мĕн хушнине туса пыр.

## Пит-куçа мĕнле çумалла тата шăла мĕнле тасатмалла.

1. Пит-куçа кашни ир тата кашни каç çумалла.

2. Нимрен малтан аллăсене çуса тасатмалла.

3. Пите, хăлхасене, мăя таса алăпа çумалла.

4. Çăвăннă хыççăн пит-куçа, аллăсене пĕтĕмпе типсе çитиччен шăлмалла.

5. Пит-куçа таса питшăллипе шăлмалла.

6. Шăлсене ирхине те, каçхине те шăл щёткипе, порошокпа тасатмалла.

### Сывлăхшăн тата акă мĕн кирлĕ:

Таса сывлăшпа сывламалла,
пÿлĕмсене уçăлтармалла,
çывăрмалли вырăна таса тытмалла.



Эпир физкультура тăватпăр.
Эпир физкультурăна юрататпăр.
Физкультура пире сывлăхлă пулма пулăшать.
Физкультура пирĕн сывлăха çирĕплетет.

# Тухтăр патĕнче.

Петьăсен йытă пур. Петя унпа питĕ туслă. Вĕсем иккĕш выляççĕ. Хăш чухне йытти Петьăна тутинчен те çуласа илет.

Пĕрре Петя чирлерĕ. Амăшĕ ăна тухтăр патне илсе кайрĕ. Йытти те юлмарĕ, вĕсен хыçĕнченех пычĕ.

Тухтăр Петьăна пăхрĕ те:

— Сан хырăмăнта шĕвĕрĕлченсем пур,—терĕ. Çав вăхăтрах тухтăр пӳлĕмне Петя йытти чупса кĕчĕ. Тухтăр ăна курчĕ те:

— Сана йытту питĕ юратать пулмалла?—терĕ.

— Юратмасăр, эпир унпа иксĕмĕр пĕрле вылятпăр, пĕр-пĕрне чуптăватпăр,—терĕ Петя.

Кăна илтсен, тухтăр çапла каларĕ:

— Эсир пĕр-пĕрне юратни лайăх. Анчах йытта нихçан та хăвна çулама ан пар. Çав шĕвĕрĕлченсене сана йытту ертнĕ. Йытă-кушак таврашне чуптума юрамасть,—терĕ.

---

Петьăна шĕвĕрĕлченсем мĕнрен ернĕ?

Тухтăр Петьăна мĕн калана?

***Йытă-кушак таврашне хăвна çулама ан пар.***



# Кимти выльахсем тата тискер кайӑксем



## Лаша.

Лаша — питӗ усӑллӑ выльӑх. Вӑл илемлӗ те вӑйлӑ. Лаша пит нумай ӗҫлет. Ялхуҫалӑхӗнче лаша темӗн тӗрлӗ ӗҫсем туса тӑрать.

Хӗлле лашасем вӑрмантан тӗрлӗ йывӑҫ, вутӑ-шанкӑ турттараҫҫӗ. Ҫуркунне лашасене плуг кӳлсе ака тӑватпӑр. Вӗсене сӳре сӗтӗрттеретпӗр.



Ҫуллахи шӑрӑх вӑхӑтра утӑ ҫулса пуҫтаратпӑр. Симӗс утӑ лавӗсене турттарма каллех пире лашасем кирлӗ.

Кӗркунне эпир лашасем кӳлсе кӗлте турттаратпӑр. Авӑн ҫапсан хулана тырӑ сутма та лашапах каятпӑр.

Ҫапла, лашасем нумай ӗҫлеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та эпир лашасене юрататпӑр. Лайӑх ҫитеретпӗр. Хӗлле ӑшӑ витесенче усратпӑр.

### Тупмалли юмах.

Тӑваттӑн тӗвеҫҫӗ, пӗри авӑсать. Мӗн вӑл?

# Лаша ĕçĕ.



Çак картинăсем çине пăхса, лаша мĕн ĕçленине *каласа парăр*:

Çак ĕçсенчен хăшне тунине эсир хăвăр курнă?
Çак ĕçсенчен хăшĕсем ялта анчах кирлĕ?
Çак ĕçсенчен хăшне машинăпа тума май çук?

**Тупмалли юмахсемпе ваттисен сăмахĕсем.**

Çуркунне плугра, сӳрере, çулла урапара, хĕлле çунара.

Чунли тарать, чунсăрри хăвалать.

Лашана пушăпа мар, сĕлĕпе хăвала.

Малта иккĕн чупаççĕ, кайра иккĕн хăвалаççĕ, хыççăн мелке сĕтĕрĕнет.

## Сархипе кашкăр.

Кĕр çывхарса килнĕ. Çĕрсем вăрăмланнă, тĕттĕмленсе пынă. Каçсерен çынсем, тихаллă кĕсресене выльăх картине хупса, хапхасене питĕрсе тăнă.

Пĕр каçхине Сархи ятлă çӳрен кĕсре хăй тихипе хире тăрса юлнă. Ялтан аякра мар çӳрет, тихи унтан пĕртте юлмасть.

Çав каç хир тăрăх выçă кашкăр йăртлатса çӳренĕ. Чылай вăхăт апатсăр пурăнса, вăл выçса çитнĕ, шăлĕсене шатăртаттарса чупса çӳренĕ. Сасартăк вăл тиха çинçе сасăпа кĕçеннине илтет.

Кашкăр, чарăнса тăрса, сывлăша шăршлать те Сархипе тиха çӳренĕ çĕрелле чупать.

Майĕпе йăпшăнса пырать кашкăр. Çывхарса çитсен, вăл хăйĕн çивчĕ куçĕсемпе тихан пĕчĕк кĕлеткине курах каять, ăна тытса пăвма шутлать.



Сархи кашкăр шăршине сисрĕ те сасартăк хыттăн кĕçенсе ячĕ. Тихи амăшĕ патне сиккипе чупса пычĕ. Сархи, тиха çумне çыпçăнса, кашкăрне тапмалла çаврăнса тăчĕ. Кашкăр унтан та кунтан тиха патне пыма хăтланать. Сархи яланах ăна тапмалла çаврăнса тăрать.

Шăртланса çитрĕ кашкăр, унăн тихана çисе ярасах килет. Патнех çывхарса пычĕ хайхискер. Сархи ăна шарт! тапса ячĕ. Ыратать кашкăрăн. Вăл Сархи тавра çӳрекелерĕ-çӳрекелерĕ те кунта ĕç тухас çуккине туйса илчĕ. Вара вăрмана каялла чупрĕ.

*А. Бостром.*

## Ĕ н е.

Акă пирĕн ĕне. Вăл пире сĕт парать. Анне ăна кунне виççĕ сăвать. Кашни кун 12 литр сĕт суса илет.



Пирĕн анне сĕтрен хăйма пуçтарать. Хăймине уçласа, уçламçу тăвать. Сĕтренех тата тăпăрч пулать. Тăпăрчран эпир чăкăт тăватпăр.

Ĕне сĕт нумайтарах патăр тесе, эпир ăна лайăх пăхатпăр. Тĕрлĕрен апат çитеретпĕр. Утă паратпăр. Улăм тураса, пăтратса, çăнăх сапса паратпăр. Вырьăх кăшманĕ те, çĕрулми те, силос та паратпăр.

Хĕлле сивĕре шăнса тăрсан, ĕне сĕт сахал парать. Эпир ăна хĕлле ăшă витере усратпăр.

## Сурăхсем.

Пирĕн килте сурăхсем пур. Вĕсен çăмĕ вăрăм, çемçе.

Пирĕн анне сурăхсен çăмне çулталăкра икĕ хутчен илет. Пĕрре — çуркунне, юр кайса пĕтсе, çанталăк ăшăт-

сан; тепре—кĕркунне, çанталăк сивĕтес умĕн. Хĕле кĕриччен сурăхсен çăмĕ каллех ӳсет те, хĕллехи сивĕсем сурăхшăн хăрушă мар.

Сурăх çăмне илсен, ăна машинăпа таптараççĕ те, вăл пушшех çемçелсе каять. Вара анне ăна арласа çип тăвать. Çăм çиппинчен пире алсиш, чăлха çыхса парать, тăла тĕртсе парать. Тăларан сăхман та, пиншак та çĕлеççĕ.



Картинăра мĕн ӳкерсе кăтартни çинчен каласа парăр.

## Сыснасем.

Колхозăн выльăх ферминче мăнтăр сыснасем çӳреççĕ. Нăр-к! нăр-к! туса, вĕсем аран уткалаççĕ.

Хĕллехи сивĕсем сыснасене хăрушă мар. Тирĕ айĕнче вĕсен çу нумай. Çав çу вĕсене сивĕрен сыхласа тăрать. Вăл ăшă кĕрĕк пекех, сивве ямасть.



Пирĕн килте те сыснасем пур. Вĕсене çĕрулми, юлашки яшкасем, çăкăр таткисем, çăнăх

шывĕ паратпăр. Çуллахи кунсенче çуса тасатса тăратпăр.

Сысна пире аш, çу, тир, шăрт парать. Вăл питĕ усăллă выльăх.

## Мĕн вăл?

Шăши тытать.—Мĕн вăл?
Сĕт парать.—Мĕн вăл?
Çăм парать.—Мĕн вăл?
Кил сыхлать.—Мĕн вăл?
Аш, çу, тир, шăрт парать.—Мĕн вăл?

## Автан.



Çатан çинче шур автан
çунат çапса авăтать:
Куккуруккук! Куккуруккук!
Лисук ăна мăшкăлать,
майне тăсса кăшкăрать:
Куккуруккук! Куккуруккук!
Сарайĕнче сар чăххи
сар çăмарта тăвасшăн:
Кăт-кăт-кăт-ктак! Кăт-кăт-кăт-ктак!
Автан ăна илтрĕ те
ыр кăмăллă пуласшăн:
Кăт-кăт-кăт-ктак! Кăт-кăт-кăт-ктак!
Чăххи ларчĕ йăвана,
автан уншăн савăнать.
Куккуруккук! Куккуруккук!

## Тăманапа сарă чăх.

Каçхи кайăк—тăмана
пынă ларнă картана.
Çавра куçне çунтарать,
йĕри-тавра пăхкалать.

Шур чăххине вăл шырать,
каçхи апат тăвас, тет.
— Тĕвик-тĕвик тăмана,
санăн кил-çурт ăçтарах?



— Анкартинче, ӳплере.
— Ҫине-пуҫне мĕн витнĕ?
— Ҫапă сарнă, хуп витнĕ.
— Кăтик-кăтик сар чăххи,
санăн кил-ҫурт ăҫтарах?
— Аслăк айĕнче, тӳпере.
— Ҫине-пуҫне мĕн витнĕ?
— Вĕрлĕк сарнă, чус витнĕ.

Тĕвик-тĕвик тăмани
аслăк енне пăхкалать.
Кăтик-кăтик сар чăххи
струппил хыҫне пытанать.

**Тупмалли юмах.**

Кăнтăрла суккăр, ҫĕрле чĕп-чĕрĕ куҫлă.

## Кролик.

Пирĕн колхозра кроликсем пур. Вĕсене читлĕхсенче усраҫҫĕ. Хăш чухне уҫăлса ҫӳреме килкартине кăлараҫҫĕ.

Кроликсем курăк ҫиеҫҫĕ, утă ҫиеҫҫĕ, пуринчен ытла купăстапа кишĕре юратаҫҫĕ. Ҫĕрулмине те ҫиеҫҫĕ. Анчах вĕсене ҫĕрулмине ҫуса памалла, унсăрăн вĕсен хырăмĕнче хуртсем ĕрчесе кайма пултараҫҫĕ.



Пирĕн колхозри кроликсем пиртен хăрамаççĕ. Эпир вĕсене апат паратпăр. Çурăмĕсенчен ачашласа та пăхатпăр. Вĕсен çăмĕ мамăк пек çемçе. Хăшĕ шурă тĕслĕ, хăшĕ хура, хăмăррисем те пур.

Кролик ашĕ питĕ тутлă.

## Сармантей.

(Халăх юмахĕ.)

Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă, тет. Ăна шăши пынă та хўрипе çапса çĕмĕрнĕ, тет. Сармантейĕ те йĕрет, тет, сарă чăххи те какалать, тет. Хапхи калать, тет: „Манăн та уçăлса хупăнас“,—тет. Анать, тет, пĕр вăкăр шыва куллен-кун. „Хапха, эсĕ мĕншĕн уçăлса хупăнатăн?“—тесе ыйтать, тет. „Уçăлса хупăнмасăр,—тесе калать, тет:—Сармантейĕн сарă чаххи сарă çăмарта тунă, тет, ăна шăши пынă та хўрипе çапса çĕмĕрнĕ,—тет. Сармантейĕ йĕрет, тет, сарă чăххи те какалать“,—тет.

Вăкăр калать: „Эппин манăн та мĕкĕрсе анас пулĕ“,—тет. Мĕкĕрсе анать, тет, шыв хĕррине. Шыв калать, тет: „Мĕншĕн, вăкăр, мĕкĕретĕн?“—тет. „Мĕкĕрмесĕр,—тет.—Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă, тет, ăна шăши пынă та хўрипе çапса çĕмĕрнĕ. Сармантейĕ йĕрет, тет, сарă чăххи те какалать, хапхи те уçăлса хупăнать“,—тет. Шыв калать: „Манăн та хумханас эппин“,—тет.

Пĕр çĕнĕ çын шыв ăсма анать. „Шыв мĕншĕн хумханатăн?“—тет. — „Хумханмасăр, — тет. — Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă, тет, ăна шăши пынă та хўрипе çапса çĕмĕрнĕ. Сармантейĕ те йĕрет, тет, сарă чăххи те какалать, тет, хапхи те уçăлса хупăнать, тет, вăкăрĕ те мĕкĕрет“,—тет. Çĕнĕ çын калать: „Манăн та пĕр витрене çапса çĕмĕрес“,—тет. Çапса çĕмĕрет витрине. Киле таврăнать.

Хуньамăшĕ чуста çăрать, тет. „Кин, мĕншĕн хăрах витрепе анчах ăсса килтĕн?“—тет. „Хăрах витрепе анчах пулмасăр,—тет.—Сармантейĕн сарă чăххи сарă çамарта тунă, тет, ăна шăши пынă та хÿрипе çапса çĕмĕрнĕ, тет. Сармантейĕ те йĕрет, тет, сарă чăххи те какалать, тет, хапхи те уçăлса хупăнать, вăкăрĕ те мĕкĕрет, шыв та хумханать,“—тет.—Хуньамăшĕ калать: „Манăн та чустана кăларса ывăтас эппин“,—тет. Кăларса ывăтать, тет, чустине.

Ывăлĕ кайнă вăрмана. Таврăнать вăрмантан. Ывăлĕ калать: „Мĕншĕн яшка пĕçермерĕр?“—тет. Амăшĕ калать: „Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă, тет, ăна шăши пынă та хÿрипе çапса çĕмĕрнĕ. Сармантейĕ те йĕрет, тет, сарă чăххи те какалать, тет, хапхи те уçăлса хупăнать, тет, вăкăрĕ те мĕкĕрсе анать, тет, шыв та хумханать, тет, çĕнĕ çын та хăрах витрине çапса çĕмĕрнĕ“,—тет.

Ывăлĕ калать: „Манăн та хăрах атта кăларса ывăтас эппин,“—тет. Вăл та кăларса ывăтать, тет. Пĕтрĕ.

### Ваттисен сăмахĕ.

Тет хыççăн кайса, шыва сикнĕ, тет.

## Кашкăр.

Вăрманта та, хирте те чĕрчунсем сивĕрен пытаннă. Шăна-пăван тахçанах пĕтнĕ. Çĕлен-калта тăпра ăшĕнче хытса выртать. Упа хĕл каçма мăн шăтăка кĕрсе выртнă. Арлансем те хăйсен шăтăкĕсенче çывăраççĕ.

Пĕр кашкăр анчах çывăрмасть. Вăл, ниçта кайса кĕреймесĕр, унта-кунта чупкалать. Хырăмĕ выçнипе кунĕн-çĕрĕн апат çинчен шухăшлать. Çĕрле, яла пырса, выльăхсене тапăнать.

Ял çыннисем кашкăртан сыхланаççĕ. Выльăх-чĕрлĕхсене шанчăклă çĕре, ăшă витесене хупаççĕ.



## Мĕн вăл?

Кăвак тĕслĕ, çивĕч шăллă,
сĕм вăрманта пурăнать,
пăру-путек таврашне,
май килсессĕн, вăл пăвать.

## Кашкăр.

Эпĕ кашкăр—кашаман,
выçă чух пит асакан,
хĕлле сурăх çимешкĕн
хӳме урлă каçакан.

Уншăн мана, тытсассăн,
урнă пекех хĕнеççĕ,
тире сӳсе илеççĕ,
сутса укçа тăваççĕ.

*Н. И. Шелепи.*

## Упа.

Кĕркунне упа вăрман чăтлăхне чи шала кĕрсе кайрĕ. Унта вăл пĕр чăрăш айне шăтăк чаврĕ. Шăтăк тĕпне вĕтĕ туратсем сарчĕ. Çиеле çапă витрĕ. Унтан шăтăка кĕрсе выртрĕ.

Хĕл çитрĕ. Пĕтĕм вăрмана юр витсе хучĕ. Çилтăмансем улама тытăнчĕç. Упа шăтăкне те юр витсе лартрĕ. Анчах упа тĕлĕрсе çеç выртать, шăтăкра ăна ăшă.

## Килти выльӑхсемпе тискер кайӑксем.

Йытӑ, тилӗ, кашкӑр, ӗне, лаша, сурӑх, упа, качака, сысна, пакша, кушак, чӗрӗп, мулкач.

Уйӑрммӑн ҫырса илӗр:
*Килти выльӑхсем: ...*
*Тискер кайӑксем: ...*

Сулахай енчи сӑмахсем ҫумне, сылтӑм енчи май килекен сӑмахсене суйласа илсе, ҫырса хурӑр.

Килти выльӑхсен:

| | |
|---|---|
| апат | хуҫи упраса тӑрать |
| пурӑнмалли | хатӗр те тулӑх |
| вӗсене | ӑшӑ витесем пур |

## Мулкачпа чӗрӗп.

(Юптару.)



Шап-шурӑ, яп-яка мулкач чӗрӗпе калать: „Епле санӑн, тӑванӑм, тумтирӳ йӗплӗ-йӗплӗ, илемсӗр!“—тет.

— Тӗрӗс, — хирӗҫ тавӑрать чӗрӗп,—анчах манӑн

йĕппĕмсем мана йытăпа кашкăр шăлĕсенчен хăтараççĕ. Санăн шап-шурă кĕрĕкӳ сана çавăн пекех усă парать-и? – Мулкач, хирĕç чĕнесси вырăнне, йывăррăн сывласа кăна илчĕ.

*К. Ушинский.*

## Чĕрĕп йăви.

Кĕркунне пичче мана хăйпе пĕрле вăрмана кăмпа татма илсе кайрĕ. Вăрмана кĕрсен, эпĕ пĕр юман айĕнчи çулçăсене темскер чаштăртаттарнине илтрĕм. Пĕр вырăнта шăпланса тăтăм та сăнама тытăнтăм. Пăхатăп—нимĕн те курăймастăп. Унччен те пулмарĕ, çавтĕлтен пĕр çĕлĕк пысăкăш çулçă чăмăркки хускалса вырăнтан куçма тытăнчĕ. Вăл часах çывăхри чăтлăх айне кĕрсе çухалчĕ. Эпĕ пичче патне чупса пытăм та, хам мĕн курни çинчен каласа патăм. Унтан пиччепе çав çулçă чăмăрккине шырама тытăнтăмăр. Пĕр чăтлăх йывăç тĕмĕ кутĕнче темĕн чухлĕ çулçă тата утăпа мăк купаланса выртать. Ун айĕнчен çăмха пек чăмăртаннă чĕрĕп йăваланса тухрĕ.

— Э-э,—терĕ пичче,—ку чĕрĕп пулнă иккен. Вăл хĕл каçма хăйне валли ăшă йăва хатĕрлет-мĕн. Ку çулçăсене вăл хăйĕн йĕпписем çине тирĕнтерсе çĕклесе килнĕ. Чĕрĕпсем, çанталăк хĕле çывхарсанах, упа евĕр, хĕл каçиччен çывăрма выртаççĕ,—терĕ.

— Çывăрма выртаççĕ пулсан, вĕсем вара мĕн хĕл иртиччченех нимĕн те çимеççĕ пулĕ?—ыйтрăм эпĕ пиччерен.

— Çимеççĕ. Вĕсем çулла хывнă хăйсен ăшĕнчи çăвĕпе тăранса хĕл каçаççĕ, — ăнлантарса пачĕ мана пичче.

Эпĕ вара чĕрĕпе хĕрхентĕм, ăна çĕлĕк ăшне хутăм та киле илсе таврăнтăм. Манăн чĕрĕп пӳртре, ăшă çерте хĕл каçрĕ. Ăна эпĕ апат çитереттĕм. Вăл хăй те пӳртри шăшисене тытса çиетчĕ.

## Куян тус.

Куй, куй, куян тус!
Кулянмасăр пурăнмасть:
кĕрсе ларма пӳрчĕ çук,
питне шăлма тутри çук.

Куй, куй, куян тус,
кулянмасăр пурăнмасть:
унта-кунта тăшман çеç,
пурăнать вăл вăрттăн çеç.

Йытта-мĕне куртăр çеç—
çула тăрăх çиçет çеç.

## Тилĕ тус.

Эп—тилĕ тус, пит чее,
куна пурте пĕлеççĕ.
Хĕлле мана йĕрпеле
питĕ хытă йĕрлеççĕ.

Пăшалпа та переççĕ,
капкăнсем те лартаççĕ,
йытăсемпе шыраççĕ,
чĕрене хыт çураççĕ.

Çырма-çатра хушшинче
пĕрмай тарса çӳретĕп,
çĕрле вăрттăн-вăрттăн çеç
яла пырса кĕретĕп.

Автан тусăн сассине
пĕтĕм чунтан юратап,
ăна эпĕ хăш чухне
ыйхинчен те вăратап.

Тӳрĕ килсен, чăхха та
каплаттарса каятăп.
Ырă хаклă тирĕмпе
çынсене эп ăшăтап.

*Н. И. Шелепи.*

## Тилĕпе ăсан.

(Халăх юмахĕ.)

Тилĕ вăрманпа чупса пынă чух ăсана курнă. Тилĕ ăсана калать:

— Теренти, Теренти! Эпĕ хулара пултăм.

— Бу-бу-бу! Пулнă тăк пулнă.

— Теренти, Теренти! Эпĕ приказ илтĕм: сирĕн,

ăсансен, йывăç çинче лармалла мар, ешĕл çаран çинче çӳремелле.

— Бу-бу-бу! Çӳрес-тĕк çӳрес пулать.

— Теренти, кам çав çулпала пырать?

— Хресчен.

— Урапа хыçĕнче мĕн чупса пырать вара?

— Пĕчĕк çеç тиха.

— Хӳрине мĕнле тытса пырать вăл?

— Çӳлелле кукăртса.

— Апла пулсан, сывă пул, Теренти! Манăн вăхăт çук, киле васкамалла.



---

Тилĕ ăсана епле улталасшăн пулнă?
Тилĕ мĕнтен хăранă?

## Автан тус.

(Юмах.)

Çӳрет, тет, автан вăрманта. Тач! татăлса анчĕ, тет, пĕр йĕкел автан пуçĕ çине. Автан тара пачĕ, тет, пĕр çулпала.

Ăна хирĕç мулкач пырать.

— Ăçта каян, автан тус?—тет мулкачи.

— Мĕн ăçта каясси, туй пулчĕ те çуй пулчĕ, пуç тăррине йĕтĕр татăлчĕ анчĕ. Çавăнтан таратăп,— тет автанĕ.

— Ман пырас-и?—тет мулкачи.

— Айта, кайăпăр,—тет автанĕ.

Пыраççĕ автанпа мулкач вăрман тăрăх. Тилĕ тĕл пулчĕ кусене.

— Ăçта каятăр, мулкач тус?—ыйтать хайхи тилĕ.

Мулкачи калать:

— Эпĕ пĕлместĕп, автантан ыйт,—тет.

— Ăçта каятăр, автан тус?—тет тилли.

— Мĕн ăçта каясси,—тет автан,— туй пулчĕ те çуй пулчĕ, пуç тăррине йĕтĕр татăлчĕ анчĕ. Çавăнтан таратпăр,—тет.

— Ман пырас-и?—тет тилли.

— Айта!



Пыраççĕ кусем вăрманпа. Тĕл пулчĕ кашкăр.

— Ăçта каятăр, тилĕ тус?—тет кашкăр.

— Эпĕ пĕлместĕп, автантан ыйт,—тет тилли.

— Ăçта каятăр, автан тус?—тет кашкăр.

Автанĕ калать:

— Мĕн ăçта каясси, туй пулчĕ те çуй пулчĕ, пуç тăррине йĕтĕр татăлчĕ анчĕ. Çавăнтан таратпăр,—тет.

— Ман пырас-и?—тет кашкăрĕ.

Лешсем килĕшеççĕ.

Пырать кусене хирĕç упа. Ыйтать ку:

— Ăçта каятăр, кашкăр тус?—тет.

— Эпĕ пĕлместĕп, тилĕрен ыйт,—тет кашкăрĕ.

— Ăçта каятăр, тилĕ тус?—ыйтать упа тилĕрен.

— Эпĕ пĕлместĕп, мулкачран ыйт,—тет тилли.

— Ăçта каятăр, мулкач тус?—ыйтать упа.

— Эпĕ пĕлместĕп, автантан ыйт,—тет мулкачи.

Автанĕ калать:

— Мĕн ăçта каясси, туй пулчĕ те çуй пулчĕ, пуç тăррине йĕтĕр татăлса анчĕ. Çавăнтан таратпăр,—тет.

— Ман пырас-и?—тет упа.

— Айта,—теççĕ лешсем.

Пыраççĕ вăрманпа кусем. Пĕр пӳрт курчĕç те—çĕр каçма кĕчĕç. Автана пусрĕç те çирĕç. Ашĕ юлашки юлчĕ. Каçпа тилĕ тăчĕ те веçех çисе ячĕ. Ирхине тăчĕç те, аш çук. Кам çинине пĕлмерĕç.

— Тавай мулкача пусас,—теççĕ кусем.

Пĕçернĕ чухне мулкачăн пăчăр-пăчăр çу юхать, тет.

— А-а, аша ку çинĕ иккен,—теççĕ.

Аш юлашки юлчĕ. Хайхи тилĕ çĕрле тăчĕ те аша çисе ячĕ. Кашкăр тутине çупа сĕрсе вараларĕ.

Ирхине тăчĕç те:

— Кам çинĕ те кам çинĕ?—теççĕ.

Тилĕ калать:

— Камăн тути çуллă, çав çинĕ,—тет.

Пăхрĕç. Кашкăр тути çуллă. Çавăнпа ăна пусрĕç. Кашкăр ашĕн юлашкине каллех çĕрле тилĕ çисе ячĕ. Вучахне сӳнтерчĕ. Унтан упана вăратрĕ те калать:

— Пирĕн вучах сӳннĕ. Ав çӳлте пирĕн асанне вут чĕртнĕ, илсе ан, — тет, çăлтăр çине кăтартса. Упа юман çине хăпарса кайрĕ.

— Çук-çке,—тет.

— Çӳлерехре,—тет тилĕ. Кĕç упа тач! персе анчĕ. Хырăмĕ çурăлчĕ кайрĕ.

Çав тилĕ халĕ те пулин вăрманта пурăнать, тет.

## Пакша.

Юр ӳкрĕ. Эпир пиччепе вăрмана кайăк тытма кайрăмăр. Унталла-кунталла пăхкаласа, йĕр йĕрлесе пыратпăр. Акă пĕр юман патĕнче мăйăрпа йĕкел хуппи сапаланса выртать.

Пичче мана шăппăн:—Ан шарла, кунта пакша йăви пур. Ав куратăн-и?—тет.

Чăнах та, турат ҫинче пакша ларать. Эпĕ пăхса та юлаймарăм,—пакша, туратран турата сиккелесе, куҫран та ҫухалчĕ. Ҫавăнтах пичче хăвăл юман шыраса тупрĕ. Вăл юман тăррине хăпарса кайрĕ те:



— Эй, мăнтарăн пакши, мĕн-мĕн кăна хатĕрлемен! Ăслă мĕн, хĕл каҫиччен выҫă аптăрас ҫук,—терĕ.

Чăнах та, хăвăл тĕпĕнче тирпейлесе хунă сап-сарă мăйăрĕ те, йĕкелĕ те, типнĕ ҫырли те пур. Пичче пĕр мăйăрне катса пăхрĕ.

Пакша мăйăрне эпĕ те тутанса пăхрăм.

---

Пакша йăвине ăҫта тăвать? Хĕлле вăл мĕн ҫисе пурăнать?

## Кайăксене ан тытăр.

Пĕрре хĕлле эпир шăллăмпа икĕ кăсăя тытрăмăр. Пӳрте илсе кĕтĕмĕр. Ҫитерес тесе кантăр вăрри те паратпăр, ҫăкăр та паратпăр. Кăсăясем сăхса та пăхмаҫҫĕ. Чĕтресе анчах лараҫҫĕ.

Тепĕр кунне, эпĕ шкултан таврăннă ҫĕре, ман шăллăм макăрса ларать.

— Мĕн пулчĕ тата?—тесе ыйтрăм.

— Кă-сă-ясем пĕ-ĕт-рĕҫ!—тесе, тата хытăрах уласа ячĕ шăллăм.



— Епле пӗтрӗҫ?—тетӗп.

— Пӗри ҫунакан кӑмакана вӗҫсе кӗрсе вилнӗ, теприне кушак тытса ҫинӗ,—тет шӑллӑм.

Кӑмӑла пит лайӑх мар пулса кайрӗ. Ман айӑппах пӗтрӗҫ-ҫке кусем, тесе шухӑшлама пуҫларӑм. Вӗҫен кайӑксем пире мӗн чухлӗ усӑ пани ҫинчен шкулта вӗрентнисем аса килчӗҫ. Ӳлӗм нихҫан та усӑллӑ кайӑксене ҫапла тытса пӗтерессӗм ҫук тесе, хама хам сӑмах патӑм.

## Чи-чи кӑсӑя.

— Чи-чи кӑсӑя,
ӑҫта каян, кӑсӑя?
— Кантӑр вӑрри ҫимешкӗн.
— Е хуҫи курсассӑн?
— Тарӑп, хӑпарӑп хыр тӑрне.
— Е хырӑму выҫсассӑн?
— Хыр йӗкелӗ ҫийӗп-ҫке.
— Е пырна ларсассӑн?
— Чавӑп, чавӑп, кӑларӑп.
— Е юну тухсассӑн?
— Шыва кӗрӗп, ҫӑвӑнӑп.
— Е тӗкӳ шӑнсассӑн?
— Вут хурӑп та ӑшӑнӑп.
— Вутту вӑйлӑ кайсассӑн?
— Тапӑп, тапӑп, сӳнтерӗп.
— Е уру хуҫӑлсан?
— Тимӗрҫе кайӑп, сыптарӑп.
— Е тимӗрҫӗ ҫук пулсан?
— Пӑхӑрҫа кайӑп, сыптарӑп.
— Е пӑхӑрҫӑ ҫук пулсан?

— Улатăра кайăп, сыптарăп.
— Е Улатăр çук пулсан?
— Чĕмпĕре кайăп, сыптарăп.
— Е Чĕмпĕр çук пулсан?
— Тап! тап! тапăп та
тапă айне кĕрех кайăп!

## Кушак, автан тата тилĕ.

(Халăх юмахĕ.)



Пуранна, тет, кушакпа автан. Питĕ туслă пулнă, тет, вĕсем. Кушакĕ вăрмана апат шырама çӳренĕ, автанне кил сыхлама хăварнă; алăка уçма та, кантăкран пăхма та хушман—тилĕ тытса каясран хăранă. Акă кушак вăрмана тухса чупрĕ. Тилĕ пӳрт патне йăпшăнса пычĕ те юрлать:

„Куккурукккук, сар автан!
Пурçăн сухал, çуллă пуç.
Пăхсам эсĕ кантăкран:
пăрçа парăп эп сана“.

— Кам кун пек илемлĕ юрлать-ши?— шухăшлать автан. Унăн кантăкран пăхасах килет. Кантăкран пуçне

кăшт кăна кăларчĕ,— ăна тилĕ кап! хыпса илчĕ те вăрманалла вĕçтерчĕ.

Пырать тилĕ, автана çĕклесе, автанĕ çухăрать:

„Тытса кайрĕ тилĕ мана
аякри сĕм вăрмана,
çӳлĕ тусем хыçнелле,
аякри çĕршывсене!
Кушакăм—тăванăм,
Килсе çăлсам эс мана!“

Кушак автан сассине илтрĕ те, тилле хуса çитсе, автана тытса илчĕ, унтан килне илсе таврăнчĕ.— „Асту, автан,—тет кушак,—ыран эпĕ аяккарах каятăп: тилле ан итле, кантăкран ан пăх, сана тилĕ çисе ярĕ, шăммусене те хăвармĕ“.

Кушак тухса чупрĕ. Тилĕ каллех кантăк умне пычĕ те юрлать:

„Куккурууккук, сар автан!
Пурçăн сухал, çуллă пуç.
Пăхсам эсĕ кантăкран.
Пăрçа парăп эп сана,
пĕрчĕсем те парăп эп“.

Автан чылайччен тӳссе ларчĕ. Тилĕ ун валли мĕнле пĕрчĕсем илсе килнине питĕ курас килсен те кантăкран пăхмарĕ. Хайхи тилĕ каллех юрлама тытăнать:

„Куккурукккук, сар автан!
Пурçăн сухал, çуллă пуç.
Ак улпутсем иртрĕç те,
тулла тăкса ячĕç те,
пуçтаракан никам çук“.

Кăна илтсен, тӳсеймерĕ автан: унăн улпутсем тăкса янă тулла питĕ курасси килчĕ. Йалт çеç пăхрĕ вăл кантăкран, ăна тилĕ кап! хыпса илчĕ те вĕçтере пачĕ.

Каллех çухăрать автан:

„Тытса кайрӗ тилӗ мана
аякри сӗм вӑрмана,
ҫӳлӗ тусем хыҫнелле,
пит аякри ҫӗршыва!
Кушакӑм—тӑванӑм,
ҫӑлсам, ҫӑлсам эс мана“.

Кушак аякра пулнӑ, ҫапах та автан сассине кӑшт илтсе юлнӑ. Тилле хуса ҫитрӗ те, автана тытса илсе, килне илсе таврӑнчӗ.—„Асту, автан,—тет кушак,—ыран эпӗ тата аяккарах каятӑп: тилле ан итле эсӗ, кантӑкран ан пӑх, текех кӑшкӑрсан та илтеймӗп“.

Кушак тухса чупрӗ, тилли каллех кантӑк умӗнче юрлама тытӑнчӗ:

„Куккурукккук, сар автан!
Пурҫӑн сухал, ҫуллӑ пуҫ.
Пӑхсам эсӗ кантӑкран:
авӑ Карпсен ҫумӗнче,
пӗр тӑвайкки тӑрринче,
лара парать ҫилҫуна,
вӑл хӑй тӗллӗнех ҫӳрет,
ҫилпе танах ҫиҫтерет“.

Автанӑн ҫилҫуна ҫине пӗр куҫпа та пулин пӑхса илес килет, анчах хӑрать вӑл. „Ҫук, пӑхмастӑп, тилӗ кайсан курӑп-ха“,—тет вӑл хӑй ӑшӗнче. Тилӗ каллех



хăй юррине юрлама пикенчĕ, автанĕ ăна калать: „Çук, текех эсĕ мана улталаймăн“,—тет.—Манăн сана улталаса мĕн усси пур,—тет тилли.—Пăхас тесе̧н, пăхăн, пăхмасан—пăхмăн. Сывпул! Манăн киле васкамалла“,—тет.

Тилĕ кăшт пăрăнчĕ те пӳрт кĕтесси хыçне пытанчĕ. Тилĕ сасси илтĕнмест. Автанăн тилĕ чăнах та кайнипе кайманнине пĕлес килет. Вăл кантăкран йăлт пăхса илчĕ. Тилли ăна кап! хыпрĕ те вĕçтерчĕ.

Автан темĕн пек çухăрсан та, кушак ăна илтеймерĕ: вăл питĕ аякра пулнă.

## Хĕлĕпе çывăракан упа.

(Халăх юмахĕ.)

I.

Çу каçа чапрас ураллă Мишка самăрăлса çитнĕ. Ӳтне хĕл каçмалăхах çу хывнă, йăвине туса хатĕрленĕ те юлашки хут вăрман тăрăх уçăлса çӳреме тухнă.

Утать çăмламас, сулланса çӳрет чапрас упа, типĕ çулçăсене пăтрататать, вĕтлĕхе чăштăртаттарать.

II.

Упана хирĕç кашкăр чупса пырать. Упа ăна чарса ыйтать:

— Ăçталла чупатăн эсĕ, кашкăр тус? Ăçта çав териех васкатăн?

Кашкăрĕ ăна хирĕç:

— Мĕнле васкас мар-ха манăн? Эпĕ çĕрĕпе юртса çӳретĕп, апат шыратăп, хамăн пĕчĕк ачамсене тăрантарас тетĕп,—тет.

— Апла! Начар сана, кашкăра, пурăнма...—килĕшрĕ упа.—Эпĕ акă хĕл каçах шăтăкра выртатăп.

III.

Упа малалла утать, унталла-кунталла сулкаланса пырать, тӳнкатасем, туратсем ҫумне ҫапӑнкаласа пырать. Ӑна хирӗҫ тилӗ тус чупса килет, хӳрине сарса янӑ, ҫӗрелле пӑхать.

Упи ӑна:

— Ӑҫталла эсӗ? Ӑҫта чупатӑн, тилӗ тус? Ӑҫта васкатӑн, кумма?—тет.

Тилли чупнӑ майӑн калать:

— Ах, упа, упа! Мӗнле васкас мар-ха манӑн? Халь ҫеҫ эпӗ хуҫа килхушшине кӗрсе тухрӑм, мана йытӑсем курчӗҫ те вӗрсе ячӗҫ, шӑлӗсене хӑйраҫҫӗ... аран-аран тарса ӳкрӗм...

— Начар-ҫке санӑн пурнӑҫу, кумма,— васкамасӑр калать упа.—Эпӗ акӑ хӗл каҫах выртатӑп.

Тилли чупса кайрӗ, упи малалла утрӗ.

IV.

Пырать вӑл сулкаланса, типӗ ҫулҫа кӑштӑртаттарать, вӗтлӗхсене чӑштӑртаттарать. Вӗтлӗх хушшинчен мулкач сикрӗ тухрӗ те тӳрех упа ури айне лекрӗ.

— Ӑҫталла эсӗ, мулкач тус, чупатӑн? Ӑҫталла, мулкач тус, васкатӑн?



— Ах, упа! Мĕнле васкас мар-ха манăн? Эпĕ çимĕç пахчине купăста чăмласа пăхма, тутлă кишĕре кышласа пăхма чупса кайсаттăм, унта купăстине те, кишĕрне те пуçтарса кайнă.

— Эх, мулкач тус, санăн пурнăçу начар. Эпĕ акă, упа, хĕлĕпех шăтăкра выртатăп, — терĕ ăна упа хĕрхенсе.

Кайрĕ вара упа хăй шăтăкне çывăрма.

---

Çак юмахра хăшĕ чăн, хăшĕ чăн марри?

## Виçĕ упа.

(Вырăс юмахĕ.)

### I.

Пĕр хĕрача вăрмана кайнă пулнă. Вăрманта вăл çĕтсе кайнă та киле таврăнма çул шыраса çÿренĕ, анчах çулне тупайман, вăрманти пĕр пÿрт патне пырса тухнă.



Алăкĕ уçă пулнă; вăл алăкран пăхать те курать — пÿртре никам та çук, вара пÿрте кĕрет. Çак пÿртре виçĕ упа пурăннă. Пĕр упи ашшĕ пулнă, ăна Михайло

Иванович тесе чĕннĕ. Вăл пысăк та çăмламас пулнă. Тепри упа ами пулнă. Вăл кăшт пĕчĕкрех пулнă, ăна Настасья Петровна тесе чĕннĕ. Виççĕмĕшĕ пĕчĕк çеç упа çури пулнă, ăна Мишутка тесе чĕннĕ. Уписем килте пулман, вĕсем вăрмана уçăлса çӳреме кайнă.

II.

Пӳртĕнче икĕ пӳлĕм пулнă: пĕри — апат çимелли, тепри—çывăрмалли пӳлĕм. Хĕрача апат çимелли пӳлĕме кĕнĕ те унта яшка антарнă виçĕ тирĕке курнă. Пĕрремĕш тирĕкĕ, питĕ пысăкки, Михайло Ивановичăн пулнă. Иккĕмĕш тирĕкĕ, пĕчĕкреххи, — Настасья Петровнăн. Виççĕмĕшĕ, сенкер тĕслĕскер, — Мишуткăн пулнă.

Кашни тирĕкĕ çумĕнчех кашăк выртнă: пысăкки, вăтамми тата пĕчĕкки.

Хĕрача чи пысăк кашăкне тытнă та чи пысăк тирĕкрен шӳрпине сыпса пăхнă. Унтан, вăтам кашăкне тытса, вăтам тирĕкрен ăсса сыпнă. Унтан, пĕчĕк кашăкне тытса, сенкер тирĕкрен сыпса пăхнă. Мишуткăн шӳрпи ăна пуринчен ытларах кăмăла кайнă.

Хĕрачан ларасси килнĕ. Пăхать—сĕтел умĕнче виçĕ пукан ларăççĕ: пĕри, пысăкки,—Михайло Ивановичăн



тепри, пĕчĕкреххи,—Настасья Петровнăн, виççĕмĕшĕ, чи пĕчĕкки, çине сенкер минтер хунăскер,—Мишуткăн. Вăл пысăк пуканĕ çине ларма тăчĕ те ӳкрĕ. Унтан вăтамми çине ларчĕ, анчах унта ларма майлă мар. Вара пĕчĕк пуканĕ çине ларчĕ те кулса ячĕ—ларма пит лайăх пулнă. Вăл сенкер тирĕкне чĕрçи çине илнĕ те çиме тытăннă.

Шӳрпине пĕтĕмпех сыпса янă та пукан çинче сулланма тытăннă.

Пуканĕ çĕмĕрĕлсе кайнă та, вăл çĕре ӳкнĕ. Хĕрача тăнă, пуканне тăратса лартнă та тепĕр пӳлĕме кайнă. Унта виçĕ кровать пулнă: пĕри, пысăкки,—Михайло Ивановичăн, тепри, вăтамми,—Настасья Петровнăн, виççĕмĕшĕ, пĕчĕкки,—Мишуткăн. Хĕрача пысăкки çине выртса пăхнă—вăл ытла аслă пулнă; вăтамми çине выртса пăхнă—вăл ытла çӳлĕ пулнă; пĕчĕкки çине выртнă—ку ăна шăпах пулнă та, вăл çывăрса кайнă.

III.

Уписем килне выçса таврăннă та апат çиме шутланă. Пысăк упи хăй тирĕкне тытса пăхнă та хăрушă сасăпа:

— Кам ман тирĕкрен сыпса пăхнă?—тесе мĕкĕрсе янă.

Настасья Петровна хăй тирĕкне пăхса илнĕ те ытла хытах мар сасăпа:

— Кам ман тирĕкрен сыпса пăхнă?—тенĕ.

Мишутки хăй тирĕкĕ пушшине курнă та çинçе сассипе йынăшса янă:

— Кам ман тирĕкрен сыпса, пĕтĕмпех çисе янă?

Михайло Иванович хăй пуканĕ çине пăхса илнĕ те хăрушă сасăпа мĕкĕрсе янă:

— Кам ман пукан çине ларса пăхнă?

Настасья Петровна хăй пуканĕ çине пăхса илнĕ те хулăнах мар сасăпа мĕкĕрсе янă:

— Кам ман пукан çине ларса пăхнă?

Мишутки хăйĕн çĕмрĕк пуканĕ çине пăхса илнĕ те çухăрса янă:

— Кам ман пукан çине ларса, ăна çĕмĕрсе пăрахнă?

Упасем тепĕр пӳлĕме пынă.

— Кам ман вырăн çине выртса пăхнă?—хăрушă сасăпа мĕкĕрсе янă Михайло Иванович.

— Кам ман вырăн çине выртса пăхнă? — хулăнах мар сасăпа кăшкăрса янă Настасья Петровна.



Мишутки, тенкел лартса, хăй кроватĕ çине улăхма тăнă та çинçе сассипе çухăрса янă:

— Кам ман вырăн çине выртнă?

Сасартăк вăл хĕрачана курах кайнă та, хăйне пусма тытăннă пек, çухăрса янă:

— Акă вăл! Акă вăл! Тыт! Тыт! Акă вăл! Ай, ай-ай! Тыт!

Вăл ăна çыртса илесшĕн пулнă. Хĕрача куçне уçнă та, упасене курса, чӳрече патнелле вăркăннă. Чӳречи уçă пулнă, вăл чӳречерен тăрст! сикнĕ те тарса ӳкнĕ. Упасем ăна тытайман.

*Л. Толстой.*

## Тилĕ юри вилнĕ пек пулса выртнă.



*Каласа парăр*: Çака ăçта пулса иртнĕ?
Уçланкăра мĕн пулса иртет?
Ула кураксем мĕншĕн тилĕ патне пынă?
Мĕн пирки вĕсем хăюлланса кайнă?
Тилли мĕн тунă?
Ытти ула кураксем ăçта çухалнă?

## Шăшин тусĕпе тăшманĕ.

Шăши çури уçăлма тухнă пулнă. Килхушшинче çӳренĕ-çӳренĕ те каллех амăшĕ патне таврăнса пынă. „Ну, анне, эпĕ икĕ тискер кайăк куртăм. Пĕри пит хăрушăскер, тепри—йăваш". Амăшĕ калать: „Кала-ха, мĕнле тискер кайăксем вĕсем?" Шăши çури калать: „Пĕри хăрушăскер, килхушшинче ак çапла çӳрет: урисем унăн хура, кикирикки хĕрлĕ, куçĕ сиксе тухас пек, сăмси çекĕл пек. Эпĕ ун çуммипе иртсе пынă чухне, вăл çăварне карчĕ, урине çĕклерĕ те çав тери хытă кăшкăрма тытăнчĕ, эпĕ хăранипе ниçта кайса кĕме пĕлмерĕм",—тет.—„Ку автан,—терĕ ватă шăши.—Вăл никама та сиен кӳмест, унтан ан хăра. Ну, тепри мĕнлескер?"—„Тепри хĕвел питтинче ăшăнса выртатчĕ. Мăйĕ унăн шурă, урисем сăрă, яка, хăй шурă кăкăрне çуласа выртать, хӳрине кăшт çеç пăлтăртаттарать, ман çинелле пăхать". Ватă шăши калать: „Тăмсай эсĕ, тăмсай! Ку шăпах кушак аçи вĕт",—тет.

# Тилĕпе тăрна.

(Халăх юмахĕ.)

Тилĕ тăрнапа туслашнă та ăна хăй патне хăнана чĕнет: „Пырсам, тусăм, пырсам, чунăм! Пит селĕм пăхса ярăп сана!“

Хайхи тăрна тилĕ патне хăнана пычĕ; тилли пăтă пĕçернĕ, тирĕк çине çӳхен сĕрсе хунă та тăрнана сĕнет: „Çисем, тусăм, çисем, кăвакарчăнăм! Хам пĕçернĕ“.

Тăрна сăмсипе тирĕке так-так! таккать. Таккарĕ-таккарĕ—çăварне нимĕн те лекмест. Тилли пăтта çулать



те çулать, пĕтĕм пăтта хăех çисе ячĕ. Пăтта çисе ярсан, тилли калать: „Ан ятласа кай, тусăм, урăх хăналамалли нимĕн те çук“,—тет.

— Тавтапуç, тусăм, куншăн та, — хирĕç тавăрчĕ тăрни,—ыран ман патăма пыр.

Тепĕр кунне тилĕ тăрна патне хăнана пырать; тăрни турам тураса хатĕрленĕ, ăна çинçе мăйлă кăкшăм çине ярса хунă та çиме чĕнет: „Çисем, кумма, çисем, чунăм. Урăх нимĕнпе те хăналамалли çук“,—тет.

Тилĕ кăкшăм тавра явăнса çӳрет: унтан та пырса пăхать, кунтан та пырса пăхать, кăкшăмне çуласа та илет, шăршласа та пăхать—анчах апатне ниепле те



çиеймест. Тăрни хăйĕн вăрăм урисем çине тăнă та вăрăм сăмсипе кăкшăмран турам хыççăн турам сăхса çиет: сăхрĕ, сăхрĕ те пĕтĕмпех çисе ячĕ. „Ан ятласа кай, кумма, урăх хăналамалли нимĕн те çук“,—тет.

Тилĕ хăнаран выçă хырăмпах таврăнчĕ. Çакăнтан вара унăн тăрнапа туслă пурăнасси пĕтрĕ те.

### Ваттисен сăмахĕ.

Çăкăр-тăвар хире-хирĕç теççĕ.

## Шăшипе йĕкехӳре.

Йĕкехӳре патне шăши васкаса чупса пынă та: „Кӳршĕм, эсĕ ырă хыпар илтрĕн-и? Кушак арăслан чĕрнине лекнĕ, теççĕ вĕт. Ĕнтĕ тинех пире канма вăхăт çитрĕ!“—тет. Йĕкехӳре ăна хирĕç калать: „Эй, тусăм, малтанах ан савăн-ха, кирлĕ мара ан шан! Чĕрне вĕçне ĕç юлсан, арăслан чĕррĕн юлас çук, мĕншĕн тесен кушакран вăйлă тискер кайăк çук!“—тет. Çавăнпа та каланă: „Камран кам хăрать, çавă уншăн пуринчен те вăйлă,“—тенĕ.

*И. А. Крылов.*

### Ваттисен сăмахĕ.

Шăшишĕн кушак та тискер кайăк.



# Ҫуркунне



## Ҫурхи сасăсем.

Хурăнсем ҫарах пулнă-ха. Шăнкăрч йăвисем ҫинче юр выртнă. Ҫара туратсем, ҫилпе сулкаланса, пĕр-пĕрин ҫумне пыра-пыра ҫапăннă. Туратсем ҫинчи папкасем пĕчĕккĕ те типĕскерсем пулнă. Анчах вĕсен ӳсесси килнĕ.

— Юрать-и?—ыйтнă пĕр папки тепринчен.

— Юрамасть,—тенĕ лешĕ.—Юр кайман-ха, сывлăш сивĕ.

— Хăҫан юрать вара?

Папки туратпа пĕрле сулкаланса илнĕ те: „Ҫил каласа парĕ“,—тенĕ.

Ҫĕр ҫинче юр ҫаплах выртнă-ха, сывлăш сивĕ тăнă. Юр айĕнчи тăпра ăшĕнче икĕ пĕрчĕ юнашар выртнă. Иккĕшĕ те типĕ, сивĕ пулнă, анчах вĕсен те ӳсесси килнĕ.

— Юрать-и?—ыйтнă пĕр пĕрчи тепринчен.

— Юрамасть,—тенĕ лешĕ.—Ҫĕр ăшăнман-ха, пирĕн ҫире тĕттĕм.

— Хăҫан юрать вара?

Пĕрчĕ кăшт итлесе тăнă та: „Шыв каласа парĕ“,—тенĕ.

Çĕр шăнсах тăнă-ха, шыва пăр хупласа выртнă— хулăм та кăвакскер. Пулăсем йăлмака ăшĕнче тĕлĕрсе выртнă. Анчах вĕсен шыв çине ишсе хăпарас килнĕ, выляс килнĕ. Вĕсен ӳпре-шăнасене, ăмансене тытса çиесси килнĕ.

— Юрать-и?—ыйтнă пĕр пулли тепринчен.

— Юрамасть,—тенĕ лешĕ.—Шыв халĕ питĕ сивĕ-ха, çӳлте те шăпах.

— Хăçан юрать вара?

Пулли кăшт итлесе тăнă та: „Пăр каласа парĕ“,— тенĕ.

Çапла пурте кĕтсе тăнă: папкасем те, пĕрчĕсем те, пулăсем те çуркуннене кĕтнĕ.

Юлашкинчен çак кĕтнĕ кун çитнĕ: ăшă, çутă хĕвел тухнă та йăл кулса янă. Аякри çĕршывсенчен шăнкăрчсем таврăннă, юрла-юрла хăйсен йăвисене çавăрма тытăннă.

— Сисетĕн-и?—тенĕ хурăн папки.—Епле ăшă çил вĕрет! Ӳсме юрать ĕнтĕ.

— Илтетĕн-и?—тенĕ тырă пĕрчи.—Çурхи шыв кĕрлет. Ӳсме юрать ĕнтĕ.

Шывсем тăрăх пысăк кăвак пăрсем юхма тытăннă. Вĕсем, пĕрне-пĕри пыра-пыра çапăнса, шатăртатнă:

— Юр-р-рать! Юр-р-рать!

## Çуркунне пулать.

Йăл-йăл пăхать сар хĕвел:
кунран кунах ăшăтать.
Сисмесĕрех сивĕ хĕл
çур ăшшине парăнать.
Пур çĕрте те шурă юр
хĕвелпеле пусăрнать.

Пĕчĕккĕнех çуна çулĕ
навусланать, хуралать.
Ял хĕрринчи Митраппан
сарай çинчен юр тăкать.
Пĕчĕк ача сар Иван
шăхлич калать, савăнать.



---

*Сӑнаса пӑхӑр*. Юр хӗллехи пекех-и? Ҫурт ҫийӗсен хӗррисенче мӗнсем пур? Йывӑҫ папкисем мӗнле улшӑнса пыраҫҫӗ? Мӗнле кайӑк хӑҫан килет? Выльӑх-чӗрлӗхсен ҫӑмӗсем мӗнле улшӑнаҫҫӗ?

## Папкасем сарӑлни.

Тулта юр кайса пӗтмен-ха. Пӳрт тӑрринчи юр ирӗлсе, кӑп-кӑп тумла юхать. Ачасем пахчана тухрӗҫ. Йывӑҫсем ҫара, хура тӗслӗ курӑнса лараҫҫӗ. Тураттисем пур еннелле те кӑнтарса тӑраҫҫӗ, вӗсем ҫинче пӗр ҫулҫӑ та ҫук.

Юр ҫийӗпе аша-аша, ачасем тополь йывӑҫҫи патне пычӗҫ те унӑн турачӗсене сӑнаса пӑхма тытӑнчӗҫ. Вӗсем туратсем ҫинче темле мӑкӑльсем курчӗҫ.

— Акӑ пӑхӑр, ку — папкасем, — терӗ Кӗркури.

Верукпа Мӗтри шултра папкаллӑ пилӗк турат касса илчӗҫ те класа илсе пычӗҫ. Тӑм чӳлмек ҫине шыв



тултарса, ăна чӳрече ани çине лартрĕç, шыв ăшне тополь турачĕсене вырнаçтарчĕç. Ик-виçĕ кунта пĕрре шыва улăштарса тăма килĕшрĕç. Темиçе кун иртрĕ. Папкасем сарăлма тытăнчĕç, тутлă шăршă сарăлчĕ. Акă, вăхăчĕ çитнĕ майăн, папка хупписем хăпănса ӳкрĕç, вĕсем айĕнчен сухăрлă ешĕл çулçăсем тухрĕç.

## Пуш уйăхĕн вĕçĕнче.

Пуш уйăхĕн вĕçĕнче
хĕвел пăхрĕ ăшăтса.
Силпи чăваш ялĕнче
юр ирĕлчĕ васкаса.
Тусем, сăртсем хуп-хура,
юрĕ кайса пĕтнĕрен.
Тухать курăк çăп-çăра,
хĕвел хытă хĕртнĕрен.
Сивĕ, хаяр хĕл иртет,
каять йĕрсе, хурланса.

Сивĕ куççульпе йĕрет,
иртнĕ куншăн хуйхăрса.
Путăксемпе, варсемпе
çĕмĕрĕлсе шыв кĕрлет.
Анчах, мĕнле йĕрсен те,
хĕвел хĕртнĕçем хĕртет.
Хĕл куççулĕ шавласа
юхса кайрĕ çырмара.
Ачи-пăчи выляса
чупса çӳрет урамра.

*К. Иванов.*

## Тумтир улшăнать.

Çанталăк ăшăтрĕ. Хĕллехи хаяр сивĕсем иртсе кайрĕç. Вĕсем халь часах таврăнас çук.

Ĕнтĕ выльăхсене вăрăм çăм кирлĕ мар. Вĕсем хăйсен хĕллехи çăмне тăкма пуçларĕç. Тасалса, якалса кайрĕç. Мулкач хĕлле шап-шурă çӳретчĕ, халĕ вăл тĕксĕмленме тытăнчĕ. Хĕлле юр çинче çӳреме ăна шурă тĕс кирлĕ пулнă. Çуркуннепе çу кунĕсенче шурă тĕс аякранах палăрать. Тĕксĕм тĕс мулкача тĕрлĕ тискер кайăксенчен те, этемрен те сыхлать.

Этеме те текех кĕрĕксем, тăлăпсем кирлĕ мар. Çăматăсене те хывма вăхăт çитрĕ. Сăран атă е пушмак тăхăнмалла. Кĕрĕксене хыватпăр, сăхман-пиншак тăхăнатпăр. Ăшă çĕлĕк кирлĕ мар. Тавай пире картуз пар.

---

Мулкача хĕлле шурă тĕс мĕн тума кирлĕ?
Сунарçăсем хĕлле мĕншĕн шура тумтир тăхăнаççĕ?

## Миша шыв арманĕ туни.

Çуркунне пулчĕ. Урамсем тăрăх шыв шавласа юхать. Ачасем шыв юхнă çĕрте выляççĕ. Вĕсем шыв тăрăх кимĕсем яраççĕ, пĕве пĕвелеççĕ. Миша та ĕçлет. Вăл шыв арманĕ тăвасшăн тăрăшса çӳрет. Амăшĕнчен пушă туплашка илчĕ. Туплашкана тăвату тĕлтен шăтарчĕ. Çав шăтăксене пĕчĕк çеç хăйă таткисем чикрĕ. Туплашка витĕр патак тирсе, ăна икĕ пĕчĕк юпа хушшине вырнаçтарса лартрĕ. Мишан шыв арманĕ пулса та тăчĕ.

Шыв юхать, вăл Миша арманне хăвăрт çавăрать. Миша хавасланнă, вăл юлташĕсене арман çаврăннине курма чĕнет.

**Тупмалли юмах.**

Сăмсасăр кăвакал пăр шăтарать.

# Тăван çĕршыва.

I.

Çуркунне çитсе килет.

Часах ак пирĕн пата вĕçен кайăксем вĕçсе килĕç.



Вĕçсе килĕç те янăраса, шăхăрса, хавас юрăсем юрлĕç, йăвасем çавăрĕç, чĕпĕсем кăларĕç.

Пуринчен малтан хура кураксене кĕтĕр, вĕсем хыççăн тăрисемпе шăнкăрчсене. Ку кайăксем çуркунне çитни çинчен пире никамран малтан пĕлтереççĕ. Эпир вĕсене хапăл туса кĕтсе илетпĕр.

II.

Шăнкăрчсем валли малтанах кивĕ йăвасене юсаса хатĕрлемелле, çĕннисене туса йывăççем çине, пӳртсен хӳттине çакса хумалла.

Шăнкăрчсем тата ытти вĕçен кайăксем питĕ усăллă, вĕсем сиенлĕ хурт-кăпшанкăсене пĕтереççĕ.

Вĕçен кайăксем хурт-кăпшанкăсене пĕтерсе пыман пулсан, пирĕн çимĕç пахчисем, йывăç пахчисем, тырă пуссисем пĕтнĕ пулĕччĕç.

Вĕçен кайăксем—пирĕн туссем.



Ҫ ы р ӑ р: „Пирӗн ҫурхи хӑнасем“, аялта панӑ сӑмахсенчен кирлисене анчах *суйласа илӗр.*

Ҫ ы р н ӑ  ч у х н е  к и р л ӗ  с ӑ м а х с е м: чӗкеҫсем, уйӑпсем, тӑрисем, кайӑкхурсем, шӑнкӑрчсем, ула кураксем, чавкасем, шӑпчӑксем, кӑсӑясем, хура кураксем, ҫерҫисем, тӑрнасем, куккуксем, улатаккасем, пӑрчкансем.

## Шӑнкӑрч.

Пур кайӑкран маларах
килтӗм вӗҫсе, васкаса,
ывӑннине пӗлмесӗр,
юрла-юрла, савӑнса.
Ҫурт тӑррине лартӑм та
янӑратрӑм юррӑма.

Савӑнтартӑм, култартӑм
ачасене сӑввӑмпа.
Шӑпӑрт ҫеҫ хам йӑвана
кӗре-кӗре тухатӑп.
Ӑшӑ вырӑн тумашкӑн
тӗксем, ҫӑмсем пухатӑп.

*Н. Шелепи.*

# Тăри юрри.

Çететтин, çететтин,
çитрĕм, çитрĕм ĕнтĕ тин...
Çететтин, çететтин,
çитес çĕре çитрĕм тин...

Çак çĕршыва аса илтĕм,
хăвăрт вĕçсе эп килтĕм:
пин çухрăмсем ярăнтăм,
тем те курса савăнтăм.

*С. Элкер.*

















Çак вĕçен кайăксенчен хăшĕсем кĕркунне ăшă çĕршывсене вĕçсе каяççĕ?

Хăшĕсем хĕле пирĕн патăмăрта  ирттереççĕ?

**Тупмалли юмах.**

Пуртăсăр, алăсăр хăйне валли çурт тăвать.

## Кайнипе таврӑнни.



Ачасем ӑҫта каяҫҫӗ?
Вӗсем ҫул ҫинче мӗне тӗл пулнӑ?
Васан урлӑ вӗсем мӗнле каҫаҫҫӗ.



Ачасем ӑҫтан таврӑнаҫҫӗ?
Ҫул мӗнле улшӑннӑ?

Ачасене шыв урлă каçма кам пулăшать?
Вăл ачасене шыв урлă мĕнле каçарать?



## Пăр кайни.

Пирĕн ял хĕррипе Çавал шывĕ юхса выртать. Хĕлле çав шыв çинче пăр шăнса ларать. Эпир пăр çинче конькипе ярăнса савăнатпăр. Çуркунне вара кашни кунах çырма хĕррине кайса пăхатпăр, пăр каяссине кĕтетпĕр.

Акă хирсенчен, вăрмансенчен шыв анса çырмари пăра хăпартрĕ. Пăр кайнине курас тесе, кашни кунах Çавал хĕррине чупатпăр. Пĕр ăшă кун, кăнтăрла иртсен, пăр, çĕмĕрĕлсе, хуллен анаталла шăва пуçларĕ. Каç еннелле пăр тапранса та кайрĕ. Эпир, ачасем, ялĕпех шыв хĕррине пуçтарăнтăмăр.

Пăр татăкĕсем юхаççĕ, пĕрне пĕри хăвалаççĕ. Шарт! туса каталаççĕ.

Кĕпер тĕлĕнче пăр капланма пуçларĕ. Ниепле те кĕпер айĕнчен тухса каяймасть. Кĕпер шăтăртатма тытăнчĕ. Çав вăхăтра çынсем пакурсемпе, кĕреçесемпе,

шалчасемпе чупса çитрĕç. Пăра ката-ката, кĕпер айнелле тĕрткелесе ячĕç. Кĕпере çĕмĕрме памарĕç.

---

Пăр кайнине курни çинчен каласа парăр.

Аялта çырнине вуласа тухăр. Мĕн хыççăн мĕн пулнине йĕркипе *çырса тухăр.*

Шыв тулса çырансенчен тухрĕ.
Пирвайхи пăрахут иртсе кайрĕ.
Пăр хăпарса хуралса кайрĕ.
Пирвайхи сулăсем иртсе кайрĕç.
Пăр çĕмĕрĕлсе вакланма тытăнчĕ.
Пăр кайса пĕтрĕ.

## Йывăçсен уявĕ.

Çуркунне çитрĕ. Шăнасем, эрешменсем тата ытти хурт-кăпшанкăсем, чĕрчунсем вăранчĕç. Вĕçен кайăксем чĕвĕлтетеççĕ, юрлаççĕ, йăва çавăраççĕ.

Йывăççемшĕн те праçник çитрĕ. Вĕсем уяв тумĕ тăхăнаççĕ. Акă ăвăс ларать. Унăн çулçисем çукха, анчах вăрăм сарă кăчкисем илемлĕн çакăнса тăраççĕ. Шĕшкĕ йывăççи те кăчкă кăларчĕ.

Каярахпа хурăн, каврăç, юман кăчкăсем, çулçăсем кăларчĕç. Йăмра та кăчкă кăларчĕ.

Мĕне кирлĕ-ха кăчкă?

Кăчкăсем вĕсем—йывăççен чечекĕсем.

## Çуркунне çитрĕ.

Килчĕ ырă çуркунне,
килчĕ, ячĕ ăшăтса.
Хĕвел сават тĕнчене,
хĕл ыйхинчен вăратса.
Тĕттĕм вăрман чĕрĕлет,
ешĕл тумтир тăхăнать.
Çеçенхир те ешерет,
илемĕпе мухтанать.

Тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексен
ырă шăрши сарăлать.
Пур çĕрте те кайăксен
лайăх юрри янăрать.
Çӳлте, пĕлĕт айĕнче,
тăри юрри илтĕнет.
Çемçе курăк çийĕнче
путек-сурăх сиккелет.

# Улмуççи.



Улмуççи хĕлле çап-çара.



Улмуççи кĕркунне улмисене аран çĕклесе ларать.



Ыйту выранне кирлĕ сăмах кĕртсе çырăр:

Улмуççи (хăçан?) улмисене аран çĕклесе ларать.

Улмуççин улмисем (хăçан?) сип-симĕс.

Улмуççи (хăçан?) илемлĕ шап-шурă чечексемпе витĕнет.

Улмуççи (хăçан?) çап-çара ларать.

Сирĕн пахчасенче мĕнле çимĕç йывăççисем пур?

Картинка çине пăхса, колхозниксем панулмине епле татса пуçтарни çинчен каласа парăр.

## Пахчаçăпа ывăлĕсем.

(Юптару.)

Пахчаçă хăйĕн ывăлĕсене сад ĕçне вĕрентесшĕн пулнă. Вилес умĕн вăл ывăлĕсене чĕннĕ те çапла каланă: „Акă, ачамсем, эпĕ вилсен, эсир иçĕм çырли пахчине мĕн пытарса хунине шыраса пăхăр", —тенĕ.

Ачисем, унта укçа пытарса хунă пулĕ тесе, ашшĕ вилсен пахчари çĕре пĕтĕмпе чавса тухнă. Укçа тавраш тупайман вĕсем, анчах пахчари çĕре çав тери лайăх чавса тухнă пирки иçĕм çырли нумай ытларах пулма тытăннă.

*Л. Толстой.*

---

Пахчара çимĕç йывăççисене мĕнле упраса тăмалли çинчен каласа парăр.

## Вăрмана шыв илни.

Мулкач пĕрре çакăн пек инкеке лекнĕ.

Вăл анлă юханшыв варринчи утрав çинче пурăннă.

Çуркунне шыв çинчи пăр çуркаланма пуçланă.

Çав кунне мулкач пĕр йывăç тĕмĕ айĕнче лăпкăн çывăрнă.

Хĕвел ăна ăшăтнă. Мулкач шыв хăпарма пуçланине туймасăрах çывăрнă. Вăл хăй айне шыв кĕре пуçласан çеç вăраннă.

Сиксе тăнă—анчах ун тавра пур çĕре те шыв илме пуçланă.

Çурхи шыв кайма тытăннă. Мулкач утрав варрине тапса сикнĕ: унта типĕ вырăн юлнă пулнă.



Анчах шыв çаплах хăпарса пынă. Утрав пĕчĕкленсех пынă. Мулкач хăранипе утравăн пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне сике-сике ÿкнĕ.

Çапла пĕр кун иртнĕ, çĕр те иртсе кайнă.

Тепĕр ирччен утравăн шыв илменни пĕчĕк татăк çеç тăрса юлнă. Унта пĕр кукăр-макăр йывăç ларнă. Мулкач йывăç тавра чупкаланă.

Виççĕмĕш кунне шыв йывăç патнех çитнĕ. Мулкач, йывăç çине улăхасшăн сике-сике пăхнă, анчах кашнинчех шыва татăла-татăла ÿкнĕ.

Юлашкинчен вăл чи аялти пысăк турат çине сиксе ларнă. Ун çине вырнаçса, вăл шыв чакассине тÿсĕмлĕн кĕтме тытăннă. Шыв урăх хăпарса пыман.

Выçă вилессинчен вăл хăраман: ватă йывăç хуппи, питĕ хытă та йÿçĕ пулин те, çиме юрăхлă пулнă.

Çил йывăçа суллантарса тăнă, мулкач турат çинче аран-аран тытăнкаласа ларнă.

Ун айĕпе анлă юханшыв тăрăх йывăççем, пĕренесем, туратсем, турпассем, улăм çÿпписем ишсе пынă.

Йывăç çинче мулкач виçĕ кун хушши ларса ирттернĕ. Юлашкинчен шыв чакса кайнă та, мулкач çĕре сиксе аннă.

*В. Бианки.*

---

Шыв илме пуçланă кун мулкач мĕн тунă?
Иккĕмĕш кунне мĕн тунă?
Виççĕмĕш кунне мĕн тунă?
Шыв илнĕ вăхăтра мулкач мĕн çисе пурăннă?

## Ака çинче.

Вăшăлтатать ăшă çил—
юлашки юр ирĕлет—
хĕвел панă çĕнĕ пил
çĕре-шыва чун кĕртет.

Таса уйра—ял тавра
этем сасси ĕрлешет,
халăх унта аякра
тырă акать, сÿрелет.

Лере-лере, аякра,
хура вăрман вăранать;
ял çумĕнчи улăхра
хурăн кати тумланать.

Килсе çитрĕç кайăксем
ăшă енчен, инçетрен,
юрра яраççĕ вĕсем
хăйсем сывă çитнĕрен.

Ватă йăмра сарăлса
урам туллин ешерет.
Вĕлле хурчĕ, пыл пухса,
ун тăрринче сĕрлешет.

Симĕс вăрман хушшинчен
куккук сасси илтĕнет.
Улăх тăрăх çеремрен
кĕтÿ шавĕ çĕкленет.

*С. Элкер.*

## Ĕнепе чавка.

Килхушшинче хĕрлĕ ĕне тăрать. Вăл типĕ утă çисе тăрать. Ун çурăмĕ çинче чавка ларнă та çурăмĕнчен сăхать те сăхать.

Ĕнене ыраттармасть-ши вăл?

Çук, ыраттармасть.

Вăл лăпкăн симĕс утта çиет, чавка ăна сăхать те сăхать.

Мĕн тума сăхать-ха чавка?

Акă мĕншĕн. Халь çуркунне. Ĕнесем кивĕ çăмне (юпахне) тăкаççĕ, ун вырăнне вĕсен çĕнни шăтса тухать. Чавкасем çуркунне йăва çавăраççĕ. Вĕсене йăва çавăрма, çăмартасене ăшă йăвара усрама çăм кирлĕ. Çавăнпа ĕнтĕ чавка ĕнен кивĕ çăмне сăмсипе тăпăлтарать. Чавкана та усси пур, ĕнене те канлĕ: çав вăхăтра ĕнен çан-çурăмĕ кĕçĕтсе тăрать, вăл картасем çумĕнче хышаланать, кивĕ çăмне часрах тăкасшăн.

Акă чавка вĕçсе кайрĕ. Сăмсипе вăл ĕне çăмне йăтса пырать. Вăл çăма йăвине хурать. Çăм çинче çăмартасене ăшă пулать.

Чавка чĕпписем тухсан та, вĕсене çăм çинче ларма ăшă пулĕ.

## Ăслă чавка.

Чавкан ĕçесси килнĕ. Карташĕнче шывпа пĕр кăкшăм ларнă, анчах кăкшăмĕнче шывĕ тĕпĕнче çеç пулнă. Чавкан сăмси шыв патне çитеймен.

Чавка кăкшăма чулсем пăрахма тытăннă, пăрахсан-пăрахсан, кăкшăмри шыв çӳлелле хăпарнă та, чавка шыв ĕçме пултарнă.

## Тăри юрри.

Колхозниксем акара.
Эпĕ вĕсен тĕлĕнче
ташла-ташла юрлатăп,
çунат сарса ташлатăп.

Чăрăлтатать çут тĕнче!
Çу шăраннă еврĕлĕ
шăрантарап сăввăма,
савăнтарап сассăмпа.

*Н. Шелепи.*

# Чĕкеç.

Вĕçĕ-хĕррисĕр
тинĕссем урлă,
çиçĕм çиçнĕ пек,
вĕçсе килтĕм эп.
Эпĕ вĕçнине
сывлăш та сисмест,
хамăн çиййĕмри
тĕкĕм те сикмест.
Ăнсăртран пÿрте
вĕçсе кĕрсессĕн,
манăн пуçăма
сар çу сĕреççĕ:
„Çăвару—çу сан,
туту—пыл",—теççĕ.
Манăн сăввăма,
сăн-сăпатăма
колхоз ачисем
тем пек саваççĕ.

*Н. Шелепи.*

### Тупмалли юмах.

Пĕчĕкçеççĕ питлĕ-куçлă,
ереветлĕ, теветлĕ,
хÿри вĕçне туй килнĕ,
Якат Петĕр пăчăнтăр!

# Хĕвелпе асамат кĕперĕ.

(Юптару.)

Пĕрре çумăр хыççăн хĕвел пăхрĕ те, пĕлĕт çинче çичĕ тĕслĕ асамат кĕперĕ пулса тăчĕ. Асамат кĕперĕ çине кам пăхать, пурте ун илемне курса савăнаççĕ. Асамат кĕперĕ мăнкăмăлланса кайнă та мухтанма, хăйне, эпĕ хĕвелтен те илемлĕрех, теме пуçланă.

Çав сăмахсене хĕвел илтнĕ те калать: „Эсĕ чăн та илемлĕ, анчах мансăр пуçне асамат кĕперĕ те пулма пултараймасть вĕт-ха",—тет. Асамат кĕперĕ кулать анчах, пушшех мухтанма пуçларĕ. Хĕвелĕ çиленсе кайрĕ те пĕлĕт хыçне пытанчĕ, асамат кĕперĕ вара çухалчĕ.

*К. Ушинский.*

---

Асамат кĕперĕн тĕсĕсене *каласа парăр.*

# Ăслă кăткăсем.

Пĕр çыннăн па́тка тултарнă чӳлмекĕ çине кăткăсем кĕрсе тулнă. Хуçи кăткăсене хуса кăларнă, чӳлмекне витсе, кантăрапа çыхнă та маччаран çакса янă. Анчах пĕр кăтки чӳлмек ăшнех тăрса юлнă пулнă. Çисе тăрансан, вăл йăвине таврăнма тăрать те анса кайма май çуккине курать. Нумайччен чупса çӳрет вăл, унтан кантăра тĕлне тухать, кантăра тăрăх мачча çине хăпарать, унтан стена тăрăх çĕре анать.

Нумаях вăхăт иртмен. Ак хуçи курать: темĕн чухлĕ кăткă: пĕрисем анаççĕ, теприсем стена çине улăхаççĕ, унтан мачча çине, унтан кантăра тăрăх чӳлмек çине анаççĕ. Кăткăсем паткăна пĕтĕмпе çисе пĕтеричченех кантăра тăрăх каллĕ-маллĕ чупса çӳренĕ.

*Л. Толстой.*

# Пыл хурчĕ.



Пин-пинĕпе пĕрлешсе,
килĕштерсе пурăнатпăр,
ĕмĕр пĕрле ĕçлесе,
пĕрле ĕçсе-çиетпĕр.

Килĕштерсе пурăнма
питĕ лайăх пĕлетпĕр,
мĕнпур хитре чечекрен
пылĕсене илетпĕр.

Пирĕн пылтан тутлийĕ
мĕнех пур-ши тĕнчере?
Ăна çиме тытăнсан,
çăтса ярăн чĕлхӳне.

*Н. Шелепи.*

# Пыл хурчĕсем апат шырама тухни.

Акă пыл хурчĕ те вăранчĕ. Куçĕсене çăмламас урисемпе тасатрĕ. Унăн юлташĕсем те хускалчĕç. Вĕсем шăтăкран пăхса илчĕç. Курăççĕ: хĕвел йăлтăртатса пăхать, пур çĕрте те çап-çутă, ăшă. Вĕллерен тухрĕç те вĕсем улма йывăççи патне васкарĕç.

Анчах вĕсем пит ир вĕçсе пынă: улма йывăççин чечекĕсем папка ăшĕнче пулнă-ха.

Пыл хурчĕсем чие йывăççи патне вĕçсе кайнă, анчах ун çинче те çурăлнă чечек пĕрре те çук.

Выçă пыл хурчĕсем килне таврăнма тăнă пулнă, анчах пĕр йывăç тĕмĕ айĕнче тĕксĕмрех чечек—фиалкаларнине курах кайнă. Унăн чашкинче пылак сĕткен туллиех пулнă. Пыл хурчĕсем ĕçсе-çисе тăраннă та киле вĕçсе кайнă.

---

Вуласа тухăр: пыл хурчĕсем епле вăраннă?

Пыл хурчĕсем пыла ăçта шырани, ăна ăçта тупни çинчен *каласа парăр.*

# Панулми чечекĕ.

Юлташăмсем, тусăмсем,
çуркуннехи илемсем,
çĕр çийĕнче ӳсекен
йывăç-курăк, чечексем,
ман çийĕме пăхăр-ха!
Пурçăн чаршав витнĕ пек
витрĕм улма йывăçне,
чечек айне хăвартăм
чаплă шăпчăк сăвăçне.
Пĕтĕм колхоз сачсене
ырă шăршă тултартăм,
мĕнпур ачи-пăчине
тутлă улма çитертĕм.

*Н. Шелепи.*

# Курăк.

Пĕтĕм çĕршыв илемне
эпĕ кӳрсе пурăнап,
симĕс пурçăн евĕрлĕ
вуттăн-хĕммĕн курăнап.

Симĕс пустав çиййĕпе
витсе тăрап эп çĕре.
Кунĕн-çĕрĕн чăр та чар!
кайăк сасси ман çире.

Тĕвик-тĕвик текерлĕк,
тăрлик-тăрлик тăрнисем,
янăраса тăраççĕ
тĕрлĕ кайăк юррисем.

Хам çуратнă ача пек
кайăксене сыхлатăп,
ырă усă сывлăшпа
хăналаса тăратăп.

Эп пулмасан, çĕр çинче
чечексем те пулмĕччĕç.
Колхозниксен нӳхрепсем
сĕт-çупала тулмĕччĕç.

*Н. Шелепи.*

# Хĕвел, юр тата çил.

Пырать пĕр çын çул тăрăх, ăна хĕвел, юр тата çил тĕл пулаççĕ. Вăл вĕсене пуç тайрĕ. Вĕсем вара ку çын вĕсенчен кама пуç тайни çинчен тавлашса кайрĕç. Юрĕ калать: „Вăл мана пуç тайрĕ. Эпĕ ун çулне тултарса хурасран хăрать вăл; çулне çухатсан, эпĕ ăна хăйне те ая тăвататăп",—тет. Çилĕ калать: „Çук, ку çын мана пуç тайрĕ. Эпĕ ун çĕлĕкне вĕçтерсе каясран хăрать вăл, çĕлĕксĕр ăна сивĕ пулать",—тет. Хĕвелĕ калать: „Тен, вăл эпĕ ăна хам шевлесемпе ăшăтса, çулне çутатса панăшăн мана пуç тайрĕ пулĕ",—тет. Хайхисем çынран хăйĕнчен ыйтса пĕлме килĕшрĕç те ăна калаççĕ: „Каласа пар-ха пире, ырă çыннăмăр, пирĕнтен хăшне пуç тайрăн эсĕ?"—теççĕ. Çынни вĕсене хирĕç калать: „Эпĕ хĕвеле пуç тайрăм: вăл мана пуринчен те ытла ырă кăтартать. Эсир те иксĕр ăна тав тăвăр: унсăр пуçне эсир хăвăр та çут тĕнчере пурăнайман пулăттăр. Хĕвел ăшăтман пулсан, çил те пулман пулĕччĕ, пĕлĕтсем тухман пулĕччĕç, çĕр çине çумăр та, юр та çуман пулĕччĕ".

# Çерçи сыхлавра.

Пахчара сукмак çинче çерçи чĕпписем сиккелесе çӳренĕ.

Ватă çерçийĕ йывăç туратти çине çӳле улăхса ларнă та, ăçтан та пулин çăткăн вĕçен-кайăк вĕçсе килмест-и тесе, вичкĕн пăхса ларать.

Пӳрт хыçĕсемпе вăрă-хурах хурчка вĕçсе пырать. Вăл пĕчĕк кайăксен хаяр тăшманĕ. Хурчка майĕпе, шăппăн çеç вĕçет.

Анчах ватă çерçи сăтăрçа курнă та ăна асăрхаса ларать.

Хурчка çывхарсах пырать.

Çерçи хыттăн чĕриклетсе янă та, çерçи чĕпписем çавăнтах, питĕ хăвăрт йывăççем айне пытаннă.

Сас-чĕвĕ шăп пулнă.

Пĕр сыхлавçă çерçи çеç турат çинче ларать. Пĕртте хусканмасть, хурчка çинчен куçне илмест.

Хурчка ватă çерçие асăрхаса илнĕ, çунаттисене çапса, чĕрнисене сарса, çиçĕм пек аялалла аннă.

Çерçийĕ йывăççем хушшине чул пек анса çухалнă.

Хурчкан ĕç тухман.



Вăл унăн-кунăн пăхкалать. Çиленсе кайнă çăткăнăн сарă куçĕсем вут пек çунаççĕ.

Вăрă-хурах сиксе илнĕ те малалла вĕçсе кайнă. Çерçи каллех çав турат çинех улăхса ларнă. Хавассăн чĕриклетсе ларать.

Йывăç тĕмĕсем хушшинчен шавлăн тухрĕç çерçи чĕпписем, сукмак çинче сиккелесе çӳреççĕ.

*Л. Толстой.*

---

Калаври çак вырăнсене тепĕр хут *вуласа тухăр:*

Хурчка ватă çерçие асăрхаса илни çинчен.

Ватă çерçи хурчкаран тарса пытанни çинчен.

Калав тăрăх *картинăсем ӳкерĕр* те калава картинăсем тăрăх *каласа парăр.*

Хăлат, ула курак, чĕкеç, шăнкăрч, хурчка, хура курак, улатакка, кăсăя.

Малтан çăткăн кайăксен ячĕсене *çырса илĕр.*

Унтан хурт-кăпшанкăсемпе тăранса пурăнакан вĕçен кайăксен ячĕсене *çырса илĕр.*

## Шăпчăк.

Мухтанмастăп, вĕçместĕп,
хитре тесе, сăнăмпа;
иртен-çӳрен çынсене
тĕлĕнтерееп сăввăмпа.

Эп юрлама тытăнсан,
сар кайăк та вăтанать,
йывăç çулçи хушшине
тĕттĕм çĕре пытанать.

Колхоз ывăль-хĕрĕсен
эп чăн чаплă сăвăçи;
тинĕс хумĕ пек хумханать
ман сасăпа йывăççи.

*Н. Шелепи.*

## Пахчара.

Пахчана ирех эп тухрăм
уççăн-уççăн сывлама.
Ир тумлам-тумламăн
пухрĕ,
шăрçаларĕ сывлăма.

Шурăмпуçĕпе çĕклентĕм,
хĕвел тухрĕ васкаса.
Шăпчăк сассине итлерĕм,
хам та ятăм юрласа.

## Пахча тăшманĕсем.

Май уйăхĕн вĕçнелле пирĕн шкул пахчинче çарăк тата ытти çимĕçсем сип-симĕс шăтса тухрĕç. Эпир вĕсене шăваратпăр. Çумкурăк шăтсанах, ăна çумласа тăкатпăр. Çимĕçсем лайăх ӳсни пире савăнтарать.

Анчах чăх-чĕпсем, пахчана кĕрсе, йăрансене пăса пуçларĕç. Вĕçен кайăксем те çамрăк калчана сăха-сăха илеççĕ.

Чăхсенчен хăтăлма пахча картине çӳлĕрех тытрăмăр. Кайăксене хăратма йăран çине катемпи лартрăмăр. Тин вара пирĕн йăрансем пăсăлми пулчĕç.

Пирĕн çимĕçсем вăй илсе илемлĕн ешерме те пуçланăччĕ. Унччен те пулмарĕ, вĕт хурт тапăнчĕ, çамрăк çулçăсене пĕтере пуçларĕ. Мĕн тăвас? Çуллахи çанталăкра хурт-кăпшанкă шутсăр нумай ĕрчет. Вĕсене часрах пĕтермелле.

Ку тăшмана пĕтерме учитель эмел илчĕ. Купăста айне, çарăксем хушшине кĕл сапса тухрăмăр. Учитель эмелне сапрĕ. Вĕт хурт пĕтрĕ.

## Хĕвелçаврăнăш.

Эп çуркунне ырлăхпе
часах ӳссе çитĕнеп,
темĕн чухлĕ сип-симĕс
çунатсемпе витĕнеп.

Сар пурçăн пек куранса,
ларап çилпе силленсе,
ялан хĕвел еннелле
савса пăхса, киленсе.

Мухтав сана, çуркунне,
тав тăватăп савăнса,
пĕтĕм чунтан-чĕререн,
пуçа тайса, авăнса.

*Н. Шелепи.*

**Çанталăк мĕнле пулассине пĕлмелли паллăсем.**

Уйăх карталанать—çумăр пуласса кĕт.
Вĕçен кайăксем аялтан вĕçеççĕ—çумăр пулать.

## Вăрмана кайни.

Çуркунне пире учитель çывăхри вăрмана илсе кайрĕ. Вăрманăн çуркуннехи пурнăçне сăнаса çӳрерĕмĕр. Вăрманта сывлăш ялти пек мар, таса, калама çук уçă.

Вăрмантан эпир йывăç турачĕсем касса килтĕмĕр. Вĕсене кĕленче ăшне хăшне шывпа, хăшне шывсăр лартрăмăр. Вара çаксене сăнаса пĕлтĕмĕр.

Кашни йывăçăн туратсем пур. Турат çинче папкасем пур. Папкасен ăшĕнче пĕчĕк çулçăсем пур. Хĕллехи вăхăтра вăл çулçăсем хытă хупăпа витĕнеççĕ. Çуркунне нӳрпе тата хĕвел ăшшипе кӳпчесе, хуппине сирсе яраççĕ те симĕсленме пуçлаççĕ.

Çапла вара йывăçсем çулçă кăларса симĕсленеççĕ.

## Экскурсире.

Вăрмана экскурсие кайни çинчен каласа парăр.
Вăрманта эсир мĕнпе паллашрăр?
Йывăç турачĕсем çинче мĕн пур?
Мĕнле йывăçсем çулçă кăларнă?
Киле мĕнле йывăç турачĕсем илсе килтĕр?

## Хаваслă самант.

Хĕрÿ хĕвел—ыр пехил
çĕре савса халаллать.
Сывлăш уçă. Нÿрлĕ çил
уй-хир тăрăх варкăшать.

Тикĕс питлĕ васанта
ешĕл курăк çитĕнет.
Çаран çинче улăхра
тĕрлĕ чечек чÿхенет.

Сарă, шурă чечексем
илĕртеççĕ куç-пуçа.
Тĕрлĕ тĕслĕ лĕпĕшсем
вĕлкĕшеççĕ тек унта.

Лере-лере сĕм вăрман
ларать канса, сарăлса;
куккук сасси тапхăртан
килет унтан янраса.

*С. Элкер.*

## Ĕç уявĕ.

Пурте тухăр тумланса,
тухăр капăр.
Паян майăн уявне
уявлатпăр.
Кирлĕ мар пире мăнкун—
тĕн ултавĕ.
Пирĕн çĕнĕ аслă кун—
Май уявĕ.

Паян пурте савăнатпăр
чаплă куншăн.
Ялавсем йăтса утар
эпир уншăн.
Пурте тухăр тумланса,
тухăр капăр.
Паян майăн уявне
уявлатпăр.

*И. Тукташ.*

## Тухăр, тухăр уява.

Хĕвел тухрĕ хĕрелсе,
ылтăн хĕмпе сирпĕнсе.
Вăрмансенче, садсенче
тĕрлĕ чечек хушшинче,
сар кайăксем, шăпчăксем
шăрататççĕ юрăсем.
Юрă кайтăр ян та ян,
Майăн пĕрремĕш паян.
Юрă çиттĕр Мускава,
илсе пирĕн салама.

Ай-ай кунĕ пит аван!—
Тухăр, тухăр уява!
Тухăр чаплă тумланса.
Хĕрлĕ ялавсем йăтса,
урамсем тăрăх каяр,
савăк юрăсем юрлар.
Мухтав аслă Сталина
ачасене савнăшăн.
Мухтав аслă Сталина
пире телей панăшăн.

## Тăван çĕршыв.

Çĕршывра, куратпăр халĕ,
питĕ паттăр ўсĕмпе
çитĕнет хули те ялĕ
аслă Ленин çулĕпе.

Çитĕнет тăван çĕршывăм
Хĕвел пек ăшшăн савса,
ўстерет ăна çулпуçĕ—
Сталин, аслă вăй хурса.

Вĕçĕмсĕр ăна саватпăр,
хĕвел евĕр аттене.
Вĕренсе, ўссе пыратпăр,—
пирте савăнăç, телей.

Вăл пире хаваслăх пачĕ,
Ленин пек пулма вĕрентрĕ.
Конституци туса пачĕ,
кунçула хаваслăх кĕртрĕ.

## Юрă.

Юхтăр юрă каçăн-ирĕн,
ян-янраттăр таврана!
Аслă Сталин ячĕ пирĕн
чĕрере-çке яланах.
Умлăн-хыçлăн ирĕк халăх
паттăр улăп пек утать.
Пирĕн кĕтнĕ пархатарлăх:
Сталин—пирĕн депутат.

Çўлерен çўле çĕклетпĕр
хурçă парти ялавне.
Юрăра мухтатпăр халĕ
Аслă Сталинăн ятне.
Чаплă ĕмĕршĕн çул уçă,—
пурнăç патăр хăватне.
Тавтапуç сана, Çулпуçĕ,
чыс-салам, тăван атте!

## Сталин юлташпа тĕл пулни.

Эпĕ пĕрремĕш ретре ларатăп. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен колхозниксем мĕн каланине итлетĕп, хам куçа илмесĕр Сталин юлташ çине пăхатăп. Манпа юнашар Ваня Чулков пионер ларать. Юлашки лару пыратчĕ. Сталина яланлăхах астуса юлас килет, унăн кашни хусканăвне, кашни йăл кулса илнине астуса юлас килет. Яла пырсан, нимрен малтан:

— Сталин юлташа куртăн-и?—тесе ыйтаççĕ вĕт-ха.

Сасартăк куратăп—Иосиф Виссарионович, йăл кулса, аллипе кăчăк туртса, пире хăй патне чĕнет. Эпир

ларнă çĕртен сиксе тăтăмăр та Сталин юлташ патне пытăмăр.

— Эсир мĕн ятлă?—

Вăл мана „эсир“ тесе чĕнчĕ.

Эпĕ хирĕç таварса каларăм:

— Миша Кулешов.

— Шкулта вĕренетĕр-и?

— Вĕренетĕп, пиллĕкмĕш класра.

— Маттур!—терĕ Иосиф Виссарионович, мана хыттăн ыталаса илчĕ.

Эпĕ, саваннипе, ним тума пĕлместĕп.

— Ну, хатĕрлен, сăмах тухса калатăн,—терĕ мана Сталин юлташ.

Алă çупни илтĕнсе кайрĕ. Колхозник хăй сăмахне пĕтерчĕ.

— Халь тухса калама Мускав облаçĕнчи Белĕв районĕнчи „Красный луч“ колхоз пăрăвĕсен шефĕ пионер Миша Кулешов сăмах илет,—тесе пĕлтерчĕç.

Мана тенкел лартса пачĕç те, эпĕ вара пăрусене мĕнле пăхни, миçе пăру пăхса ӳстерни çинчен каласа пама тытăнтăм. Эпĕ хам вунсакăр пăру, вунă тиха тата Совет Çарĕ валли икĕ лаша пăхса çитĕнтерни çинчен каласа патăм. Пурте алă çупма пуçларĕç. Тата эпĕ хам мĕнле вĕренни, манăн „отлично“ паллăсем миçи çинчен тата эпир пионер отрядĕнче мĕн ĕçлени çинчен каласа патăм.

Эпĕ сăмах каласа пĕтерсен, Ворошилов юлташ ман алла чăмăртарĕ те, йăл кулса:

— Маттур! Сан лашусене илĕпĕр,—терĕ.

Сталин юлташ мана ыталарĕ, унтан, çĕклесе, пукан çине тăратрĕ. Вăл алла тытса, çирĕппĕн чăмăртарĕ те:

— Пулăшăпăр, сирĕн колхозра Пионерсен çурчĕ уçма пулăшăпăр,— терĕ.

Нихçан та эпĕ çав кунхи пек телейлĕ пулман.

## Пирĕн колхоз.

Пирĕн колхоз—пысăк та пуян. Унăн халĕ сĕт-çу ферми, сысна ферми тата чăх-чĕп ферми пур. Фермăсенче выльăх-чĕрлĕх шучĕ çуллен нумайланать, вĕсем паракан тупăш та çуллен ӳссе пырать. Колхозăн электростанци, виçĕ арман, пысăк мунча, клуб пур.

Çĕре лайăх ĕçлесе тăнипе пирĕн колхозăн тырри те, тĕрлĕ çимĕçсем те çулсеренех лайăх пулаççĕ.

Выльăх апачĕ тулăх пирки колхозăн лашисем, тĕрлĕ выльăхĕсем мăнтăр, тутă çӳреççĕ.

Колхозниксен пурнăçĕ çулсеренех лайăхланса пырать.

Пирĕн колхозра кашни киле икшер хаçат тивет, журналсем те нумай килеççĕ. Килсеренех радио кĕртнĕ. Çамрăксем тĕрлĕ шкулсенче, курссенче вĕренеççĕ. Ваттисем хушшинче те хут пĕлменни çук.

## Колхоз пурлăхĕшĕн.

Колхоз çуртырри вăрлăхне тасатса хатĕрлерĕ. Вăрлăха кĕлете турттарса хучĕ те Çтаппан пиччене хурал тăма хушрĕ.

Халăх тăшманĕсем колхоз вăрлăхне вăрласшăн. Анчах мĕнле вăрлас? Çтаппан пиччене кĕлет умĕнчен аяккалла мĕнле пăрас?

Хайхи тăшмансем Çтаппан пичче пӳртне вут тĕртме шутланă. Хăй çурчĕ çуннине курсан, вăл унта чупсах кайĕ, тенĕ вĕсем.

Çтаппан пичче вăрлăх кĕлечĕ умĕнче сыхă тăрать. Каçĕ ытла та лăпкă. Пĕр сас-чĕвĕ те çук. Сасартăк çынсем кăшкăрашни илтĕнсе кайрĕ. Пушар çулăмĕ пĕтĕм яла çутатса ячĕ. Халăх чупкалать. Вăл Çтаппан пичче пӳрчĕ еннеллеваскать.

Анчах тăшмансен ĕçĕ тухмарĕ. Çтаппан пичче кĕлет умĕнчен каймарĕ. Вăл çаплах вăрлăха сыхласа тăчĕ.

Унăн пĕтĕм пурлăхĕ çунса кайрĕ. Çапах та вăл колхоз вăрлăхне çаратма памарĕ.

Колхоз Çтаппана хисеп турĕ: çĕнĕ пӳрт лартса пачĕ, тĕрлĕ тумтирсем илсе пачĕ.

## Пирĕн колхоз мĕн акса тăвать.

Пирĕн колхоз тĕрлĕ тырпул акса тăвать. Колхозниксене çиме, государствăна сутма тата ваккăн сутма ырашпа тулă акать. Выльăхсем валли сĕлĕ акать. Хăйĕнчен ытлашши сĕлле государствăна сутать.

Пир-авăр тума йĕтĕнпе кантăр акса тăвать. Тата колхоз табакпа çĕрулми лартса ӳстерет. Пăрça, клевер, вика, хуратул акса тăвать.

Çимĕç пахчине хăяр, купăста, помидор, нимĕç пăрçи, çарăк, кишĕр, сухан, чĕкĕнтĕр, кăшман лартать.



**Тупмалли юмах.**

Сĕлĕ памаççĕ,
пушăпа çапмаççĕ,
сухалама тытăнсан,
çичĕ плуга сĕтĕрет.

## Трактор.

Кĕр-кĕр-кĕр! кĕрлерĕ
трактор,
тухрĕ вăл колхоз хирне.
Тĕпренех пуçларĕ паттăр
çавăрмашкăн тăприне.

Сухапуç чысне çухатрĕ,—
машинлатпăр уйсене.
Хурçă ут тухса аркатрĕ
ĕмĕрхи йăрансене.

Хурçă ут чупать хир урлă,
хир питне чĕлет, сĕвет.
Машинăпа акнă тырпулă
уйсене илем кӳрет.

# Пилĕк ывăл çинчен.

(Юмах.)

Тахăш патшалăхра, темĕнле государствăра старикпе карчăк пурăннă, тет. Вĕсен пилĕк ывăл пулнă: Иван ывăл, Роман ывăл, Сергей ывăл, Матви ывăл тата кĕçĕнни Якур-Шăнкăрч.

Старик час-часах чирпе аптăранă—кăмака çинчен анман, çинĕ, ĕçнĕ те шăмми-шаккине ăшăтса выртнă. Карчăкки çăкăр-яшка пĕçернĕ, кĕпе-йĕм çĕленĕ, çунă.

Ачисем пурĕ пĕрле суха сухаланă, акнă, авăн çапнă, сăвăрнă.

Çав çĕршывра халăх ĕçчен пулнă, пĕр хуйхă-суйхăсăр пурăннă, хăй пурнăçне çирĕплетнĕ, никама та тĕкĕнмен, çĕрсем çав çĕршывра тулăх пулнă, çар çыннисем вăйлă, хĕл хаяр, çынсем тĕреклĕ пулнă.

Кӳршĕрех тискер тăшман пурăннă. Вăл, ыйăха пĕлмесĕрех тенĕ пек, кӳршĕ çĕрĕсене тытса илесси çинчен шухăшланă.

Пĕр тĕттĕм çĕр тăшман хăй салтакĕсене, ĕçтерсе ӳсĕртсе, вагонсем çине лартнă, танксемпе тупăсене тата самолётсене хускатса янă та кӳршĕ чикки патне пынă.

Вут-хĕм, тĕтĕм-сĕрĕм пĕлĕте хупласа илнине курать старик. Вăл икĕ аслă ывăлне тăван çĕршыва хӳтĕлеме кăларса ярать. Амăшĕ икĕ аслă ывăлне валли çула кайма кирлине хатĕрлет, куççуль тăкса, ывăлĕсене çула ăсатать.

Ак çапăçаççĕ ывăлсем, тăшмана хытă лутăркаççĕ, киле çыру яраççĕ: „Хытă çапăçатпăр, атте, хĕнетпĕр тăшмана, анчах пире пулăшу кирлĕччĕ",—тесе çыраççĕ.

Ярать старик икĕ вăтам ывăлне тăван çĕршыва хӳтĕлеме. Амăшĕ вăтам ывăлĕсене çула хатĕрлет, куççуль тăкса, вĕсене ăсатать.

Ак çапăçаççĕ ывăлсем, тăшмана хытă çĕмĕреççĕ, киле çыру яраççĕ: „Çапăçатпăр, атте, хĕнетпĕр тăшмана, анчах пире пулăшу кирлĕччĕ“.

Старик эхлеткелет те, ним тума та çук—кĕçĕн ывăлне Якур-Шăнкăрча çĕршыва хӳтĕлеме кăларса ярать. Амăшĕ Якура çула хатĕрлет, куççуль тăкса, çула ăсатать.

Старик ял варрине тухса тăчĕ те, çĕр унури айĕнче путса кĕчĕ. Çирĕп тăрать старик, хăй çапла калать:

— Пилĕк ывăла ăсатрăм, хама валли пĕрне те хăвармарăм. Ман халĕ вилсе выртма та юратчĕ, анчах çĕр мана каллех вăй кĕртрĕ.

Тапратрĕ вăл сухалама та акма, авăн çапма-сăвăрма, хăй çĕршывне тырă пама.

Ывăлĕсем ашшĕ ĕçĕ çинчен пĕлнĕ те тата хаяртарах çапăçма тытăннă. Вĕсем тискер тăшмана хăвалама, тустарма пуçланă, ăна çапса аркатса, шăмми-шаккине те хăварман. Çапла ĕçсем пулса иртнĕ, ачасем...

## Çĕнтерӳ уявĕ.

Çуна пек шуса хĕл иртрĕ,
килчĕ çутă çуркунне.
Çĕнтерӳ уявĕ çитрĕ,
юрлăр унăн юррине.

Пĕтĕм халăхăн хавасĕ,
пĕтĕм кăмăлĕ паян
юрăпа çĕкленĕ уççăн,
инçене кайса ян-ян.

Хатĕр пулăр итлемешкĕн,
ман юратнă ачасем:
каçхине салют параççĕ
пирĕн паттăр хуласем.

Саламлаççĕ вĕсем чыслăн
халăх паттăрĕсене.
Мухтавпа аса илеççĕ
вăрçăра вилнисене.

Пĕтĕм халăхăн хавасĕ,
пĕтĕм кăмăлĕ ян-ян
юрăпа çĕкленчĕ уççăн.
Çĕнтерӳ кунĕ паян.

*И. Малкай.*




## Çу кунĕсем.

Ăçта пăхнă унта — ылтăн хир, ылтăн тинĕс, тырăпулă хирĕ сарăлса выртать. Ылтăн тинĕс çийĕпе хумсем çӳреççĕ, пучахсене аваççĕ.

Унта-кунта утмăлтуратсем кăвак çăлтăрсем пек курăнаççĕ.

Акă улăм пĕрчи тăрăх хĕрлĕ пĕчĕк нăрă — уяр (вирвир) хăпарать те çунаттисене сарса ярать.

Тырă выракан машина çине пулса çитнĕ йывăр пучахсем тайăлса ӳкеççĕ.

Анлă хир тăрăх колхоз хĕрĕсем çӳреççĕ, ылтăн кĕлте çыхаççĕ.

Хир хĕрринчи такăр çул çывăхĕнче авăн çапакан машина кĕрлесе ларать.

Тутă-тутă пĕрчĕсем михĕсене тулаççĕ. Ылтăн улăм урисем ту пек ӳссе пыраççĕ.

## Аслă пахчаçă.

I.

Пирĕн çĕршывра аслă пахчаçă Иван Владимирович Мичурин ятне пурте пĕлеççĕ.

Унӑн ашшӗ сад-пахча ӗҫне юрататакан ҫын пулнӑ.

Пӗчӗк Ваня кӳршӗри ачасемпе сахал выляна. Вӑл хӑйӗн вӑхӑтне ытларах садра е ҫимӗҫ пахчинче ирттернӗ.

Унта вӑл пӑрҫан чи лайӑх пӗрчисене, чие йывӑҫҫин, сливӑн шултра вӑррисене суйласа ҫӳренӗ.

Унӑн кӗсйисенче яланах тӗрлӗ вӑрӑсем пулнӑ.

Килте вӑл вӑрӑсене сортӑн-сортӑн хурса пынӑ.

Садра тата ҫимӗҫ пахчинче Ванькӑн хӑйӗн йӑранӗсем пулнӑ. Ҫав йӑрансем ҫине вӑл суйласа илнӗ вӑрӑсене акнӑ, вӗсене питӗ тирпейлӗн пӑхса ӳстернӗ. Вӑл ӳсентӑрансен чи лайӑх сорчӗсене: пылак пӑрҫа, шултра та пылак чие, слива ӳстерсе кӑларма тӑрӑшнӑ.

Ваня сӑнавсем, опытсем тунӑ. Хӑш чухне вӑл опытсем ӑнман, анчах ача куншӑн кӳренсе тӑман. Вӑл татах хӑйӗн ӳсентӑранӗсене, вӑррисене акса-лартса пынӑ.

II.

Мичуринӑн ашшӗ-амӑшӗ пуян пулман. Шкулта Мичуринӑн нумай вӗренме май килмен. Ҫавӑнпа вӑл, ҫамрӑклах пӗр вырӑна кӗрсе, хӑй ӗҫӗпе тӑранса пурӑнма пуҫланӑ. Анчах вӑл хӑйӗн юратнӑ ӗҫне—сад-пахча ӗҫне манман.

Ӗҫрен тухсан, кулленех вӑл садра мӗн те пулин тунӑ: лартнӑ ҫимӗҫсене шӑварнӑ, купаланӑ е опытсем тунӑ.

Каҫсерен, пуринчен ытла хӗлле, вӑл ҫимӗҫ йывӑҫҫисем ӳстересси ҫинчен ҫырнӑ кӗнекесене вуланӑ.

Вӑл ҫимӗҫ йывӑҫҫисен чи лайӑх сорчӗсен вӑррисене суйланӑ, вӗсене акнӑ, йывӑҫсене юратса пӑхса ӳстернӗ. Темиҫе ҫултан Иван Владимировичӑн тӗлӗнмелле сад пулса тӑнӑ.

III.

Мичурин садӗнче пилеш те питӗ паха ҫимӗҫ йывӑҫҫи пулса тӑнӑ: унӑн ҫырлисем шултра, сӗтеклӗ, пылак пулнӑ. Лутра чие йывӑҫҫисем ҫинче ҫулла ҫырла калама ҫук ӑнса пулнӑ. Улма йывӑҫҫисем ҫинче хӗрлӗ паха улмасем ҫакӑнса тӑнӑ, вӗсем илемлӗ, алла кӗрейми шултӑра пулнӑ.

Мичурин нумай ӗҫленӗ, хытӑ тӑрӑшнӑ. Совет влаҫӗ ӑна ӗҫре пулӑшса пынӑ.

Мичурин улмуҫҫисен, груша, чие йывӑҫҫисен, иҫӗм ҫырлин ҫӗнӗ, ҫав тери паха сорчӗсене ӳстерсе кӑларнӑ. Халь колхозсен сачӗсенче пур ҫӗрте те улмуҫҫисен, грушӑсен, сливӑсен, чие йывӑҫҫисен мичуринла сорчӗсем ӳсеҫҫӗ.

---

Ача чухне Мичурин пуринчен ытла мӗн ӗҫе юратнӑ?
Мичурин хӑйӗн садӗнче мӗнле ӗҫленӗ?
Мичурин ҫимӗҫ йывӑҫҫисене мӗнле майпа лайӑхлатнӑ?

## Хӗвелпе ҫил.

Хӗвелпе ҫил ҫын тумтирне кам маларах хывса илме пултарасси ҫинчен тавлашса кайнӑ. Ҫил ҫын тумтирне хывса илес тесе хытӑ вӗрме тытӑннӑ. Ҫыннин ҫӗлӗкӗ ҫине те вӗрет, тумтирне те варкӑштарать. Ҫынни ҫӗлӗкне пусарса лартать, тумтирне тӳмелет. Епле вӗрсен те, ҫил ҫын тумтирне хывса илме пултараймарӗ. Унтан хӗвел хӑй ӗҫне тытӑнчӗ. Вӑл ӑшшӑн пӑхма пуҫларӗ те, ҫын тумтира вӗҫертсе ячӗ, ҫӗлӗкне хӑпартарах лартрӗ. Хӗвел тата хытӑрах пӗҫертме тытӑнчӗ те, ҫын хӑйӗн тумтирне хывса пӑрахрӗ.

*Л. Толстой.*

## Çырма.

Çырма юхать кĕрлесе
аслă ялăн çумĕпе.
Хĕвел, тĕрĕ тĕрлесе,
вылять унăн шывĕпе.

Тăрă шывăн ăшĕнче
кăвак пĕлĕт явăнать.
Вată йăмра тайăлса,
тĕсне пăхса савăнать.

Акă кĕпер çийĕнче
старик ларать вăлтапа,
йăпăрт-япăрт пуллине
улталасшăн ăманпа.

Ав ачасем çӳл енче
шывра ишсе çӳреççĕ.
Пулă тытан ваттине
хирĕçтерме пĕлеççĕ.

*К. Иванов.*

## Пĕве.

Пирĕн ялта васан пур. Унта çуркунне çеç шыв юхатчĕ, çулла вăл типсе каятчĕ. Темиçе çул ĕлĕкрех колхоз çав васана пĕвелерĕ те, ялта пысăк пĕве пулса тăчĕ. Пĕве хĕрринче хĕрарăмсем кĕпе çăваççĕ, выльăхсене те çав пĕверенех шăвараççĕ. Пĕвене вĕтĕ пулăсем янă. Çав пулăсем питĕ ĕрчесе кайрĕç. Халь ачасем пĕвери пулла вăлтапа та, алапа та тытаççĕ.

## Пирĕн вăрман.

Пирĕн вăрман пит чипер:
йăвă ӳснĕ йывăççем,
питĕ вăрăм чăрăшсем:
пăхсан, çĕлĕк ӳкмелле,
кассан, часах ӳкмелле.

Пилĕк юплĕ пилеш пур,
сенĕк тума пит селĕм.
Хурăншурта хурама—
питĕ яка, туратсăр—
турта тума вăл юрать.

*М. Федоров.*

## Вăрманти çил-тăвăл.

Шавлать, кашлать сĕм вăрман,
вĕçĕ-хĕрри курăнмасть.
Кутсăр-пуçсăр çил тухсан,
чарăнассăн туйăнмасть.

Тапхăр-тапхăр çил килет,
пăлтăр-палтăр çавăрса.
Тĕттĕм вăрман ӳхĕрет,
çĕре çитех авăнса.

Хура пĕлĕт пĕрмаях
шăвать вăрман тăрринче.
Ярать çиçĕм çĕр çурсах
хура пĕлĕт хушшинче.

Аçа çапать, шартлатать,
пĕтĕм тĕнче кисренет.
Çумăр çырма пек юхать,
лупашкасенче кĕрлет.

*К. Иванов.*

## Тăвată ĕмĕт.

Хĕл пулнă. Мĕтри пăр тăвайкки çинчен çунашкапа ярăнса ыватннă та, киле хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе таврăнса, ашшĕне калать: „Эх, хĕлле епле аван, питĕ савăк! Яланах хĕл пулсассăн, эпĕ питĕ кăмăллă пулăттăм“,—тет. Ашшĕ Мĕтри сăмаххисене кĕсйинчи кĕнеки çине çырса хучĕ.

Çуркунне çитнĕ. Мĕтри ула-чăла лĕпĕшсем хыççăн чупса киленнĕ, чечексем татса тултарнă, ашшĕ патне чупса пынă та калать: „Епле аван иккен çуркунне! Эпĕ яланах çуркунне пулмалла тăвăттăм“,—тет. Ашшĕ Мĕтрин ку ĕмĕтне каллех çырса хучĕ.

Çу çитрĕ. Мĕтрипе ашшĕ утă çулма кайрĕç. Вăрăм кун кунĕпех ача савăнса çӳрерĕ: кăмпа пуçтарса, çырла татса тултарчĕ, типĕ утă çинче йăваланчĕ. Каçхине ашшĕне калать: „Çăвăн вĕçĕ нихçан та пулминччĕ“,— тет. Ашшĕ Мĕтрин ку сăмахĕсене те çырса хучĕ.

Кĕр çитрĕ. Пахчара çимĕçсене пуçтараççĕ: хĕп-хĕрлĕ панулмисене, сарă грушăсене. Мĕтри тем пек хавасланса кайнă та ашшĕне калать: „Кĕркунне çулталăк вăхăчĕсенчен чи лайăххи!“—тет.

Ашшĕ çырса пымалли кĕнекене уçнă та Мĕтрие вăл çакăн пекех хĕл çинчен те, çур çинчен те, çу çинчен те каланине кăтартса панă. *К. Ушинский.*

---

Сирĕн шутпа çулталăк хушшинчи хăш вăхăт лайăхрах?

## Çулталăк хушши.

Шурă юр ирĕлет,
çеçенхир чĕрĕлет,
ешĕл курăк ӳсет...
Вăл хăçан пулать-ши?

Хĕвел хытă хĕртет,
ăшă çил вĕркелет,
сар ыраш çитĕнет...
Ку хăçан пулать-ши?

Хир илемĕ каять,
сĕм вăрман çаралать,
пĕрмай çумăр çăвать...
Вăл хăçан пулать-ши?

Хирсенче юр анчах,
çырмара пăр анчах,
сивĕтет аванах...
Ку хăçан пулать-ши?

# Ачасене чĕнсе юрланă юрă.

Ачасем, сывах-и? Эп хавас!
Ха, пыл хурчĕ пек сĕрлеç вĕсем...
Ват Джамбул, кив тăмрине илсе,
килчĕ сирĕн хӳхĕм уява,
сирĕнпе хăналанас тесе.

Ватă эп, курпун тĕве пек, ачамсем,
выльăр, кулăр; кăмăллать старик сире.
Эсир, манăн савнă ывăлăмсем,
чĕчĕ ĕмекен путексемпе пĕрех.

Сирĕншĕн тĕнче хавас, хитре.
Йăлкăшса çунаççĕ тӳпере
сирĕншĕн ахах пек çăлтăрсем.
Сар хĕвел савса лăпкать сире.
Пурнăç сирĕн юрă пек хитре!

Сталин—çĕр çинчи чи пысăк çын—
тăванран та çывăх вăл сире;
Сталин—çут хĕвел вăл, ун ăшши
пур çĕрте те ачашлать сире.

Сталин кăмăллă пур çынсенчен,
вăл сире ĕçчен хуласенчен,
савăнăçлă пурăнччăр тесе,
ярса пачĕ капăр теттесем,
букварьсем, хитре кĕнекесем.

*Джамбул.*

# Совет Союзĕн Гимнĕ.

Нихçан арканми Союза пĕрлештерчĕ
пур ирĕк республиксене Аслă Русь.
Сыв пултăр тăван халăхсем çитĕнтернĕ
пĕр йышлă, хăватлă Советлă Союз!

Чаплă, мухтавлă пул, ирĕк Çĕршывăмăр,
халăхсен туслăх хăвачĕ санра!
Халăх ялавĕпе, совет ялавĕпе
паттăр утар çĕнтерсе малалла!

Çут ирĕк-хĕвел тăвăл витĕр çутатрĕ,
тăван аслă Ленин кăтартрĕ çула.
Пире халăх тивçĕшĕн Сталин ӳстерчĕ,
çĕклерĕ ĕçе, чĕнчĕ паттăр пулма.

Чаплă, мухтавлă пул, ирĕк Çĕршывăмăр,
халăх телейĕн хăвачĕ санра!
Халăх ялавĕпе, совет ялавĕпе
паттăр утар çĕнтерсе малалла!

Вутра паттăр Çар çитĕнтертĕмĕр эпĕр,
çĕмретпĕр ютран хапсăнан тăшмана!
Телейлĕ кун-çулшăн хастар кĕрешетпĕр,
чапа кăларатпăр Тăван çĕршыва!

Чаплă, мухтавлă пул, ирĕк Çĕршывăмăр,
халăх мухтавĕн хăвачĕ санра!
Халăх ялавĕпе, совет ялавĕпе
паттăр утар çĕнтерсе малалла!

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чебоксары Чувашской АССР

# ТУПМАЛЛИ.


Аслă Сталин . . . . . . . . . . 3

**Ш к у л.**

В. И. Ленин мĕнле вĕреннĕ 4
Шкула . . . . . . . . . . . . 5
Шкула каймалли тата шкултан таврăнмалли çул . . . . . . . 6
Пирĕн класс . . . . . . . . . —
Шкул ачине кирлĕ япаласем . . 7
Кашни япала хăй вырăнĕнче пулмалла . . . . . . . . . . —
Класра мĕнле лармалла . . . . 8
Шутламалли вăйă . . . . . . —
Чăн-чăн юлташ . . . . . . . —
Хĕлип . . . . . . . . . . . . 9

**Ç е м ь е.**

Пирĕн çемье . . . . . . . . 14
Пуринчен те лайăх . . . . . . —
Амăшĕпе ачисем . . . . . . 15
Манăн анне . . . . . . . . 16
Пирĕн аппа . . . . . . . . . 17
Манăн ывăлăм . . . . . . . 18
Сентти . . . . . . . . . . . 19
Сăпка юрри . . . . . . . . . 20
Манăн йăмăкăм . . . . . . . 21
Митюка ашшĕ мĕн каланă-ши? 22
Вунă пулăшакан . . . . . . —
Паллă çын . . . . . . . . . 23

**Хĕлле.**

Хĕл ларни . . . . . . . . . 25
Хĕллехи ир . . . . . . . . 27
Хĕл . . . . . . . . . . . . 28
Хĕлле вăрманта . . . . . . 29
Шывран кĕленче туни . . . . 32
Йĕлтĕрпе . . . . . . . . . 33
Ăшăтман кĕрĕк . . . . . . . 34
Хĕллехи тумтир . . . . . . . —
Юртан кĕлетке туни . . . . . 35
Юр—кĕрĕкпе пĕрех . . . . . 36
Юр айне пулнă çын . . . . . 37
Хĕллехи каç . . . . . . . . 38
Пичке мĕншĕн арканса кайнă? 39
Колхозниксен хĕллехи ĕçĕсем 40
Икĕ колхозник . . . . . . . 41
Кам мĕн ĕçлет . . . . . . . 42
Конькипе . . . . . . . . . 43

**Ленин кунĕсем.**

Ленин атте . . . . . . . . . 44
Ленин хушса хăварнипе мĕн тунă? . . . . . . . . . . 45
Ленин шухăшĕ . . . . . . . 47
1924 çулхи январĕн 21-мĕшĕ . . 48

**Совет çарĕ.**

Совет çарĕ . . . . . . . . . 50
Тăван çĕршыв сыхлавçи . . . . 51
Вуникĕ паттăр . . . . . . . 52
Тăшмана тытни . . . . . . . —
Фесенко салтак фашистсен тыткăнĕнчен тарни . . . . . . 54
Пĕр талăк иртсен . . . . . . —
Тăван çĕршывшăн . . . . . . 55
Йытă-санитар . . . . . . . . —
Манас çук эс ăна . . . . . . 57

**Х у л а.**

Эпĕ хула курни . . . . . . . 58
Автобус . . . . . . . . . . 59
Фабрикăсемпе заводсем . . . . 60
Парахут . . . . . . . . . . —
Пушар йытти . . . . . . . . 61

**Таса пул—сывлăхлă пулăн.**

Таса пурăнма вĕрен . . . . . 64
Мĕнле çывăрмалла . . . . . . 65
Юмăç пĕтерет, тухтăр пулăшать —
Пит-куçа мĕнле çумалла тата шăла мĕнле тасатмалла . . . 66
Сывлăхшăн тата акă мĕн кирлĕ —
Тухтăр патĕнче . . . . . . . 67

**Килти выльăхсем тата тискер кайăксем.**

Лаша . . . . . . . . . . . . 68
Лаша ĕçĕ . . . . . . . . . . 69
Сархипе кашкăр . . . . . . 70
Ĕне . . . . . . . . . . . . 71
Сурăхсем . . . . . . . . . —

Сыснасем . . . . . . . . . . 72
Автан . . . . . . . . . . . . 73
Тăманапа сарă чăх . . . . . . —
Кролик . . . . . . . . . . . 74
Сармантей . . . . . . . . . . —
Кашкăр . . . . . . . . . . . 76
Кашкăр . . . . . . . . . . . 77
Упа . . . . . . . . . . . . —
Килти выльăхсемпе тискер кайăксем . . . . . . . . . . 78
Мулкачпа чĕрĕп . . . . . . . —
Чĕрĕп йăви . . . . . . . . . 79
Куян тус . . . . . . . . . . 80
Тилĕ тус . . . . . . . . . . —
Тилĕпе ăсан . . . . . . . . —
Автан тус . . . . . . . . . 81
Пакша . . . . . . . . . . . 84
Кайăксене ан тытăр . . . . . —
Чи-чи кăсăя . . . . . . . . 85
Кушак, автан тата тилĕ . . . . 86
Хĕлĕпе çывăракан упа . . . . . 89
Висĕ упа . . . . . . . . . . 91
Тилĕ юри вилнĕ пек пулса выртнă . . . . . . . . . . 95
Шăшин тусĕпе тăшманĕ . . . . —
Тилĕпе тăрна . . . . . . . . 96
Шăшипе йĕкехӳре . . . . . . 97

## Çуркунне.

Çурхи сасăсем . . . . . . . . 98
Çуркунне пулать . . . . . . . 99
Папкасем сарăлни . . . . . . 100
Пуш уйăхĕн вĕçĕнче . . . . . 101
Тумтир улшăнать . . . . . . 102
Миша шыв арманĕ туни . . . . —
Тăван çĕршыва . . . . . . . . 103
Шăнкăрч . . . . . . . . . . 104
Тăри юрри . . . . . . . . . 105
Кайнипе таврăнни . . . . . . 106
Пăр кайни . . . . . . . . . 107
Йывăççен уявĕ . . . . . . . . 108
Çуркунне çитрĕ . . . . . . . —
Улмуççи . . . . . . . . . . 109
Пахчаçăпа ывăлĕсем . . . . . 110
Вăрмана шыв илни . . . . . . —
Ака çинче . . . . . . . . . 112
Ĕнепе чавка . . . . . . . . —
Ăслă чавка . . . . . . . . . 113
Тăрри юрри . . . . . . . . . —
Чĕкеç . . . . . . . . . . . 114
Хĕвелпе асамат кĕперĕ . . . —
Ăслă кăткăсем . . . . . . . 115
Пыл хурчĕ . . . . . . . . . —
Пыл хурчĕсем апат шырама тухни . . . . . . . . . . . 116
Панулми чечекĕ . . . . . . . —
Курăк . . . . . . . . . . . 117
Хĕвел, юр тата çил . . . . . —
Çерçи сыхлавра . . . . . . . 118
Шăпчăк . . . . . . . . . . 119
Пахчара . . . . . . . . . . —
Пахча тăшманĕсем . . . . . . 120
Хĕвелçаврăнăш . . . . . . . —
Вăрмана кайни . . . . . . . 121
Экскурсире . . . . . . . . —
Хавaслă самант . . . . . . . 122
Ĕç уявĕ . . . . . . . . . . —
Тухăр, тухăр уява . . . . . —
Тăван çĕршыв . . . . . . . . 123
Юрă . . . . . . . . . . . . —
Сталин юлташпа тĕл пулни . . —
Пирĕн колхоз . . . . . . . . 125
Колхоз пурлăхĕшĕн . . . . . . —
Пирĕн колхоз мĕн акса тăвать 126
Трактор . . . . . . . . . . —
Пилĕк ывăл çинчен . . . . . 127
Çĕнтерӳ уявĕ . . . . . . . . 128

## Çулла.

Çу кунĕсем . . . . . . . . . 129
Аслă пахчаçă . . . . . . . . —
Хĕвелпе çил . . . . . . . . 131
Çырма . . . . . . . . . . . 132
Пĕве . . . . . . . . . . . . —
Пирĕн вăрман . . . . . . . . —
Вăрманти çил-тăвăл . . . . . 133
Тăвата ĕмĕт . . . . . . . . —
Çулталăк хушши . . . . . . . 134
Ачасене чĕнсе юрланă юрă . . 135
Совет Союзĕн Гимнĕ . . . . . 136

## Тупсăмсем.

26 стр. Шурă çитти... (*юр çуни*).

28 стр. Çеçенхир варринче... (*çулталăк, 12 уйăх, 4 эрне, 7-шер кун*).

29 стр. Вĕçет—чĕнмест... (*юр*).

32 стр. Вутра та çунмасть... (*пăр*).

35 стр. Турчка пек кукăр... (*çăмăтă*).

43 стр. Шывра çуралать... (*юр*).

68 стр. Тăваттăн тĕвеççĕ... (*лаша*).

70 стр. Çуркунне плугра... (*лаша*).
Чунли тарать... (*кӳлнĕ лаша*).

74 стр. Кăнтăрла суккăр... (*тăмана*).

102 стр. Сăмсасăр кăвакал... (*тумла юхни*).

105 стр. Пуртăсăр, алăсăр... (*кайăк*).

114 стр. Пĕчĕкçеççĕ питлĕ куçлă... (*чĕкеç*).

126 стр. Сĕлĕ памаççĕ... (*трактор*).

---

Редактор *Н. Васянка*. Тех. редактор *Н. Степанов*.

НТ 00555. Подписано к печати 26.IV. 1951 г. Объем 8,75 п. л.
Бумага 60х92/16. Заказ 1027. Тираж 11.000 экз.

Типография № 1 Чувашполиграфиздата, г. Чебоксары.

Цена 1 руб 70 коп.

# РОДНАЯ РЕЧЬ

КНИГА ДЛЯ ЧТЕНИЯ
В ПЕРВОМ КЛАССЕ
НАЧАЛЬНОЙ ШКОЛЫ

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ — 1951